Ю 96
32394-чув



# ТĂВАН СĂМАХ 2





КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯ

Национальная библиотека ЧР
4-032394

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

С. П. ЮШКОВ, Т. В. АРТЕМЬЕВА, Р. И. ТРОКИНА

К
К 81.63
Ю96

# ТĂВАН CĂМАХ

## 2-МĔШ КЛАСС

Чăваш АССР Халăха вĕрентес ĕç министерстви
шкулсенче усă курма йышăннă

*Хушса çĕнетнĕ иккĕмĕш кăларăм*

Кр

Шупашкар
Чăваш
кĕнеке
издательстви
1990

ББК 22.1 Чув я 71
Ю 96

81.635.1-922

16 МАР 2017
20 10

32394чув

Ю $\frac{4306020100-061}{М 136(03)-90}$ 85—90

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1990

# Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв?



*Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв?*
*Аякра-ши, çывăх-ши?*
*Аякра та, çывăх та.*
*Каласа парам, тăхта.*

*П. Хусанкай.*

## Тăван çĕршыв çинчен.

Пысăк çĕршывра кашни çыннăн хăйĕн пĕчĕк кĕтесĕ — çуралса ӳснĕ ялĕ, урамĕ, çурчĕ пур. Ку вăл унăн пĕчĕк тăван çĕршывĕ. Çакăн пек нумай-нумай пĕчĕк кĕтесрен тытăнса тăрать пирĕн пысăк та аслă Тăван çĕршыв.

... Тăван çĕршыв санăн тăван килӳнтен пуçланать. Тăван çĕршыв сарлака та илемлĕ. Эсĕ кирек

ăçта пулсан та, вăл яланах санпа. Вăл кашни çыннăн пĕрре кăна. Анне пек.

Тăван çĕршыв — хăйĕн халăхĕн амăшĕ. Вăл хăйĕн ывăлĕ-хĕрĕпе мухтанать, вĕсемшĕн тăрăшать, кирлĕ чух пулăшу, вăй-хал парать.

Эпир Тăван çĕршыва юрататпăр. Унпа пĕр пурнăçпа пурăнатпăр.

*Ю. Яковлев.*

## Çĕршывăмăр.

...Сан килӳ Вăтакасра,
хамăр кас ялан асра.
Çавă-ши çĕршывăмăр?
Çав та, çав кăна та мар:
Анаткас та пур ялта,
Турикас та пур тата;
вĕсенче те ачасем,
пĕр класра лараксансем.
Хамăр ял вĕçне тухсан,
эс çеремлĕ çĕр куран;
çав çулпа утсан-утсан,
эс шоссе çине тухан.
Çулăн икĕ хĕррипе
йывăç лартнă йĕркипе.
Тикĕс сарнă çулпала
унталла та кунталла
ыткăнаççĕ машинсем —
çăклисем, çăмăллисем.
Тĕлĕнсе пăхса тăран.



Ачасем аташасран
аслă çулăн хĕррипе
юпа лартнă, ун çумне
шĕвĕр пуçлă ик хăма
çырса çапнă вулама.
Пĕр хăми çине Канаш
тесе çырнă çав юлташ,
теприне вăл пит катмар
авса хунă — Шупашкар.

*П. Хусанкай.*

? 1. Тăван çĕршыв мĕнрен пуçланать? Сăвăра ун пирки мĕн каланă?
2. Ялтан тухсан, мĕн-мĕн куратăн?
3. Аслă çул ăçта илсе çитерет?
4. Эсĕ ăçта пурăнатăн? Ху çуралнă ял çинчен каласа пар.



## Чи саваӑнаҫлӑ кун.

Мӗншӗн Петӗр хӗпӗртенӗ?
Пичӗ-куҫӗ йӑл кулать.
Иртенпех лара пӗлмесӗр
уткалать те чупкалать.

— Вӑхӑт ҫитрӗ пуль, каяр-и?—
васкатать вӑл пиччӗшне.
Пӗр уҫать-и, пӗр хупать-и
хӑмӑр питлӗ сумкине.

Ак шкула вӗҫтерчӗ Петӗр,
пичӗ-куҫӗ йӑл кулать.
Халь эсир ӑна пӗлетӗр:
вӑл паян шкула каять.

*А. Алка.*

1. Мĕнле паллă кун çитнĕ?
2. Петĕр мĕншĕн çав тери савăннă?
3. Вăл çак куна чăтăмсăррăн кĕтни мĕнрен курăнать? Тупса вула.
4. Эсĕ çак куна мĕнле кĕтсе илтĕн?
5. Пĕлÿ кунĕ мĕнле иртни çинчен аса илсе каласа пар.
6. Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене мăшăрлă вула: *хĕпĕртенĕ, хурланнă, савăннă, хуйхăрнă.*

## Эпир пурăнакан çĕршыв.

Манăн Дима ятлă юлташ пур. Пĕррехинче вăл манран çапла ыйтрĕ:

— Эпир ăçта пурăнатпăр?

— Совет Союзĕнче,— хуравларăм эпĕ.— Пирĕн Тăван çĕршыв çавăн ятлă.

— Пĕлетĕп. Пирĕн Тăван çĕршыв мĕнле çĕршыв?— малалла тĕпчерĕ тусăм.

— Пысăк!

— Тата мĕнле!

— Вăйлă!

— Тата мĕнле?

— Туслă!

— Тата мĕнле?

— Пуян!

— Тĕрĕс! Пирĕн Тăван çĕршыв пысăк та, пуян та, вăйлă та, туслă та! Пирĕн çĕршыв татах та вăйлăрах, пуянрах, хитререх пулĕ. Совет çыннисем, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеççĕ.



## Тӗп хула.

...Самолёт тӳпене хӑпар̌чӗ. Аялта пысӑк хула — площадьсемпе урамсем, çуртсемпе парксем, заводсемпе стадионсем. Кремль çийӗн вӗçсе иртрӗмӗр, Мускав шывӗ çийӗн.

— Çак пӗтӗмпех Мускав-и? — тӗпчерӗ Дима.

— Мускав, — хуравларӑм эпӗ.

Хам та тӗлӗнсе пыратӑп. Мӗн тери аслӑ та илемлӗ иккен Мускав! Вӑл çулсерен хитререх те чеченрех.

— Мускав — пирӗн çӗршывӑн тӗп хули, — ӑнлантартӑм эпӗ.

— Пӗтӗм тӗнче пӗлет-и ӑна?

— Çапла. Пӗтӗм тӗнче Мускава пӗлсе тӑрать, — килӗшрӗм эпӗ унпа.

## Тепӗр аслӑ хула.

Самолёт малалла вӗҫет. Аялта пысӑк хула.

— Ку тата мӗнле хула?—ыйтрӗ Дима.

— Ку Ленинград. Вӑл та Мускав пекех аслӑ хула.

— Эпӗ Ленинград ҫинчен илтсеттӗм. Анчах вӑл мӗншӗн Мускав пекех?—ыйтрӗ каллех Дима.

— Ленинград Мускав пек те, Мускав пек те мар. Вӑл ун пекех пысӑк, илемлӗ хула. Анчах унӑн хӑйӗн уйрӑм илемӗ те пур. Унӑн кунҫулӗ те хӑйне евӗрлӗ. Ҫак хулара Ленин ертсе пынипе революци пуҫланнӑ. Апла пулсан, ҫак хулара пирӗн Совет влаҫӗ пуҫланнӑ...

## Пирӗн ҫӗршыв пысӑк та пуян.

...Пысӑк та илемлӗ самолёт чугун ҫул ҫийӗн вӗҫет. Пӗр хуларан тепӗр хулана чугун ҫулсем хывнӑ. Чугун ҫулпа поездсем пӗрин хыҫҫӑн теприирteҫҫӗ. Ҫитмелли ҫӗре часах ҫитерeҫҫӗ.

Поезд ҫинче ытларах ҫамрӑксем.

— Ӑҫта каяҫҫӗ-ха вӗсем?

— Ҫӗпӗре тата Инҫет Хӗвелтухӑҫне.

— Вӗсем мӗнле ҫӗнӗ вырӑнсене ҫул хываҫҫӗ?

— Ытларах Ҫӗпӗрпе Инҫет Хӗвелтухӑҫ ҫӗрӗсем ҫине чугун ҫулсем хываҫҫӗ. Вӑл вырӑнсем пуян. Комсомолецсем унта ӗҫлеме каяҫҫӗ. Вӗсем Байкал кӳллинчен пуҫласа Амур шывӗ таранах чугун ҫул турӗҫ. Ӑна кӗскен БАМ теҫҫӗ.

Çĕпĕрпе Инçет Хĕвелтухăçĕнче хуласем лартаççĕ. Çĕпĕрти чи пысăк юханшывсем çинче электростанцисем тăваççĕ.

Вĕçĕ-хĕррисĕр Çĕпĕр хирĕсенче пуян тырпул пухса илеççĕ.

Çĕпĕрĕн çурçĕр пайĕнче алмаз та пур.

Мĕн тери аслă та пуян Çĕпĕр çĕрĕ!

*С. Баруздин.*

1. Пирĕн çĕршыв мĕн ятлă?
2. Мускав çинчен каланине тупса вула.
3. Ленинград хули мĕнпе паллă?
4. Çамрăксем ăçта ĕçлеме каяççĕ?
5. Çĕпĕрпе Инçет Хĕвелтухăç çĕрĕсем çинчен мĕн калана? Тупса вула.

## Чăваш çĕршывĕ.

Ытла та хӳхĕм ман Чăваш çĕршывĕ! Ун ытарма çук улăхĕсемпе вăрманĕсем. Вăрманĕсенче нумай йышши чĕрчун пурăнать. Унта эсĕ мулкачпа тилле, пăшипе пăлана, упапа кашкăра, пакшапа арлана куратăн.

Чăваш çĕршывĕ урлă анлă Атăл, лăпкă Сăр, Çавал, Аслă тата Кĕçĕн Пăла, Кĕтне, Энĕш, Сурăм шывĕсем юхаççĕ. Ачасем çу каçипех юханшывсенче шыва кĕреççĕ, ишме вĕренеççĕ, пулă тытаççĕ.

Тăрă шывсен икĕ енĕпе те саласем, ялсем, хуласем çитĕнсе ларнă. Вĕсем капмар та илемлĕ. Республикăра çакăн пек хуласем пур: Шупашкар,

Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле, Етĕрне, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Канаш, Улатăр.

Шупашкар — республикăн тĕп хули. Паянхи Шупашкар — пысăк та илемлĕ хула. Кунта завод-семпе фабрикăсем йышлă. Мĕн кăна туса кăлар-маççĕ пуль вĕсенче: пир-авăр, атă-пушмак, кĕпе-тумтир, сĕтел-пукан, пысăк тракторсем...

Чăваш çĕршывĕ юмахри пек паттăр Василий Иванович Чапаевпа тĕнче уçлăхĕн улăпне Андриян Николаева пăхса ӳстернĕ. Паттăрсен йышĕ çулленех ӳссе пырать. Ӳсет, чечекленет юратнă Чăваш çĕршывĕ!

*А. Артемьев.*

1. Эпир мĕнле республикăра пурăнатпăр?
2. Чăваш çĕрĕнче мĕн ятлă шывсем юхса выртаççĕ?
3. Республикăра мĕнле хуласем пур?
4. Чăваш çĕрĕ мĕнпе пуян?
5. Республикăн тĕп хули мĕн ятлă?
6. Эсĕ ху пулнă хула çинчен каласа пар.

## Ку вăл—ман Тăван çĕршыв.

Урамра çилпе кашлаççĕ
ешĕл тумлă йăмрасем.
Кайăксем чуна çĕклеççĕ,
янратаççĕ юрăсем.
    Ку вăл — ман Тăван çĕршыв!
Улăх тărăх шăнкăр-шăнкăр
кĕмĕл шыв иртет юхса.

Сар хӗвел кулать, кун янкăр,
пӗлӗт тӗкӗр пек таса.
Ку вăл — ман Тăван ҫӗршыв!
Кунӗпех вăрман мăнаҫлăн
пӗлӗтпе тем канашлать.
Ҫил вӗрет те кассăн-кассăн,
тырă-пулă хумханать.
Ку вăл — ман Тăван ҫӗршыв!
Пусă урлă улăп евӗр
курăнаҫҫӗ заводсем.
Ёмӗте ҫӗклет кӗрлевӗ
тӳпери самолётсен.
Ку вăл — ман Тăван ҫӗршыв!

*П. Ялкир.*

1. Тăван тавралăх сана мӗншӗн савăнтарать?
2. Эсӗ тăван тавралăхра мӗн-мӗн куратăн?

## Сунай паттăрăн хурçă учӗ.

Чăваш халăхӗн Сунай паттăр ҫинчен хунă халап пур.

...Сунай паттăр хурҫă ут тунă. Вăл ҫав утпа вилӗм хуҫин, хаяр Эсрелӗн, ҫӗршывне сухаласа тăкасшăн пулнă.

Эсрелӗн ҫӗршывне сухаласа тăксан, унта чечексем шăтса тухасса пӗлнӗ Сунай паттăр. Ун чухне вара Эсрел ҫӗр ҫинчен пачах та ҫухалнă пулӗччӗ, вăл чечексенчен питӗ хăранă-ҫке! Вара тинех ҫӗр ҫинчи этем телей тупӗччӗ.

Сунай паттăр хурçă утне чун кěртеймен...

Çěр çине часах тепěр паттăр килě тенě юмахра. Вăл хурçă ута чун кěртě те Эсрел çěршывне сухаласа тăкě. Чăваш çěрěнче хаваслă та телейлě пурнăç пуçланě...

Халě çак юмах пурнăçа кěчě. Шупашкара çěршывăн тěрлě кěтесěсенчен пин-пин строитель килсе çитрě. Вěсем трактор завочě туса лартрěç. Çав заводра хăватлă промышленность тракторěсем кăлараççě. Ку трактор виççěр вăтăр лаша вăйлě. Пыра-киле пирěн завод пин лаша вăйлě тракторсем те тума тытăнě.

Хăватлă тракторсем Çěпěрте, Çурçěрте, Кăнтăрта ěçлеççě, çынсене чугун çулсем хывма, пушхирсемпе шăн çěрсене çěнтерме пулăшаççě.

*Юхма Мишши.*

1. Халăхра Сунай паттăр çинчен мěнле халап çӳрет? Ăна аса илсе каласа пар.
2. Шупашкарта мěнле завод тунă?
3. Калава вуласа, промышленность тракторě çинчен мěн пěлтěн? Тупса вула.

## Шуршăл.

Шуршăл çав тери хитре вырăнта вырнаçнă. Сăрт çинче те, сăрт айккинче те çуртсем. Ял урамěсем тирпейлě, ешěл йăмраллă. Çывăхрах çарансемпе улăхсем, варман. Çавал шывě те ял çумěпех юхса выртать.

Çак ялта виççěмěш космонавт Андриян Григорьевич Николаев çуралса ӳснě.

Шуршăлти илемсенчен пĕри вăл — сăрт айĕнче тапса тăракан çăлкуçĕсем. Куççуль пек таса вĕсен шывĕ, тăрă. Çакăнтан пуçланнă те ĕнтĕ ял ячĕ, Шурçăл тенĕ ăна малтан çынсем.

Шуршăла çитсен, кашниех космонавт çуралса ӳснĕ çурта, çурт умĕнчи Андриян юратнă вата йăмрана, Андриян вĕреннĕ шкула курĕ.

Шкул садĕнче сире ачасем çав тери тирпейлĕ пăхса усракан улмуççине кăтартĕç. Ку вăл — Андриян улмуççийĕ.

*Юхма Мишши.*

1. Шуршăл ялĕ мĕнле вырăнта вырнаçнă?
2. Çак яла мĕншĕн Шуршăл тесе ят панă? Тупса вула.
3. Шуршăл ялĕ мĕнпе чапа тухнă?

# Кĕркунне.



Кантăка, туссем, яр уçăр:
янкăр кун тулта çиçет.
Çыру евĕр сарă çулçă
урамра ирех вĕçет.

*В. Тимаков.*

## Ылтăн кĕркунне.

Çу иртсе те кайрĕ. Ылтăн кĕр кунĕсем çитрĕç. Уй-хир пушанчĕ. Янкăр тăрă тӳпере пĕлĕтсем шăваççĕ. Кăнтăрла хĕвел ялтăртатать, анчах унăн ăшши çуллахи пек мар ĕнтĕ. Ирсерен тăм та ӳккелет.

Мĕнле илемлĕ кĕркуннехи вăрманта!.. Емешĕл йывăççем хушшинче сарă, хĕрлĕ çулçăсем курăнкалаççĕ. Ав, унта вĕрене сап-сарă ларать, ăвăс та хĕрелнĕ, шĕшкĕ те хăмăрланнă. Паланпа улмуççи çулçисем те саралма тытăннă.

Сарăхнă, хĕрелнĕ çулçăсем тӳлек çанталăкра туратсем çинчен вĕлтĕртетсе вĕçсе анаççĕ. Вăрман кĕрхи çилпе кашлама тытăнсан, çулçăсем темрен хăранă кайăксем пек пăлханаççĕ, вăрмантан вĕçсе тухаççĕ те хир тăрăх сапаланаççĕ. Вăрман çаралсах пырать. Вĕçен кайăксем те таçта кайса кĕчĕç.

Шкул ачисем кĕрхи пахчара йывăç айĕсене хусăклаççĕ, хăрăк туратсене иртеççĕ, чие тĕмĕсене сайралатаççĕ, хăмла çырлин кивĕ вуллисене касса, çамрăккисене хĕл касма авса çыхаççĕ, улмуççисемпе йĕплĕ çырла йывăçĕсем лартса хăвараççĕ. Вăрлăх валли суйланă çимĕçсен, чечексен вăррисене те пухаççĕ. Ачасем питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ.

*М. Трубина* çырни тăрăх.

?

1. Калавра кĕрĕн хăш тапхăрне сăнланă?
2. Ку вăхăта мĕншĕн ылтăн кĕр теççĕ?
3. Ылтăн кĕрĕн ытти паллисене каласа тух.
4. Ачасем кĕркунне шкул пахчинче мĕн ĕçлеççĕ? Тупса вула. Эсир мĕн тăватăр?
5. «Ылтăн кĕр» сăмахлă ӳкерчĕк тăвăр.

### Ваттисен сăмахĕсем.

Кĕр пуçтарать, хĕл салатать.
Кĕр тутă пулать.

## Пилеш çупкăмĕ.

— Кур-ха, кур, пиччеçĕм:
пилешсем ялтра
çулăм ӳкереççĕ
кӳршĕри садра!

Тен, вут-кайăк ларнă
каç вĕсем çине,
ӳкерсе хăварнă
ытарми тĕкне?

— Йăмăкăм, çырла вăл
хĕм сапать унта.
Ак татам ялтравлă
çупкăма — тутан!

Çумăр, çĕр сĕткенĕ,
сар хĕвел çути
пилешре хĕмленнĕ...
Сиплĕ-çке тути!

Ешĕл çур çывхарĕ,
пилешсем вара
шурă чатăр карĕç
пĕтĕм таврара.

*Ю. Петров.*

1. Кĕркунне пилеш çинче мĕн куртăн?
2. Ун çырли çинчен каласа пар.
3. Пилеш çырли илемне сăвăра мĕнле çырса кăтартнă?

32394 гув

# Тăрнасем.

Çанталăк сулхăнлата пуçларĕ. Тырă вырса пĕтернĕ ĕнтĕ. Эпир аттепе хире тухрăмăр. Çӳлте тăрнасем вĕçсе иртеççĕ. Сасартăк пĕри, карта умĕн пыраканни, ыттисенчен аяларах анчĕ те айккинчен вĕçме тытăнчĕ. Паçăр ун хыççăн вĕçекенни халĕ пуринчен малта пулчĕ.

— Аçта каяççĕ вĕсем? — ыйтрăм эпĕ.

— Кăнтăр енне, ăшă çĕре.

— Кунта та сивĕ мар-çке, мĕншĕн каймалла вара вĕсен? — тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Халь сивĕ мар та, кĕçех сивĕ пулать, юр çума пуçлать. Хĕлле кунта апатсăр вилеççĕ.

— Вĕсем мĕншĕн карталанса вĕçеççĕ? — пĕлес килчĕ манăн.



— Карталанса вӗҫме ҫӑмӑлрах. Эсӗ асӑрхарӑн-и: пӗри, ав, чи малта пыратчӗ, халӗ хыҫала юлчӗ.

— Куртӑм-ҫке.

— Малта пыраканнине йывӑр килет. Унӑн хӑйӗн кӑкӑрӗпе сывлӑша ҫурса пымалла, ыттисене валли ҫул уҫмалла. Ун хыҫҫӑн ыттисене вӗҫме ҫӑмӑлрах. Анчах пӗрмай малта пырса ывӑнтарать. Вӑл ывӑнсан, ун вырӑнне тепри йышӑнать. Ҫапла вӗсем мӗн кӑнтӑра ҫитиччченех ылмашӑнса вӗҫеҫҫӗ.

Атте ҫапла каланӑ хушӑра тӑрнасем хамӑртан инҫе вӗҫсе кайрӗҫ те часах курӑнми пулчӗҫ.

*Илпек Микулайӗ.*

?

1. Хӗрачапа ашшӗ мӗн курнӑ?
2. Тӑрнасем кӗркунне ӑҫталла вӗҫеҫҫӗ?
3. Тӑрнасем мӗншӗн карталанса вӗҫеҫҫӗ? Эсӗ тӑрнасем, хур-кайӑксем вӗҫнине курнӑ-и? Каласа пар.
4. Калава рольсемпе вулӑр.

## Кӑмпара.

Эх, аван-ҫке кӑмпара,—
ывӑнни ҫинчен манан.
Ешӗл аслӑ ращара
тултарар карҫинккана!

Тӗмеске ҫинчи ҫулҫа
патакпа сирсем кӑштах —
пилӗк-ултӑ кӑрӑҫа
тупӑн эсӗ ҫавӑнтах.

Кăкламастпăр вĕсене,
тунинчен касатпăр çеç:
ращари кăмпасене
пĕтĕмпех ма пĕтерес?!

Илĕртет шăна кăмпи,
хĕрлĕскер, хăй капăр пит.
Татас çук эпир ăна —
наркăмăшлă кăмпана.

*Ю. Петров.*

?

1. Эсĕ кăçал вăрманта кăмпара пулнă-и? Кампа кайрăн?
2. Эсир мĕнле-мĕнле кăмпа татрăр?
3. Кăмпана мĕнле татмалла? Мĕншĕн?
4. Шăна кăмпине мĕншĕн татмалла мар?



1. Ӳкерчӗке тимлӗн сӑна. Кунта ҫулталӑкӑн хӑш вӑхӑтне кӑтартнӑ?
2. Йывӑҫ-курӑк мӗнле улшӑннӑ?
3. Ҫанталӑка сӑнласа пар.
4. Ӳкерчӗк ҫинче камсене куратӑн?
5. Ачасем мӗн ӗҫлеҫҫӗ?
6. Ӳкерчӗке ят пар, ун тӑрӑх ҫыхӑнуллӑ калав ту.

## Тупмалли юмах.

Пӗчӗкскер, хитрескер, ҫӗр мӑкӑртса тухнӑскер, пурҫӑн тутӑр ҫыхнӑскер.

## Пакша.

Ванюкпа иксӗмӗр вӑрмана кайрӑмӑр. Унта кӑмпа нумай. Хыр вӑрманӗнче хулӑн туналлӑ шур кӑмпа пуҫтартӑмӑр. Кӑрӑҫ та тупрӑмӑр—вӑл ҫӗрӗшнӗ ҫулҫӑ айӗнче карти-картипе шӑтнӑ.

Татсан-татсан, кунтӑксем тулчӗҫ, киле таврӑнма та вӑхӑт ҫитрӗ. Калаҫса пынӑ хушӑра пӗр лапсӑркка симӗс чӑрӑш ҫинче пакша сиксе ҫӳренине курах кайрӑмӑр. Вӑл пӗр туратран тепӗр турат ҫине хӑвӑрт чупса анать. Куҫӗ шӑрҫа пек йӑлтӑркка хура. Хӑй пирӗн еннелле тимлӗн пӑхать. «Кунта хӑпармӗҫ-ши ачасем?»—тет пуль. Эпир, вӑл мӗн тӑвасса кӗтсе, вырӑнтан хускалмасӑр тӑратпӑр. Пакша васкаса чупса анчӗ те куҫран ҫухалчӗ.

— Хӑрать вӑл пирӗнтен, ҫавӑнпа тарчӗ,—тет Ванюк.

Эпир малалла утасшӑнччӗ кӑна, турат тӑрӑх пакша хӑпарнине куртӑмӑр. Ҫавах-ши е урӑххи?

Пакша пĕр туратран тепĕр турат çине сике-сике ларать. Темле майпа ӳкмест хăй, чĕрнисем çирĕп пулмалла çав. Сăнаса пăхрăмăр та ун çăварĕнче кăмпа пуррине курах кайрăмăр. Хăй çитсе чарăннă çĕрте те чăрăш йĕпписем çине темиçе кăмпа тирсе хунă.

— Пакша та кăмпа пуçтарать иккен,— терĕ Ванюк.— Кăмписене мĕншĕн çакса хунă тата?

— Типĕтет вăл вĕсене. Хĕлле çиме хатĕрлет. Кунсем ăшă тăнă чух тар тăксах тăрăшать. Типсе çитсен, йывăç хăвăлне кĕртсе хурать.

— Ав епле ăслă иккен пакша,—терĕ вара тусăм.

Хамăр татнă кăмпасенчен вĕттисене суйласа илтĕмĕр те чăрăш айне хурса хăвартăмăр. Ан тив, вĕсене пакша йăтса хăпартăр, хĕлле валли нумайрах кăмпа типĕтсе хутăр.

*Илпек Микулайĕ.*

?

1. Ачасем вăрманта мĕн курнă?
2. Пакша хĕле мĕнле хатĕрленет?
3. Ачасем пакша валли мĕншĕн вĕтĕ кăмписене хăварнă?
4. Калав тăрăх эсĕ мĕнле ӳкерчĕк тунă пулăттăн?

## Хура кĕркунне.

Сивĕ çумăр час-час çăвать. Хĕвел хутран-ситрен кăна курăнать. Çулсем кĕрсе тухма çук пылчăклă. Лупашкасем тулли шыв кӳлленсе тăрать.

Йывăç çулçисем тăкăнаççĕ. Вăрман çаралсах пырать. Уçланкăри сарлака пилеш çырлисене аран

йӑтса ларать. Йывӑҫсем хушшинчи палана аякранах куратӑн. Унӑн ҫырлисем хӗрлӗ шӑрҫа пек йӑлтӑртатаҫҫӗ.

Анлӑ уйра ыраш калчи кӑна сип-симӗс ешерет. Колхозниксем юлашки ҫӗрулмине уйран пуҫтарса кӗчӗҫ. Улӑхра купӑста пулса ҫитнӗ. Кӗҫех ӑна та касма пуҫлӗҫ.

Колхозниксен кӗрхи ӗҫӗсем вӗҫленсе пыраҫҫӗ.

*С. Юшков* ҫырни тӑрӑх.

1. Калавра кӗрӗн хӑш тапхӑрне сӑнланӑ?
2. Ку тапхӑра мӗншӗн хура кӗркунне тенӗ?
3. Хура кӗркуннен паллисене тупса вула.
4. Ҫак вӑхӑтра колхозниксем мӗн ӗҫлеҫҫӗ?

## Кӗркунне.

Шӑнтать ӗнтӗ кунсерен,
ҫитрӗ ӗнтӗ кӗркунне.
Вӗҫен кайӑк сассинчен
хуйхӑ кӗрет чӗрене.

Карти-карти кайӑксем
вӗҫет тинӗс леш енне.
Хывнӑ ӗнтӗ йывӑҫсем
пурте сарӑ тумтирне.

*К. Иванов* куҫарнинчен.

1. Сӑвӑра кӗрхи куна мӗнле сӑнланӑ? Хӑвӑн сӑмахусемпе каласа пар.
2. «Вӗҫен кайӑк сассинчен хуйхӑ кӗрет чӗрене» тенине мӗнле ӑнланатӑн?

3. Хăшпĕр вĕçен кайăк хĕл каçма мĕншĕн кунта юлмасть?

4. «Хывнă ĕнтĕ йывăçсем пурте сарă тумтирне» тенине мĕнле ăнланатăн?

**Пĕтĕмĕшле ыйтусемпе ĕçсем.**

1. Кĕр пуçламăшĕ, ылтăн кĕр, хура кĕр çинчен калакан хайлавсен ячĕсене аса ил.

2. Кĕр кунĕн мĕнле паллисем санăн асна юлчĕç?

3. Чĕрчунсен кĕркуннехи пурнăçĕ çинчен калакан сăвăсемпе калавсене аса ил.

4. Çынсен кĕркуннехи ĕçĕсем çинчен мĕнле хайлавсенче вуларăн?

5. «Кĕркунне» темăри хăвна килĕшнĕ сăвва пăхмасăр калама вĕрен.

6. Кĕркунне çинчен вуласа, эсĕ мĕн çĕнни пĕлтĕн?

# Ноябрӗн 7-мӗшӗ — аслӑ уяв.



## Аслӑ Октябрь.

Пирӗн кашни уяв илемлӗ. Анчах вӗсенчен чи хакли, чи илемли — Аслӑ Октябрь уявӗ, рабочисемпе хресченсен ҫӗнтерӳ уявӗ. Ҫак кун пирӗн ҫӗршыври рабочисемпе хресченсем хӑйсен пусмӑрҫисене ҫӗнтернӗ, ирӗке тухнӑ.

Аслӑ Октябрь уявӗнче эпир революци паттӑрӗсене, халӑха ҫӗнтерӳ патне ертсе пынӑ Коммунистсен партине, хаклӑ ҫулпуҫӑмӑра Владимир Ильич Ленина мухтатпӑр. Вӗсене тав туса пуҫ таятпӑр.

*А. Митяев.*

## Октябрь ялавĕ.

Хĕм сапать çĕршыв ялавĕ,
вĕлкĕшет ман аллăмра.
Çĕкленет хаваслăх шавĕ
пирĕн аслă урамра.

Кам телейшĕн, çирĕп миршĕн
туслăха чунтан хаклать,
кам хĕвеллĕ çутă иршĕн
пусмăра хирĕç тăрать —
пурте, пурте уявлаççĕ
çут Октябрь уявне.
Чи çӳлте йăтса пыраççĕ
паян унăн ялавне!

*И. Малкай.*

?

1. Сăвăра мĕнле уяв çинчен каланă?
2. Аслă Октябрь камсен уявĕ? Ун пирки каланă сăмах-сене сăвăра тупса вула.
3. Ху çак уява мĕнле уявлани çинчен каласа пар.

## Хресченсем мĕнле пурăннă.

### I

Ульяновсен çемйинче няня пулнă. Вăл ялтан Володя çуралсанах килнĕ, çавăнтанпах вара вĕсем патĕнче пурăннă.

Каçсерен, ĕç пуçтарсан, няня, алĕç илсе, чӳрече патне вырнаçнă. Ольăпа Володя унăн пӳлĕмне

çӳреме юратнă. Час-часах вĕсем унран мĕн çинчен те пулин каласа пама ыйтнă. Ачасем пĕчĕкрех чух юмахсем итлеме юратнă, ӳсерехпе, Володя калашле, пурнăç çинчен тăнлама кăмăлланă.

— Няня, ялта мĕнле пурăнни çинчен каласа парсамччĕ?— ыйтнă пĕррехинче Володя.

Няня ассăн сывласа илнĕ.

— Мĕн каласа парам-ши, Володенька! Питĕ начар пурăннă эпир ялта. Аса илес те килмест.

— Мĕншĕн япăх?— тĕпченĕ Володя.— Мĕнле япăх?

— Мĕнле ăнлатарас-ши сире?— васкамасăр пуçланă сăмахне ватă хĕрарăм.—Эсир, ачасем, хулара ӳснĕ, ял пурнăçне пĕлместĕр. Сире ăнланма йывăр. Авă эсир пурне те магазинта туянатăр: çăкăрне те, ашне те, сĕтне те, ытти çимĕçне те. Хресчене вара çĕр тăрантарать. Мĕн акать, мĕн пуçтарса илет, çавăнпа çемйипе тăранмалла. Хресчене çĕр-сĕр ниепле те май çук. Çĕр пулсан, хресчен хăй те, çемйи те тутă. Çĕр çук — хуть те выçса вил.

Акă мĕнлерех. Пирĕн çĕре вара пĕтĕмпе тенĕ пекех улпут туртса илчĕ: çаранне те, хирне те, вăрманне те. Хресченсем валли пĕчĕк лаптăк кăна юлчĕ, вăл та пулсан чи япăххи. Унта ним те акса ӳстереймĕн, кĕтӳ кĕтме те майлă мар.

Халăх выçăпа аптраса çитрĕ.

Вĕсем улпут патне каяççĕ, ăна йăлăнаççĕ:

— Тархасшăн, шеллесем, кăштах та пулин çĕр парсам пире.

Лешĕ вара:

— Юрĕ, илĕр, акăр. Анчах та мĕн вырса илнин çуррине мана памалла,— тет.

Мĕн тăван, хресченсем килĕшеççĕ.

Иртен пуçласа сĕм-çĕрлеччен ĕçлеççĕ вĕсем, çемйипех, ачи-пăчипех: сухалаççĕ, акаççĕ, выраççĕ. Тырпул пуçтарсанах, çуррине улпута леçсе параççĕ. Улпутăн кĕлечĕсем туп-тулли, хресченсем каллех выçăпа аптăраççĕ. Уйрăмах пысăк çемьеллисене, ачи-пăчи йышлисене йывăр.

## II

Пĕр çулхине тата, инкеке, питĕ шăрăх пулчĕ. Çăвĕпех пĕр пĕрчĕ çумăр та ӳкмерĕ. Çĕр кушăрхаса чул пек хытса ларчĕ. Уй-хирте пĕтĕм тырпул типсе-çунса кайрĕ. Нимĕн пуçтармалли те çук. Хуйха ӳкрĕç хресченсем — мĕн пуçтарнă тыррине хăйсене хăварсан та çуркуннеччен çитеймĕ. Улпучĕ вара çуррине ыйтать. Хăйĕн иртнĕ çулхи тырри те кĕлет тулли пулсан та.

— Нимĕн те памастпăр,— шут турĕç тарăхнă хресченсем.

Памарĕç те.

Улпут хулана çăхав пама кайрĕ. Яла пăшаллă салтаксем илсе килчĕ. Лешсем хресченсене чăпăрккасемпе çунтарчĕç, персе пăрахассипе хăратрĕç. Тыррине пуçтарчĕç те улпута пачĕç. Йĕрки çавăн пек иккен.

Темле хĕл каçрăмăр çав çул, хам та пĕлместĕп. Выçлăхĕ ытла хăрушă пулчĕ. Мĕн чухлĕ çын вил-

чĕ. Чылайăшĕ хулана тухса кайрĕ. Эпĕ те çав çулах ялпа сывпуллашрăм.

Вăт, çавăн пек, ачасем. Эсир мĕншĕн япăх тесе ыйтатăр.

...Çав каçхине Володьăпа Оля илтни çинчен нумайччен калаçрĕç. Мĕншĕн çавăн пек тĕрĕсмарлăх пулма пултарнине вĕсен питĕ ăнланас килчĕ. Мĕншĕн, выçă хресченсен юлашки тыррине туртса илсе, çăткăн улпута памалла? Ăна пулăшма салтаксене кам янă? Мĕншĕн хресченсем ялан çитмен пурнăçпа пурăнаççĕ?

— Патша вара мĕншĕн тĕрĕсмарлăха пĕтермест? Кăмăлĕ пулсан, пĕтерме пултарать вĕт,— ыйтать Оля.

— Патша? Кун пирки эпĕ пĕлместĕп,— хуравлать Володя.— Кун пирки Сашăран ыйтмалла.

Хăй мĕн çинчен те пулин пĕлмесен, Володя яланах Сашăран ыйтать. Саша ăна май килнĕ таран ăнлантарса пама тăрăшать.

Хальхинче вара вăл нумай калаçса тăмарĕ. Володьăпа Оля патша мĕншĕн хресченсене улпутсенчен хӳтĕлеменни çинчен ыйтсан, кĕскен кăна:

— Мĕншĕн хӳтĕлетĕр вăл? Патша хăй те улпут, чи пуян улпут,— терĕ.

Урăх нимĕн те чĕнмерĕ.

*Л. Кон.*

?

1. Ĕлĕк лайăх вăрмансемпе çарансем, хирсем кам аллинче пулнă?
2. Хресченсем мĕнле тăранса пурăннă? Тупса вула.
3. Пĕр çулхине хресченсем мĕншĕн улпута тырă парас мар тесе шут тытнă?

4. Улпут вӗсене мӗнле таварнӑ?
5. Хресченсене патша мӗншӗн хӳтӗлемен?

## Владимир Ильич Ленин.

### I

Пӳртре стена ҫинче портрет ҫакӑнса тӑрать. Ваҫҫа ашшӗне:

— Атте, мана Ленин ҫинчен каласа пар-ха? — терӗ.

— Эсӗ ун ҫинчен мӗн пӗлетӗн?

— Сахал пӗлетӗп, атте.

— Апла пулсан, итле: вӑл — Владимир Ильич Ленин. Пирӗн юратнӑ ҫулпуҫ. Эпӗ ҫамрӑкчӗ. Ун чухне пирӗн, рабочисен, пурнӑҫ начарччӗ. Ӗҫ йывӑрччӗ. Эпир иртен пуҫласа сӗм-ҫӗрлеччен ӗҫлеттӗмӗр, пурӑнасса выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнаттӑмӑр.

Пирӗн завод хуҫи Данилов ятлӑччӗ. Вӑл хӑй ӗҫлеместчӗ, пилӗкне авмастчӗ, пуян пурӑнатчӗ.

Ачам, ӑҫтан тухма пултарнӑ унӑн пурлӑхӗ? Мӗнле майпа пуйнӑ-ха вӑл? Эпир ӗҫленипе. Вӑл пире ӗҫшӗн сахал тӳлетчӗ, тӳррипе каласан, пире ҫарататчӗ, эпир ӗҫленипе пуятчӗ. Унӑн завод, укҫа, машинӑсем пулнӑ; пирӗн вара, ҫак ӗҫчен алӑсемсӗр пуҫне, урӑх нимӗн те пулман. Ҫак алӑсем ӑна пуйтаратчӗҫ.

1. Ваҫҫа ашшӗне кам ҫинчен каласа пама ыйтнӑ?
2. Ленин кам пулнӑ?
3. Революциччен рабочисем мӗнле пурӑннӑ?
4. Рабочисен ӗҫӗпе камсем пуйнӑ?

## II

Хресченсем те ялта начар пуранна. Вĕсен çĕр сахал пулнă. Лайăх çĕр пуянсемпе çĕр улпучĕсен аллинче пулнă. Хресченсем çĕр улпучĕсем валли ĕçленĕ. Çĕр улпучĕсем çавăнпа пуян пуранна.

Çĕр улпучĕсемпе капиталистсем пĕр майлă пулнă. Патша чи аслă, чи пуян çĕр улпучĕ шутланнă. Паллах, вĕсем пĕр-пĕрне хўтĕленĕ. Патша пуриншĕн те хуçа пулнă. Вăл çĕр улпучĕсемпе капиталистсемшĕн çеç лайăх йĕрке туса хунă. Çав йĕркесене пула рабочисемпе хресченсем пусмăрта хĕн курса пуранна.

Владимир Ильич Ленин рабочисемпе хресченсен пурнăçĕ йывăррине ачаранах пĕлнĕ, вĕсен пурнăçне лайăхлатма тăрăшнă.

Ленин пусмăра хирĕç тăракансене пĕрлештерме пуçланă. Вĕсене коммунистсем тенĕ. Вĕсем Ленин йĕркеленĕ союза пĕрлешнĕ. Ăна Коммунистсен партийĕ тенĕ.

Рабочисем Ленина юратнă, çĕр улпучĕсемпе капиталистсем вара курайман. Патша полицийĕ ăна темиçе хутчен те арестленĕ, тĕрмене хупнă, инçетри Çĕпĕре ссылкăна янă. Патша правительстви Ленина ĕмĕрлĕхех тĕрмене хупса хурасшăн пулнă. Ленин, ют çĕршыва кайса, мĕн-мĕн тумалли çинчен рабочисем патне çырса тăнă. Анчах, ют çĕршывра пуранса, ĕççыннисен кĕрешĕвне ертсе пыма йывăр пулнă, çавăнпа вăл хамăр çĕршыва — Российăна таврăннă.

1. Революциччен хресченсен пурнăçĕ мĕнле пулнă?
2. Владимир Ильич Ленин мĕншĕн кĕрешнĕ?
3. Вăл камсене пĕрлештернĕ?
4. Çĕр улпучĕсемпе капиталистсем Ленина мĕншĕн курайман?
5. Ленин ссылкăран таврăнсан ăçта пурăннă?

## III

1917-мĕш çулхи февраль уйăхĕнче рабочисемпе салтаксем патшана хăй выранĕнчен сирпĕтнĕ, 1917-мĕш çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче вара çĕр улпучĕсемпе капиталистсене хăваласа янă. Вĕсенчен çĕр, фабрикăсемпе заводсене туртса илнĕ, рабочисемпе хресченсене панă.

Рабочисемпе хресченсем çĕнĕ пурнăç тума тытăннă.

Ку вĕсемшĕн çĕнĕ ĕç пулнă. Ленинпа унăн партийĕ рабочисене вĕрентсе пынă, пурнăçа çĕнĕлле майласа яма пулăшнă. Ленинăн питĕ нумай ĕçлеме тивнĕ. Унăн сывлăхĕ начарлансах пынă. 1924-мĕш çулхи январĕн 21-мĕшĕнче Владимир Ильич вилнĕ.

Ленин вилсен, пĕтĕм совет халăхĕ питĕ хытă хуйхăрнă, анчах вăл мĕн вĕрентнине эпир нихçан та манас çук. Эпир, коммунистсем, пур ĕçе те вăл каланă пек тума тăрăшатпăр. Ĕçе, пурнăçа çĕнĕлле йĕркелетпĕр.

*Н. Крупская* çырни тăрăх.

1. Рабочисемпе хресченсем пурнăçа мĕнле майпа çĕнĕлле йĕркелеме тытăннă?
2. Çак кĕрешӳре рабочисемпе хресченсене кам ертсе пынă?

3. Ленин вĕрентнине камсем малалла туса пыраççĕ?

## Ĕлĕкхи шкул.

Октябрьти аслă революциччен вăтам шкула гимнази тенĕ. Унта çĕр улпучĕсен, фабрика хуçисен, жандармсен ачисем вĕреннĕ.

Кирилăн ашшĕ — çĕр улпучĕ. Павăлăн — патша чиновникĕ, Наталин—генерал, Розалин—фабрика хуçи, катăк ăслă Модестăн — жандарм.

Акă Сорокин Петя. Ку ачан пурнăçĕ çăмăл мар. Унăн амăшĕ кĕпе-йĕм çуса пурăнать, прачка теççĕ ăна.

Петя гимназие çӳреймест. Вĕренме укçа нумай тӳлемелле. Петя амăшĕн ун чухлĕ укçа çук. Ĕçленĕшĕн вăл питĕ сахал илет. Иртен пуçласа каç-чен амăшĕ валашка умĕнче тăрать. Çăвать, çăвать, çăвать... Кĕпе-йĕме алли юнланиччен ухать. Унăн канма вăхăт çук. Вăл Натали, Розали валли çăвать. Кирилл, Павăл, Модест валли, хулари ытти пуянсен ачисем валли те çăвать.

Ывăлĕ амăшне пулăшать: шыв йăтать, вутă çурать.

Каçхине вара вăл çунă кĕпе-йĕме хуçисене салатса çӳрет. Фабрика хуçи патне чупать, генерал патне çитет, жандарм, помещик патне васкать— пурин патне те çитмелле.

Пуян ачисем яланах Петьăран мăшкăллаççĕ.

— Пăхăр-ха, пăхăр, прачка пырать,— ахăлтатса кулаççĕ вĕсем.



Пĕррехинче Петя чăтса тăраймарĕ, Модеста кӳпкесе илчĕ. Унăн ашшĕ жандарм пулин те — хăраса тăмарĕ.

Петьăн питĕ вĕренес килет. Анчах ăçта унта! Петьăн амăшĕ кĕпе-йĕм çăвакан кăна-çке.

Петя вĕренеймесĕрех юлнă пулĕччĕ. Анчах акă революци пулчĕ. Самана пĕтĕмпех улшăнчĕ, гимназие хупрĕç. Ун вырăнне шкул турĕç.

Халĕ шкула урăх ачасем çӳреççĕ.

Вася Потапов ашшĕ заводра ĕçлет. Оля ашшĕ — урам шăлакан. Поля ашшĕ — грузчик.

Акă Сорокин Петя та паян ытти ачасемпе пĕрле шкула каять.

Çĕнĕ те тӳлевсĕр шкула, совет шкулне, ушкăнпа каяççĕ ачасем.

*А. Алексеев.*

?

1. Петя мӗншӗн гимназире вӗренме пултарайман?
2. Унӑн революцичченхи пурнӑҫӗ епле пулнӑ?
3. Петя амӑшӗн йывӑр ӗҫӗ ҫинчен калавра тупса вула.
4. Революци ӗҫхалӑх ачисен пурнӑҫне мӗнле улшӑну кӳнӗ?

## Кӗпер ҫинче.

Восстани ҫӗрле пуҫланчӗ.

Урамра хунарсем ҫунмаҫҫӗ. Нева ҫинче большевиксен «Аврора» крейсерӗ хуран курӑнса ларать. Ун ҫинчи ҫутӑсене сӳнтернӗ, тупӑ кӗпҫисене Зимний дворец еннелле ҫавӑрнӑ.

Тӗттӗмре инҫетрен пенӗ сасӑсем илтӗнеҫҫӗ, урамсем тӑрӑх грузовиксем кӗмсӗртетсе иртеҫҫӗ. Вӗсем ҫинче пӑшаллӑ салтаксемпе матроссем тӑрса пыраҫҫӗ.

Урамсенче кӑвайтсем ҫунаҫҫӗ. Унта хӗрлӗ гвардеецсем ӑшӑнаҫҫӗ. Вӗсем ҫапӑҫӑва кӗме приказ пуласса кӗтеҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра рабочисем Нева урлӑ хывнӑ кӗперсене пурне те хӑйсен аллине тытса илчӗҫ. Кӗпер урлӑ пропускпа кӑна каҫма май пур.

Пӗр кӗперӗ ҫинче сакӑр хӗрлӗ гвардеецпа пӗрле ҫамрӑк рабочи Андрей Крутов хурала тӑчӗ. Асли — ватӑ большевик Василий Иванович.

Пӗр ҫыннӑн кӗпер урлӑ каҫмалли пропуск пулмарӗ, ӑна ҫапах та каҫарса ячӗҫ. Ҫав ҫын чикӗ патне ҫитсен, Василий Иванович унран хыттӑн:

— Сирӗн пропуск? — тесе ыйтрӗ.

Ҫын чарӑнчӗ, ҫӳлелле тӑратнӑ пальто ҫухавине сирчӗ. Василий Ивановича вӑл шӑппӑн темскер

каларĕ. Лешĕ ăна, айккинелле пăрănса, çул пачĕ. Палламан çын, хăвăрттăн утса, кĕпер çине кĕрсе кайрĕ, тĕттĕмре часах курăнми пулчĕ.

Василий Иванович нимĕн те чĕнмест, пĕрмай палламан çын кайнă еннелле пăха-пăха илет. Унта, юханшыв леш енче, пăшал, тупă сассисем илтĕнеççĕ.

Юлашкинчен Андрей чăтса тăраймарĕ:

— Ку çын сана пропуск кăтартрĕ-и? — тесе ыйтрĕ.

Василий Иванович ăна хуллен:

— Çук, вăл пропуск илме ĕлкĕреймен. Вăл яланах пытанса пурăннă... Малтан — Финляндире, унтан — кунта. Халĕ вăл Смольная каять, — терĕ.

Унтан вăл çапла хушса хучĕ:

— Шухăшласа пăх-ха, кунта вăл шурă гвардеецсен çарĕсем патĕнченех иртсе килнĕ! Ăна вĕлерме те пултарнă вĕт!

— Кам пулчĕ вара вăл?

— Владимир Ильич Ленин, — хуравларĕ Василий Иванович.

*А. Кононов.*

?

1. Восстани хăçан пуçланнă? Тупса вула.
2. Кĕпер урлă каçма мĕн кирлĕ пулнă?
3. Кĕпер патне мĕнле çын пынă?
4. Василий Иванович мĕн пирки пăшăрханнă? Тупса вула.
5. Ку çын кам пулнă?

# Эпир — Октябрь ачисем.



## Октябрёноксем.

Чи хаваслă ачасем,
чи телейлисем,
çут Октябрь калчисем —
октябрёноксем.
Хисеплетпĕр чунтанах
çитĕннисене.
Пулăшатпăр яланах
кĕçĕннисене.
Эпир лайăх вĕренме
тăрăшатпăр,
çĕршыва усă кӳме
шухăшлатпăр.

*П. Эйзин.*

1. Октябрёноксем мӗнле ачасем?
2. Вӗсене мӗншӗн «ҫут Октябрь калчисем» тенӗ?
3. Сирӗн ӗмӗтӗрсем ҫинчен сӑвӑра мӗн каланӑ? Тупса вула.

Октябрёнок — пирӗн ят,
харсӑрлӑх чунра тапать.
Октябрёнок, эс ан ман:
пионер часах пулан.

## Октябрёнока епле пӗлме пулать.

Пӗррехинче кӳршӗре пурӑнакан Василий Петрович Костьӑсем патне пынӑ. Вӑл Костьӑн тетрадьне илнӗ те уҫкаласа пӑхнӑ. Таса та илемлӗ ҫырнинченех Костя лайӑх ача пулнине чухласа илнӗ.

— Эсӗ октябрёнок пулас?

— Мӗншӗн Эсир апла шутлатӑр? — тӗлӗннӗ Костя.

— Тетрадӳ санӑн таса, тирпейлӗ, «пиллӗк» паллӑ нумай.

Тепрехинче Костя амӑшӗпе автобус ҫинче ларса пынӑ. Пӗр чарӑнмалли вырӑнта автобуса ватӑ карчӑк кӗнӗ. Костя ҫавӑнтах тӑнӑ та карчӑка хӑй вырӑнне ларма сӗннӗ.

— Эсӗ октябрёнок пулмалла? — ыйтнӑ унран карчӑк.

— Ҫапла! — хуравланӑ ача.

Чӑн-чӑн октябрёнока вӑл хӑйне шкулта, урамра тата килте лайӑх тытнинчен тӳрех пӗлме пулать.

*О. Бедарев.*

1. Василий Петрович Костя лайăх ача пулнине мĕнле пĕлнĕ? Тупса вула.

2. Ватă карчăк Костьăран мĕн çинчен ыйтнă? Тупса вула.

3. Вăл мĕншĕн çапла ыйтнă?

4. Чăн-чăн октябрёнок хăйне пур çĕрте те мĕнле тытать?

Октябрёнок — пирĕн ят,
ĕçлĕлĕх чунра пурнать.

Октябрёнок нихăçан
пĕр ĕçрен те пăрăнман.

## Шкул ачи.

Йывăç пӳрт. Урам енче
виçĕ çутă чӳрече.
Ярăнса ӳсет йăмра,
каш! кашлать вăл çумăра;
уяра вăл лăпланать,
шухăша кайса ларать.
Эс вăраннă-вăранман
тинкерет вăл кантăкран:
«Хĕвел тухнă, тăмалла,
чуп, ачам,— тет,— шкулалла».
Каçпала сана йăмра
тепĕр хут пăхса сăнать:
«Ку ачи аван-çке те,
кĕнеке вулать-ши?— тет,—
вĕренет-ши урокне?
Намăс пулмĕ-ши хăйне?»
Эс юлмастăн намăса,

ӳстерсех пыран ăса;
ху та хытă тăрăшан,
юлташна та пулăшан.

*П. Хусанкай.*

?

1. Сăвăра кам çинчен каланă?
2. Ирхине йăмра ачана мĕн каласшăн? Тупса вула.
3. Каç пулсан, йăмра мĕн пĕлесшĕн? Тупса вула.
4. Ку ача мĕнлескер?

Октябрёнок — пирĕн ят,
паттăрлăх юнра чупать.

Паттăрсем пек кĕрешер,
пурнăçа илем кӳрер.

## Карчăк.

Арçын ачапа хĕрача шкултан таврăннă. Вĕсен умĕнче пĕр карчăк пынă. Çул пăрлакран карчăк шуса ӳкнĕ.



Арçын ача сумкине хĕрачана панă та карчăка ура çине тăма пулăшнă.

— Ку санăн асаннӳ-им? — ыйтнă унран хĕрача.

— Çук, асанне мар.

— Апла пулсан, паллана çын пулĕ?

— Çук! Çук! — тенĕ ăна арçын ача. — Вăл пачах палламан карчăк.

*В. Осеева.*

1. Ачасем шкултан таврăннă чухне мĕн курнă?
2. Арçын ача мĕн тунă?
3. Хĕрача мĕншĕн тĕлĕннĕ?
4. Калавра сана кам килĕшрĕ? Мĕншĕн?

## Пĕчĕк пулăшакан.

Лена шкултан таврăнчĕ. Амăшĕ ĕçре иккен. Хĕрача васкаса хывăнчĕ те пальтине пăтана çакса ячĕ, пушмакне çуса вырăна лартрĕ. Унтан вăл урайне нӳрĕ татăкпа шăлчĕ. Тĕпелте таса мар чашăк-тирĕк ларать, Лена вĕсене вĕри шывпа лайăх çуса тасатрĕ. Çӳлĕк çине майласа хучĕ.

Çак самантра амăшĕ килсе çитрĕ.

— Тавах сана, хĕрĕм, мана пулăшнăшăн, — тесе, вăл хĕрне ыталаса чуптурĕ.

*О. Бедарев.*

1. Шкултан таврăнсан, Лена мĕн-мĕн тунă?
2. Амăшĕ ăна мĕн каланă? Вăл вырăна тупса вула.
3. Лена мĕнле хĕрача?
4. Аçу-аннӳне ху мĕнле пулăшни çинчен каласа пар.

5. Пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсене ушкăнласа вула: ĕçчен, *кăмăллă, сăпайлă, пултаруллă, хастар, сапăр, виçеллĕ, ўркевсĕр.*

Октябрёнок — пирĕн ят,
тўрĕлĕх чунра юрлать.
Туссемпе ялан пĕрле,
кўренместпĕр пĕр-пĕрне.

## Кăвак çулçăсем.

Катьăн икĕ симĕс кăранташ. Ленăн вара пĕрре те çук.

— Симĕс кăранташна пар-ха,— терĕ Катьăна Лена.

— Аннерен ыйтмалла,— хуравларĕ Катя.

Тепĕр кунхине хĕрачасем шкула пычĕç.

— Аннў ирĕк пачĕ-и?— ыйтрĕ Лена.

— Анне ирĕк пачĕ те-ха, пиччерен ыйтман-çке.

— Ыйтсам, ара, пиччўнтен,— килĕшрĕ Лена.

— Пиччў ирĕк пачĕ-и?— тўрех ыйтрĕ тепĕр кунхине Лена.

— Вăл ирĕк пачĕ те-ха, эсĕ кăранташне хуçасран хăратăп.

— Эпĕ питĕ асăрханса сăрлăп,— ўкĕтлерĕ Лена.

— Асту, кăранташа ан шĕвĕрт, хытă ан пус, ан йĕпет. Ытла нумай та ан сăрла,— ăнлантарчĕ Катя.

— Манăн йывăç çулçисемпе симĕс курăка кăна сăрламалла,— лăплантарчĕ ăна Лена.

— Ку ытла нумай,— кăмăлсăрланчĕ Катя. Унăн сăн-пичĕ те тĕксĕмленчĕ.

Лена ун çине тинкерсе пăхрĕ те айккинелле пăрăнчĕ. Кăранташне те илмерĕ. Тĕлĕнсе кайнă Катя ун хыççăн чупрĕ.

— Мĕн эсĕ? Ил!

— Кирлĕ мар,— хуравларĕ Лена.

Урокра учительница Ленăн ӳкерчĕкĕнчи çулçăсем кăваккине асăрхарĕ.

— Лена, санăн йывăç çинчи çулçăсем мĕншĕн кăвак?— ыйтрĕ вăл.

— Манăн симĕс кăранташ çук.

— Мĕншĕн юлташунтан илмерĕн?

Лена нимĕн те шарламарĕ.

— Эпĕ ăна симĕс кăранташ патăм, анчах та вăл илмерĕ,— сăмах хушрĕ нар пек хĕрелсе кайнă Катя.

Учительница ун çине тимлесе пăхрĕ те:

— Парас кăмăл пулсан, илмелле памалла,— терĕ.

*В. Осеева.*

1. Лена Катьăран мĕн ыйтнă?
2. Катя кăранташа мĕншĕн тӳрех паман? Вăл мĕнле сăлтавсем тупнă?
3. Лена кайран кăранташа мĕншĕн илмен?
4. Катя хăйĕн йăнăшне ăнланнă-ши?
5. Калавăн тĕп шухăшне палăртакан сăмахсене тупса вула.
6. Калава рольпе вулăр.

Октябрёнок — пирĕн ят,  
савăклăх чунра вылять.  
Алла-аллăн тытăнса,  
пурăнатпăр савăнса.

## Амăшĕ мĕн калана пулĕччĕ.

I

Кĕркурипе Хĕветĕр улăха пултрана кайма пуçтарăнчĕç. Ванюк та вĕсемпе кайма хапăл турĕ.

— Каях, кай,— терĕ асламăшĕ те.— Çамрăк пултран татса килĕн те, курăк яшки пĕçерсе çийĕпĕр.

Улăхра илемлĕ, хавас. Йĕри-тавра хĕрлĕ, кăвак, шурă чечексем куçа илĕртеççĕ. Пĕтĕм улăх чечекре.

Ачасем улăх тăрăх саланчĕç. Тăрăшсах пултран татаççĕ.

Сасартăк Хĕветĕр:

— Темшĕн кунта пыл хурчĕ нумай!— терĕ.

— Чăнах та, кунта пыл хурчĕ ытла та нумай,— тĕлĕнчĕ Ванюк та.— Хăйсем пĕр вĕçĕм сĕрлеççĕ тата.

— Эй, ачасем,— кăшкăрчĕ вĕсене Кĕркури,— каялла таврăнăр! Эпир утара пырса тухрăмăр. Курăр, вĕллесем лараççĕ.

Колхоз утарĕ тавра çăка йывăççисем, акаци тĕмĕсем ӳснĕ. Вĕсем хушшинче пыл хурчĕсен пĕчĕк çурчĕсем курăнаççĕ.

— Ачасем, каялла,— хушрĕ Кĕркури.— Анчах та шăппăн, ан хăлаçланăр, унсăрăн пыл хурчĕсем сăхса пĕтерĕç.

Ачасем асăрхануллăн каялла чакрĕç. Пыл хурчĕсене çиллентерес мар тесе, аллисемпе сулкалашмасăр утрĕç. Утартан чылай хăпнăччĕ ĕнтĕ,

такам макăрнине илтех кайрĕç. Утарçă ывăлĕ, пĕчĕк Ваçук, макăрать иккен. Вăл утара пырса кĕнĕ. Ăна пыл хурчĕсем сырса илнĕ те сăхма пуçланă.

— Ачасем,— терĕ Ванюк,— Ваçука пыл хурчĕсем сăхça пĕтерне.

— Халĕ, мĕн, пирĕн утара каймалла-и-ха,— кăмăлсăрланчĕ Кĕркури.— Пыл хурчĕсем пире те сăхса пĕтерĕç.

— Çула май ашшĕне кĕрсе калăпăр,— сĕнчĕ Хĕветĕр.

?

1. Пултран пуçтарнă май ачасем ăçта пырса тухнă?
2. Утар çывăхĕнче шавлама мĕншĕн юрамасть?
3. Санăн шутпа малалла мĕн пулнă?

## II

Ванюк çаврăнчĕ те утаралла утрĕ.

— Кил кунта!— чĕнчĕ вăл Ваçука.

Анчах Ваçук ăна итлемест, хуртсенчен çăлăнас тесе, аллисемпе сулкалашать, ӳлесех макăрать.

Ванюк ăна утартан çавăтса тухрĕ, килнех илсе çитерчĕ.

Ваçук амăшĕ крыльца çине чупса тухрĕ, ывăлне йăтса илчĕ.

— Эх, эсĕ те, итлеменскер, мĕншĕн утара кайрăн? Авă мĕнлерех сăхса пĕтернĕ хăвна пыл хурчĕсем. Сана пула Ванюка та лекнĕ, ăна та сăхса пĕтернĕ,— пăшăрханчĕ вăл, Ванюка тинкеререх пăхсан.

— Эпĕ аптрамастăп,— лăплантарчĕ ăна Ванюк. Вăл килнелле утрĕ. Утнăçемĕн унăн тути шыçăнса кайрĕ, хăрах куç хупанки шыçăнса куçне хупласах лартрĕ.

— Илемлĕ те вара эсĕ,— терĕ асламăшĕ, ăна курсанах.— Кам сана çавăн пекех капăрлатрĕ?

— Пыл хурчĕсем,— хаш сывларĕ ача.

— Кĕркурипе Хĕветĕре тивмен-çке вĕсем?

— Вĕсем тарчĕç. Эпĕ Васюка утартан илсе тухрăм. Мĕнех вара, ыратĕ те иртĕ.

Ашшĕ апата килсен Ванюка курчĕ те кулсах ячĕ.

— Хĕветĕрпе Кĕркури пыл хурчĕсенчен тарнă,— ăнлантарчĕ асламăшĕ,— пирĕн айванĕ Васюка çăлма утара кĕрсе кайнă. Халĕ ăна амăшĕ курнă пулсан мĕн калĕччĕ?!

Ванюк, ашшĕне хăрах куçĕпе тимлĕн сăнаса, вăл мĕн каласса кĕтрĕ. Чăнах та, амăшĕ мĕн калĕччĕ?

Ашшĕ, ăшшăн кулса, ывăлне хулпуççирен лăпкарĕ те:

— Вăл: «Маттур ман ывăл!» — тейĕччĕ,— терĕ.

*Л. Воронкова.*

?

1. Пĕчĕк Васюка кам пулăшнă?
2. Асламăшĕ Ванюка мĕн калать? Тупса вула. Вăл ку сăмахсене мĕнлерех калать?
3. Ашшĕ ачана мĕншĕн мухтать?
4. Пăтраштарнă плана йĕркелĕр:
   1. Васюк инкеке лекнĕ.
   2. Вĕсем утар патне пырса тухнă.
   3. Ачасем пултран татма кайнă.
   4. Ванюк Васюка утартан илсе тухнă.

## Чăрсăр автансем.

(Юптару.)

Пĕр ирхине
ик сар автан
пĕр харăс курнă тулă пĕрчине.
— Эп куртăм чи малтан!—
пуçланă янрашма пĕри.
— Çук, эпĕ!—тенĕ тапăнса тепри.—
Кĕçтет-им сан пуçу?!.
Пуçланнă акăш-макăш çапăçу.
Ана çерçи илтсе
кĕç пынă та сиксе
тул пĕрчине
кап! хыпнă та вĕçтернĕ йăвине.
Сисмен çакна «мăнаçлă» автансем;
çерçи сăмси пек тулăшăн вĕсем
юнпа пĕветнĕ пĕр-пĕрне.
Туссем! Ун пек ан пулăр ĕмĕрне!

*А. Кăлкан.*

?
1. Автансем мĕн пирки çапăçу пуçланă? Тупса вула.
2. Тулă пĕрчи кама лекнĕ?
3. Чăркăшма юратакан çынна мĕншĕн автанпа танлаштараççĕ?

### Ваттисен сăмахĕ.

Çынпа çын тату пурăнни аван.

### Тупмалли юмах.

Пуçĕ тура пек, хӳри çурла пек, кăшкăрать мулла пек.

(А.т.н)

## Ёç телей те савăнăç кӳрет.



### Кая юлсан, каю шăтать.

Эпĕ шкултан хашкаса чупса килтĕм. Пӳрте кĕнĕ-кĕменех аннене:

— Эпир вăрмана каятпăр,— терĕм.

— Халĕ вăрмана кайсан, уроксене хăçан хатĕрлĕн-ха?— ыйтрĕ анне.— Вăрмантан каç пуличчен килеймĕр, çывăхра мар.

— Уроксене ирхине, шкула кайиччен, тăвăп,— тархасларăм эпĕ.

— Уроксене халех хатĕрлен: паян тумалли ĕçе паянах ту, ырана ан хăвар. Кая юлсан, каю шăтать,— терĕ анне.

Манăн ирĕксĕрех анне сăмахĕсемпе килĕшмелле пулчĕ.

Тепӗр кунхине эпӗ урока яланхи пекех аван каласа патӑм. Манӑн юлташсен вара киле панӑ ӗҫе тума вӑхӑт ҫитмен.

Эпӗ ӗҫе вӑхӑтра тумасан мӗнле каю шӑтнине тинех ӑнлантӑм.

*В. Прохоров.*

?

1. Ача шкултан таврӑнсан ӑҫта каясшӑн пулнӑ?
2. Амӑшӗ ӑна мӗнле сӗнӳ панӑ? Тупса вула.
3. «Кая юлсан, каю шӑтать» текен ваттисен сӑмахне эсӗ мӗнле ӑнланатӑн?

## Эпӗ сехет ҫӗмӗрни.

Манӑн атте сехет тӳрлетме ӑстаччӗ. Сехет Хӗветӗрӗ тесен, ӑна таҫти ҫын та пӗлнӗ. Ӑна кура пӗчӗк чухне манӑн та сехет тӳрлетес килетчӗ. Анчах мана сехетсем тӳрлетме мар, вӗсен ҫумне сӗртӗнме те хушмастчӗҫ. Эпӗ ҫапах аслисем ҫук чухне тыткаласа пӑхаттӑм.

Пӗрре атте сехете салатса тӑкрӗ те хӑй таҫта тухса кайрӗ. Килте урӑх никам та ҫукчӗ. Мана ирӗк пулчӗ: мӑлатук илтӗм те сехет ураписене шаккама пуҫларӑм, анчах манӑн ҫапмассерен шӑлӗсем хуҫӑлаҫҫӗ. Ӗҫлесен-ӗҫлесен, чӳречерен пӑхрӑм та атте килнине курах кайрӑм. Эпӗ сехет ураписене часрах хутӑм та кӑмака ҫине улӑхса выртрӑм. Атте килчӗ, сехетсене тӳрлетме пуҫларӗ. Пӑхать: хӑш-хӑш урапин шӑлӗсем хуҫӑк. Унталла-кунталла пӑхкаларӗ — эпӗ кӑмака ҫинче выртнине курах кайрӗ.

— Ванюк, сехет урапи шăлёсене эсё хуçрăн-и?— ыйтрё атте.

— Çу-ук, эпё мар,— тунма тăрăшрăм эпё, аттерен хăраса.

— Епле эсё мар? Сансăр пуçне урăх никам та çукчё кунта. Эх, мён пек сиен кӳтён мана!— пăшăрханчё атте. Унтан мана вăл ятлама тытăнчё:— Мён тумаллине пёлместён пулсан, пырса ан çыпçăн!

*И. Яковлев.*

?

1. Ванюкăн ашшёне мёншён Сехет Хёветёрё тенё?
2. Ванюк мён тума ёмётленнё?
3. Ача мёнле йăнăш тунă?
4. Ашшё Ванюка мёнле ăс панă? Тупса вула.

### Ваттисен сăмахёсем.

Ăсти епле, ёçё çапла.
Ёç алă çумне çыпçăнмасть.
Тума пёлмен ёçе ан тытăн.

## Комбайнер пулатăп.

Çу кунё питё ырă,
çиçет вăл пин тёспе.
Пиçсе сарална тырă
чăн ылтăн тинёс пек.

Çёрле те, кăнтăрла та
хирте мотор кёрлет.
Куллен хире тухатăп
эп пиччепе пёрле.



Кĕçех типет те сывлăм,
комбайн тапранать.
— Штурвал умне тăр, шăллăм,—
пичче мана хушать.

Алла штурвал тытатăп —
пĕр ĕмĕт чĕрере:
«Комбайнерах пулатăп,
юлмастăп пиччерен».

*А. Ĕçхĕл.*

?

1. Çуллахи куна сăнлакан йĕркесене тупса вула.
2. Çуллахи кун «пин тĕспе çиçет» тенине мĕнле ăнла натăн?
3. Ача пиччĕшĕпе куллен ăçта тухать?
4. Вăл кам пуласшăн? Тупса вула.

## Ваттисен сӑмахӗсем.

Вӑйран кайиччен ӗҫлемесӗр вӑй-халлӑ пулаймӑн. Ӗҫ ҫӗклет, ӳркев ӳкерет.

## Маша мӗнле пысӑкланнӑ.

### I

Пӗчӗк Машӑн хӑвӑртрах ӳсес килет. Пысӑкрах курӑнас тесе, вӑл тем те туса пӑхать. Амӑшӗн пушмакне тӑхӑнать. Асламӑшӗн ҫӑм тутрине урта-урта ярать. Ҫӳҫне те аппӑшӗ пек тирпейлесе пӑхрӗ ӗнтӗ. Шӑрҫа ҫакса, аллине сехет ҫыхса та ҫӳрекелерӗ.

Нимӗн те пулӑшмасть. Пурте унран кулаҫҫӗ, шӳтлеҫҫӗ кӑна.

### II

Пӗррехинче Маша урай шӑлма шутларӗ. Питӗ тӑрӑшса шӑлчӗ. Амӑшӗ, ҫакна курсан, тӗлӗнсех кайрӗ:

— Маша, хӗрӗм. Чӑнах та эсӗ пысӑклантӑн пулас?

Тепрехинче вӑл тирӗксене тап-таса ҫурӗ те шӑлса лартрӗ. Ун чухне вара амӑшӗ кӑна мар, ашшӗ те тӗлӗнмеллипех тӗлӗнчӗ.

— Пирӗн Маша пысӑкланнине эпир сисмен те. Вӑл, авӑ, хӑех урай шӑлать, чашӑк-тирӗк ҫӑвать,— терӗ вӑл, сӗтел хушшинче пӗтӗм килйыш пуҫтарӑнсан.



## III

Халӗ пӗчӗк Машӑна пурте пысӑк теҫҫӗ. Маша та, малтанхи пекех пӗчӗк пушмак, кӗске кӗпе тӑхӑнса ҫӳрет пулин те, хӑйне пысӑк ҫын пек туять. Халӗ вӑл аппӑшӗн шӑрҫине те ҫакмасть, сехетне те ҫыхмасть. Ҫӳҫне те пӗчӗк хӗрачасем пек ҫивӗтлет.

Мӗнле пысӑк пулмаллине Маша пит аван ӑнланчӗ.

*Е. Пермяк.*

1. Машӑн мӗнле пулас килнӗ?
2. Пысӑк пуласшӑн вӑл мӗн-мӗн тунӑ?
3. Маша мӗнле майпа пысӑкланнӑ?
4. Сирӗн килте ҫакӑн пек тӗслӗхсем пулман-и? Ҫыхӑнуллӑ каласа пар.

## Вĕçевçĕсем.

(Юптару.)

Кăркка
хăпартланать,
лупас урлах
вĕçмешкĕн хăтланать:
— Халех,—тет вăл,—
халех!..
Анчах хăпартланни ун
ахалех.
— Санран пулать-и!—
тет Автан.—
Çатан çине те эс
ларса курман.
Манран вĕрен:
тем çӳллĕш каштана
вĕçсе çитетĕп
вăшт! кăна.
— Мухтанчăксем!—
тесе, вĕлт çеç
çӳлтен
вĕçсе иртет Чĕкеç.

*А. Кăлкан.*

?

1. Кăрккапа автан мĕнле мухтаннă? Тупса вула.
2. Кăрккапа автана вĕçевçĕсем теме пулать-и? Чĕкеç мĕнлерех вĕçет? Эсĕ чĕкеç вĕçнине курнă-и?
3. Кăрккапа Автан сăмахсене юптарура мĕншĕн пысăк саспаллирен пуçласа çырнă-ши? Кунта çынсен мĕнле çитменлĕхĕ çинчен ытарлă каланă?

# Мухтанчăк Çерçи.

(Юмах.)

Лупасайĕнчи кивĕ йăвара вĕсем виççĕн пурăннă: Çерçи Çерçиев, Çерçи Çерçиевна тата вĕсен ывăлĕ Çерçи. Пĕртен-пĕр ывăлне ашшĕпе амăшĕ урама та кăларма хăранă. Пĕчĕк Çерçи вĕсен хӳттинче савăнса пурăннă. Вăл кунĕпе те пĕр ĕç туман, мăнтăрлансах пынă.

Пĕррехинче, ашшĕпе амăшĕ ĕçе кайсан, Çерçи йăва çывăхĕнчи йывăç туратти çине тухса ларнă. Вăл килкартинчи çӳп-çап купи патĕнче чавалана-кан кӳршĕ çерçи чĕпписене тĕлĕнсе сăнанă.

— Чик-чирик, чик-чирик! — кăшкăрнă вăл. — Мĕн чаваланатăр унта?

— Чик-чирик, — хирĕç чĕннĕ лешсем, — апат шыратпăр, хырăм выçă пирĕн.

— Чир-чир-чир, — кулнă Çерçи вĕсенчен, — мĕн апачĕ пултăр унта? Сирĕн ман пата кĕрсе курасчĕ, мĕнлерех чаплă пурăнатăп эпĕ. Çавăн пек çĕрте чаваланмастăп... — мухтаннă Çерçи.

Лешсем пăр! вĕçсе хăпарнă та Çерçи йăвине кĕнĕ. Чăнах кунта тутлă апат-çимĕç тем чухлех пулнă.

— Акă ман пурнăç мĕнлерех, — савăннă Çерçи юлташĕсем умĕнче.

Пĕр хĕвеллĕ ир кӳршĕ çерçи чĕпписем килкартинчи арпа улăмĕ çинче чаваланнă. Сасартăк вĕсем турат çинче Çерçи макăрса ларнине асăрханă.

— Мĕн пулнă сана, мĕншĕн йĕретĕн?

— Чик-чик-чик,— тенӗ лешӗ ӗсӗклесе,— инкек пулчӗ, аттепе анне виҫӗ кун киле килмерӗҫ...

— Килӗҫ-ха, мӗн уншӑн йӗмелли... Атя унччен пирӗнпе пӗрле.

— Ҫиес килет манӑн.

— Ав ҫав купаран апат тупса ҫийӗпӗр.

— Мӗн апачӗ пултӑр унта, тата эпӗ мӗнле шырамаллине те пӗлместӗп.

Ҫерҫи чӗпписем айван Ҫерҫирен тӗлӗннӗ, ӑна апат тупма вӗрентнӗ. Лешӗ ӗҫе хӑнӑхаймасӑр аптранӑ, анчах хырӑм выҫҫи ӑна малаллах ӗҫлеме хистенӗ...

*Н. Иванов.*

1. Ҫерҫи хӑйӗн кӳршисене мӗнпе тӗлӗнтересшӗн пулнӑ? Тупса вула.
2. Пӗррехинче вӑл мӗншӗн йӗрсе ларнӑ?
3. Юлташӗсем ӑна мӗнле канаш панӑ?
4. Ҫерҫи мӗншӗн нимӗн тума та пӗлмен?
5. Сана юмахра мӗн килӗшрӗ?
6. Юмаха мӗншӗн «Мухтанчӑк Ҫерҫи» тесе ят панӑ?
7. Юмахӑн тӗп шухӑшне мӗнле ваттисен сӑмахӗпе палӑртма пулать?

## Тӗлӗнтермӗш курӑк.

Пӗррехинче икӗ хӗр хулана кайма тухнӑ. Иккӗшӗ те пысӑк карҫинккапа апат-ҫимӗҫ йӑтнӑ. Пӗр хӗрӗ ҫул тӑршшӗпех ахлата-ахлата утнӑ, нӑйкӑшнӑ, хӑйӗн йывӑр ҫӗклемне вӑрҫнӑ. Тепри кулкаласа пынӑ, шӳт тунӑ.

Лешӗ тӗлӗнерех ыйтнӑ:

— Епле эсӗ ҫав тери ҫӑмӑллӑн утатӑн? Санӑн ҫӗклемӳ йывӑртарах-ҫке, эсӗ ху та манран вӑйлах мар.

— Манӑн карҫинкҝара тӗлӗнтермӗш курӑк пур. Ҫавӑ ҫӗклеме ҫӑмӑллатать, чӑтӑмлӑх кӳрет. Санӑн ун йышши курӑк ҫук, ҫавӑнпа та чӑтӑмлӑх та ҫук,— куларах хуравланӑ ӑна тантӑшӗ.

— Мӗн ятлӑ ҫав тӗлӗнтермӗш курӑк? — ыйтнӑ йӑпӑлти хӗр тантӑшӗнчен.

— Санӑн мӗн ҫук, вӑл курӑк та ҫав ятлах. Чӑтӑмлӑх. Ҫав мана пур ҫӗрте те пулӑшса пырать.

*Г. Волков.*

1. Хӗрсем ҫӗклемӗсене мӗнле йӑтса пыни ҫинчен каласа пар.
2. Пӗрремӗш хӗрӗ мӗн пирки тӗлӗннӗ? Тупса вула.
3. Унӑн тантӑшӗ хӑйӗн ҫӗклемне мӗншӗн ҫӑмӑллӑн йӑтса пынӑ? Тупса вула.
4. Калаври мӗнле тӗлӗнтермӗш курӑка асӑннӑ? Ун пек курӑк пур-и?

## Кулачӑ.

Пӗр ачан питӗ кулачӑ ҫиесси килнӗ, тет. Ашшӗнчен пасара каймассерен кулачӑ илсе килме ыйтнӑ. Пӗрре пасар кунӗ ашшӗ ҫакна хутаҫа ҫӑкӑр чиктерет те кӑк кӑклама илсе каять.

— Акӑ, ачам, ҫак кӑксене кӑкла, ҫӑкӑрна пӗртте ан пӑх, вӑл хӑех кулачӑ пулса выртать,— тесе каларӗ те пасара тухса кайрӗ, тет.

Ача кăклать-кăклать те çăкăрне пырса пăхать, çăкăрĕ кулачĕ пулман, тет. Пăртак тăрсан татах пăхать, татах пулман. Каç та пулать. Ачан хырăмĕ тем пек выçса кайрĕ, тет. Касать те çăкăра тăвар сапса çиет. Çăкăр кулачăран та тутлă, тет.

— Çăкăр кулачă пулчĕ-и, ывăлăм? — ыйтрĕ, тет, ашшĕ, пасартан таврăнсан.

— Тĕсĕ кулачă тĕслĕ пулмарĕ те, тути кулачăран та аван, — тесе каларĕ, тет, ача.

— Çапла çав, ачам, ĕçлесе çисен, çăкăр та тутлă, тăрансан, пыл та йӳçĕ, — терĕ, тет, ашшĕ.

*И. Яковлев* букварĕнчен.

?
1. Ачан мĕн çиесси килнĕ?
2. Ашшĕ ăна ăçта илсе кайнă?
3. Ачана хура çăкăр мĕншĕн кулачран та тутлă туйăннă?
4. Ку калав мĕне вĕрентет? Тупса вула.

**Ваттисен сăмахĕ.**

Ĕç йывăр пулсан та, çиме тутлă.

## Нарспи.

Ирех тăрать, тумланать,
Нарспи ĕçе тытăнать:
е пурçăн çип илет те
юрла-юрла тĕр тăвать;

е çĕлеме ларать те,
çĕвви шăрçа пек пулать,



сӳс хӳреллӗ хурҫӑ йытӑ
пӗр кӗрет те пӗр тухать;

е пир тӗртме ларать те
вылянтарать ӑсине;
е хултӑрчӑ тытать те
ҫипне тиет ҫӗррине;

е сак ҫинчи кушакӗ
питне ҫӑва пуҫласан,
апат хатӗр хӑнашӑн
алли-ури ҫӑмӑлран...

*К. Иванов.*

? 1. Эсӗ «Нарспи» поэмӑн сыпӑкне вуларӑн. Ӑна эсӗ халиччен илтнӗ-и?

2. Нарспи мĕнле хĕр пулнă? Тупса вула.
3. Вăл ăста çĕлеме пĕлни ăçтан курăнать? Тупса вула.
4. Çак йĕркесене эсĕ мĕнле ăнланатăн?

Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă
пĕр кĕрет те пĕр тухать.

**Ваттисен сăмахĕ.**

Ĕçченĕн ĕçĕ ăнсах пырать.

## Амăшĕн ĕçĕ.

— Ну, Светлана, тумлан. Эпĕ ĕçленине курма каятпăр,— терĕ амăшĕ.

Вĕсем хула урамĕпе пычĕç. Метрона анчĕç те темиçе минутран хулан вĕçне çитрĕç. Амăшĕ Светланăна илемлĕ тимĕр хапхаран илсе кĕчĕ. Вĕсем анлă картишпе алăк патнелле утрĕç.

— Ку мĕнле çурт?— ыйтрĕ Светлана.

— Ку, хĕрĕм, эпĕ ĕçлекен фабрика,—хуравларĕ амăшĕ.

Цеха кĕрсен, Светлана тĕлĕнсех кайрĕ. Вăл кун пек кантăк тăраллă тем пысăкăш пӳлĕмсене нихăçан та курман. Пур çĕрте те машинăсем кĕрлесе лараççĕ. Акă амăшĕн станокĕ. Сасартăк Светлана вĕççĕр хăю пек тăсăлакан илемлĕ çитсă тăрăхне курах кайрĕ.

— Эпĕ çакăнта ĕçлетĕп,—илтĕнчĕ амăшĕн сасси.— Эпир çитсă тĕртетпĕр. Çав çитсăран сире валли илемлĕ кĕпесем çĕлеççĕ.



— Ку мĕн? — ыйтрĕ Светлана, станок çинчи пĕчĕк хĕрлĕ ялава курсан.

— Кун пек хĕрлĕ ялава лайăх ĕçлекен çынсене параççĕ. Пирĕн цехра пурте аван ĕçлеççĕ, — ăнлантарчĕ амăшĕ.

Светлана пăхрĕ те ытти станоксем çинче те пĕчĕк хĕрлĕ ялавсем пуррине асăрхарĕ.

— Манăн та çавăн пек ялав, машина пултăрччĕ, — ĕмĕтленчĕ хĕрача.

Вĕсем цех тăрăх чылай курса çӳрерĕç.

*С. Баруздин.*

?

1. Амăшĕ Светланăна ăçта илсе кайнă?
2. Светлана унта мĕн курнă?
3. Унăн амăшне мĕншĕн хĕрлĕ ялав панă? Тупса вула.
4. Ӳссен Светлана кам пуласшăн?

## Ваттисен сăмахĕсем.

Çынна сăмахĕпе мар, ĕçĕпе хаклаççĕ.
Ĕç çынна мухтава кăларать.

## Ӳссен эсĕ кам пулан!

Эпĕ ыйтрăм Лĕньăран:
«Ӳссен эсĕ кам пулан?»
Лĕня: «Лĕтчик пулăп,—тет.—
Самолĕтпа вĕçĕп»,—тет.

Эпĕ ыйтрăм Тольăран:
«Ӳссен эсĕ кам пулан?»
Толя: «Тухтăр пулăп,—тет.—
Çын чирлесен — чĕртĕп»,— тет.

*В. Давыдов-Анатри.*

?
1. Лĕньăпа Толя ӳссен кам пуласшăн?
2. Хăвăн кам пулас килни çинчен каласа пар.

## Маттур ачасем.

Нумай пулмасть колхоз Марье аппана пĕр машина вутă леçсе пачĕ.

— Кун чухлĕ вутта мĕнле татса пĕтерес? Никам та килсе пулăшас çук,— пăшăрханчĕ Марье аппа.

Коля Семĕнов Марье аппа тĕлĕнчен кашни кунах иртсе çӳрет. Пĕр уйăх иртет, вутă купи çаплах выртать. Тепĕр чух кĕрхи çумăр чашлаттарса çăвать.



Коля, юлташĕсене пухса, Тимур команди йĕркелерĕ.

Çав кунах ачасем Марье аппана пулăшма килсе çитрĕç. Вĕсене курсан, кил хуçин пит-куçĕ те çуталчĕ.

Ачасем хĕрсех ĕçе пикенчĕç: пĕрисем татаççĕ, теприсем çураççĕ, виççĕмĕшĕсем çурнă вутта майласа купалаççĕ.

Ĕç вĕçленнине те сисмерĕç ачасем. Пĕр машина вутта татса купаласа та хучĕç.

Марье аппа пурне те пӳрте кĕртсе чей ĕçтерчĕ.

— Тавтапуç сире, маттур ачасем, эсир чăн-чăн тимуровецсем. Яланах çапла ĕçчен те ырă чунлă пулăр. Ырă йывăç усал çимĕç кӳни çук,— тесе ăсатса ячĕ вăл ачасене.

*С. Пыркина.*

?

1. Марье аппа мĕншĕн пăшăрханнă?
2. Ăна камсем пулăшнă?
3. Марье аппа ачасене мĕнле тав тунă? Тупса вула.
4. Калавра ваттисен сăмахне туп. Эсĕ ăна мĕнле ăнланатăн?

## Мĕн шăрши!

Петĕр ыйтрĕ ашшĕнчен:
— Мĕн шăрши кĕрет ĕçрен?
Ашшĕ пĕчĕк Петĕре
каламарĕ-ха тӳрех.
Пĕринче вара ирех
чĕнчĕ анлă уй-хире.
Трактор ларкăчĕ çинче
Петĕр пычĕ чылайччен.
Курчĕ ашшĕн ĕç-хĕлне,
хирĕн анлăш-тăршшĕне.



Хурçă саслă урхамах
шутламасть пĕртте канма:
пăхăнса ĕçчен алла
сухалать те сухалать.
Кăнтăрла Хветле аппа
уя тухрĕ апатпа.

Пирĕн ыванна ача
килĕштерчĕ кулача.
Ашшĕ ыйтрĕ Петĕртен:
— Мĕн шăрши кĕрет ĕçрен?
Вĕлт! вылянчĕ куç харши:
— Мĕн шăрши? Кулач шăрши!

*Ю. Семёнов.*

?

1. Эсĕ трактор çине ларса курнă-и?
2. Эсĕ аçу-аннӳпе пĕрле мĕнле ĕçсем тунă çĕре хутшăнатăн?
3. Эсĕ Петĕр ответне мĕнле ăнлантаратăн?

**Пĕтĕмĕшле ыйтусемпе ĕçсем.**

1. Эсĕ ачасен тата çитĕннисен ĕçĕсем çинчен мĕнле сăвăсемпе калавсем вуларăн?
2. Вĕсенчен хăшĕ сана уйрăмах килĕшрĕ? Мĕншĕн?
3. Килĕшекен калав (сăвă) тăрăх ӳкерчĕк ту.
4. Ĕç çинчен калакан ваттисен сăмахĕсене аса ил.
5. Хăвна килĕшнĕ сăвва пăхмасăр калама вĕрен.



## Çĕнĕ юр.

Хĕл Мучийĕ килсе çитрĕ
инçетрен, пăр çĕрĕнчен.
Кăпăшка юрпа вăл витрĕ
тавра кĕр сисиччен.

Шурă çĕлĕк тăхăнтарнăн
курăнаççĕ юпасем.
Эрешленнĕ, капăрланнă
таврари пур йывăçсем.

*Р. Сарпи.*

1. Хĕл çитнине автор мĕнле сăнлать? Тупса вула.
2. Хĕл çитсен, тавралăх мĕнле улшăнать?

## Хӗл Мучи патӗнче хӑнара.

Машук ҫывӑрса кайнӑ та тӗлӗнмелле тӗлӗк курса выртать.

Вӑл чӑтлӑх вӑрманпа пырать пек. Пӑхать: ун умӗнче ватӑ ҫын — Хӗл Мучи ларать, ҫӳҫӗ кӑн-кӑвак. Вӑл пӗр тенкел ҫинче юр чӑмӑрккисем ҫисе ларать: пуҫӗпе сулать те — ҫӳҫӗ ҫинчен пас тӑкӑнать; вӗрсе илет те — ҫӑварӗнчен ҫӑра пӑс кӑларать.

— Э, — терӗ вӑл, — сывӑ-и, хӗрӗм?! Хӑнана килнӗшӗн тавтапуҫ. Мана пулӑшӑн. Манӑн, старикӗн, канма та вӑхӑт. Кил-ха, вырӑн хатӗрле.

Хӗл Мучи Машука хӑй пӳртне чӗнсе кӗртрӗ пек. Унӑн ҫурчӗ пӗтӗмпех пӑртан тунӑскер. Пӳртре тӳшек вырӑнне кӑпӑш юр выртать. Старике ҫывӑрма ҫемҫерех пултӑр тесе, Машук юра кӑпкалатма тытӑнчӗ. Унӑн аллисем кӳтсе, пӳрнисем хӗрелсе кайрӗҫ.

— Аптрамасть, — тет Хӗл Мучи, — сывлӑхшӑн лайӑх ку. Пӑх-ха, манӑн мӗнле мыскара пур. — Хӗл Мучи хӑйӗн тӳшекӗпе утиялне ҫӗклерӗ те, Машук тӳшек айӗнче симӗс курӑк шӑтса тухнине курах кайрӗ.

— Эсӗ мӗншӗн симӗс курӑка юр айӗнче усратӑн, ӑна кун ҫути кӑтартмастӑн? — ыйтрӗ вӑл Хӗл Мучирен.

— Вӑхӑт ҫитмен-ха, курӑк вӑй илеймен. Курӑк хӑвӑрт ӳснӗ пулсан, ӑна хӗл шӑнтса пӑрахнӑ пулӗччӗ. Вара вӑл ҫӑва тухнӑ ҫӗре пӗтетчӗ. Ҫавӑнпа

эпĕ çамрăк калчана юр тӳшекпе витсе хутăм. Çуркунне çитсен, юр тӳшек ирĕлсе кайĕ те калча кун çутине тухĕ. Унтан вара пучах кăларĕ, ыраш пулĕ. Ахальтен мар юр хулăн выртсан, тырă ăнса пулать теççĕ.

Çав самантра Машук вăранса кайрĕ.

*В. Одоевский.*

1. Машук тĕлĕкре кама курнă?
2. Хĕл Мучи ăна мĕнле кĕтсе илнĕ? Тупса вула.
3. Унăн пӳртĕнче Машук мĕн курнă?
4. Юр тӳшек айĕнче Хĕл Мучи мĕн упранă?
5. Юр мĕнле усă кӳрет?

## Хурăн.

Шурă хурăн манăн
кантăк умĕнче,
кĕмĕл юр пĕркенчĕк
унăн тумĕнче.

Мамăк витнĕ тейĕн
туратсем çине,
ĕнчĕ хăю тытнă
унăн çӳçине.

Тĕлĕрет шур хурăн
лăпкă çут ирпе,
юр пĕрчи çунать, ав,
ылтăн çутипе.

Шурăмпуç ӳркевлĕн
тĕрĕ хатĕрлет.
Çĕнĕ кĕмĕлпе вăл
хурăна тĕрлет.

*С. Есенин.*

(А. Артемьев куçарнă.)

1. Хурăн тумне мĕнпе танлаштарнă? Мĕншĕн?
2. «Ĕнчĕ хăю тытнă унăн çӳçине» тенине мĕнле ăнланатăн?
3. Çак сăвă тăрăх мĕнле ӳкерчĕк тунă пулăттăн?
4. Сăвăра япала паллине пĕлтерекен сăмахсене туп. Вĕсем хăш япала ячĕсене ăнлантараççĕ?

# Пăрпа юр.

## I

Йěпе-сапа кěр иртрě. Шартлама сивě, юрлă, çил-тăманлă хěл çитрě. Çырмари юханшыв хулăн пăрпа, хирсемпе çарансем, вăрмансемпе ращасем шап-шурă юрпа витěнчěç. Мěнрен пулаççě-ха пăрпа юр?

Сывлăшра яланах шыв пăсě пур. Çанталăк сивěтсен, çав пăсран юр пěрчисем пулаççě. Сивě çанталăкра шывран пăр пулать.

Пăр, кěленче пек, витěр курăнать. Çӳхе пăрăн тěсě çук. Хулăн пăр симěсрех е сенкертерех тěслě курăнать.

Пăр шывра путмасть, вăл шывран çăмăлрах. Çуркунне пăр кайнă чухне шывра пăр катăкěсем çиелте ишсе пыраççě.

Хěлле пăр çинче конькипе ярăнма аван. Вăл яка. Пăр катăкне мăлатукпа çапсан, вăл вакланса тěпренет.

Хěл вěçěнче нӳхрепсене пăр хураççě. Унта вăл çăвěпех упранма пултарать. Ăшăра пăсăлакан çимěçсене: аша, пулла, сěте, çăва çулла пăр çинче усраççě.

Ăшăра пăр ирěлет те шыв пулать.

1. Пăр çинчен калакан ыйтусене тупса вула.
2. Пăрпа çынсем мěнле усă кураççě?
3. Пăр мěншěн шывра путмасть?
4. Хулăн пăр мěн тěслě курăнать?

## II

Юр, çумăр пекех, шыв пăсĕнчен пулать. Сивĕре шыв пăсĕнчен пулнă вĕтĕ-вĕтĕ пăр пĕрчисем шăнса ӳссе пыраççĕ те эрешлĕ юр пĕрчисем пулаççĕ. Вĕсем ытларах çăлтăр евĕрлĕ.

Тин çунă юр кăпăш. Ун çийĕн утма йывăр. Ура юр ăшне тарăн путать.

Сивĕ çанталăкра юр кĕрпеклĕ, ăшă çанталăкра вăл нӳрленет тата çыпçăнать.

Сивĕ, çиллĕ çанталăкра юр пĕрчисене çил вĕçтерет. Çуртсем, хӳмесем çумĕнче, вăрман хĕрринче, хӳтĕ вырăнсенче юр пĕрчисем чарăнаççĕ. Кунта кĕрт хĕвсе каять.

Хĕлле юр уй-хирти калчана шăнасран лайăх упрать. Çуркунне ирĕлет те шыв пулать. Юр шывĕ çĕре сăрхăнса кĕрет. Нӳрлĕ çĕрте ӳсентăрансем лайăх ешереççĕ.

*В. Ефимов* çырни тăрăх.

1. Шыв пăсĕнчен юр мĕнле пулнине каласа пар.
2. Юр хăçан кĕлетке тума аван?
3. Мĕншĕн вăрманта, çырма-çатрара, çурт-йĕр таврашĕнче юр нумай?
4. Ӳсентăрансене юр мĕнле усă кӳрет?

### Тупмалли юмахсем.

Алăсăр, урасăр кĕпер хывать.
Пĕр пĕркенчĕк пĕтĕм çĕре хупласа илнĕ.
Шывра çуралать, шывран хăрать.

## Ҫӗнӗ ҫул.

Хире те юр шуратнӑ,
садра та шурӑ юр.
Пӳртре ҫеҫ лӑс туратлӑ
сип-симӗс чӑрӑш пур.

Ҫак пӗчӗк чӑрӑш пирӗн
хитре ҫу кунӗнче
шӑп ларнӑ каҫӑн-ирӗн
ик хурӑн хушшинче.

Ак ҫитнӗ тӑнӑ сивӗ,
ҫаралнӑ йывӑҫсем.
«Сив ҫил сана та тивӗ»,—
хӗрхеннӗ хурӑнсем.

Ҫук, Хӗл Мучийӗ тивмӗ
ҫап-ҫамрӑк чӑрӑша,
ӑна вӑл илсе килнӗ
пире халь юлташа.

Ытарайми пӑхатпӑр
эпир ӑна кунта.
Епле иккен пит капӑр
ҫипуҫӗ Ҫӗн ҫулта.

*А. Алка.*

1. Сӑвӑра хӗле сӑнлакан йӗркесене туп.
2. Чӑрӑш ҫинчен мӗн каланӑ?
3. Ачасем ӑҫта пуҫтарӑннӑ?

4. Çĕнĕ çула вĕсем мĕнле кĕтсе илнĕ?
5. Хăвăр Çĕнĕ çула мĕнле кĕтсе илни çинчен каласа пар.

### Тупмалли юмахсем.

Хĕлле те, çулла та пĕр тумпа.
Хĕлĕн-çăвĕн юсанĕ, çийĕнчи тумтирне пăрахмĕ.

## Сокольникири ёлка.

Чăрăша теттесемпе илемлетнĕ ĕнтĕ. Теттисене ачасем хăйсем тунă. Кунта упасем те, куянсем те, слонсем те пулнă. Пуринчен те илемли — Хĕл Мучи. Вăл чăрăш тăрринче ларнă.

Ачасем Владимир Ильич Ленина кĕтнĕ.

Каç та пулнă. Тулта çил уласа вĕрнĕ, чӳрече кантăкĕсем çумне типĕ юр пĕрчисем хыттăн пырса çапăннă. Çак шавра шкул патне машина çитсе чарăннине никам та сисмен. Машинăран Владимир Ильич тухнă.

Картлашка тăрăх вăл çӳлелле хăпарнă, хывăннă. Унтан ачасем патне пысăк пӳлĕме кĕнĕ.

Ачасем ăна тӳрех палласа илнĕ: Ленин сăнне вĕсем темиçе хутчен те курнă-çке! Анчах малтан темшĕн вĕсем аптраса ӳкнĕ — пĕри те вырăнтан хускалман. Ленин çине тинкерсе пăхнă.

Владимир Ильич нумай кĕтсе тăман. Куçĕсене чеен хĕссе илнĕ те:

— Сирĕнтен кам кушакпа шăшилле выляма пĕлет? — интересленнĕ вăл.

Пуринчен малтан Вера хуравланă:

— Эпĕ!

— Эпĕ те! — кăшкăрса янă Леша ятлă ача.

— Апла пулсан, эсĕ кушак пулатăн, — тенĕ ăна Владимир Ильич.

Пĕчĕк Катьăна шăши тунă. Ачасем, аллааллăн тытăнса, чăрăш тавра çаврăнма пуçланă. Леша Катьăна хăвалама тытăннă. Вăл ăна, паллах, çăмăллăнах тытма пултарнă. Анчах Катя Ленин патне чупса пынă. Владимир Ильич ăна çӳлелле çĕкленĕ те:

— Кушак шăши патне çитеймест! — тенĕ.

Унтан шăши Сеня пулнă. Леша ăна хăваланă. Ачасем чылай вăхăт вылянă.

Сасартăк алăк уçăлса кайнă та пӳлĕме пысăк кăвак слон пырса кĕнĕ. Ачасем пурте харăсах кăшкăрса янă. Вĕсенчен нумайăшĕ шкулти рояль çивиттине çийĕнчех уйăрса илнĕ. Анчах айĕнче кам-ши? Слонăн малти урисем çăматăпа, кайрисем пушмакпа пулнă, малта вăрăм хобот. Слон чăрăш тавра çаврăннă, ачасемпе сывпуллашса, хобочĕпе сулса илнĕ те енчен енне тайкаланса алăк патнелле утса кайнă. Алăк хыçĕнче çивитти айĕнчен монтёрпа шкул хуралçи тухнă. Пӳлĕмри ачасем вара ахăлтатсах кулнă.

Çак каçхине савăнмалли татах та нумай пулнă. Владимир Ильич ачасемпе куç хупмалла та вылянă.

Унтан пĕчĕк Катя Пушкин çырнă сăвва калама пуçланă, анчах хăшпĕр йĕркисене манса кайнипе макăрса янă. Ленин ăна лăплантарма тă-

рăшнă. Катя макăрма чарăннă, куççульне тутрипе шăлса илнĕ те:

— Ленин, эсĕ кунтан ан кай. Кунтах пурăн,— тенĕ.

Çак вăхăтра Надежда Константиновна Крупская тата Владимир Ильич йăмăкĕ Мария Ильинична пӳлĕме кучченеçсем тултарнă пысăк карçинкка йăтса кĕнĕ. Кучченеçсене ачасем валли Владимир Ильич Ленин ятарласа илсе килнĕ пулнă.

Ачасенчен пĕрне автомобиль, теприне труба, виççĕмĕшне параппан панă, Катьăна вара пукане тивнĕ.

Ленин ĕçе васканă. Вăл ачасем шавланă хушăра никама систермесĕр пӳлĕмрен тухнă та машина çине ларса кайнă.

*А. Кононов.*

1. Ачасем Çĕнĕ çула кĕтсе илме мĕнле хатĕрленнĕ?
2. В. И. Ленин Сокольникири ёлкăна килни çинчен калакан вырăна тупса вула.
3. Ачасем ăна мĕнле кĕтсе илнĕ?
4. Владимир Ильич уявра выляни çинчен каласа пар.
5. Ленин ачасене юратни мĕнрен курăнать?

## Хĕл çитсен.

Васкаса кĕр кунĕ иртрĕ,
çулçă пĕтрĕ тăкăнса.
Сисĕнмесĕр хĕл те çитрĕ,
шурă шупăр тăхăнса.



Çырмасем те,
кӳлĕсем те
пăрпа витĕнчĕç каллех:
коньки хатĕр, сыр-ха йĕлтĕр...
Ярăнма каяр халех.

Вĕренмешкĕн те,
канма та
пултаратпăр вăхăтра.
Çитĕнсе-ӳссе пыратпăр
хамăр савнă çĕршывра.

*И. Малкай.*

?
1. Хĕл çитнине автор мĕнле сăнланă?
2. «Шурă шупăр тăхăнса» тенине эсĕ мĕнле ăнланатăн?
3. Эсĕ хĕлле пушă вăхăта мĕнле ирттеретĕн?
4. Хĕл çинчен калакан тата мĕнле сăвă е юрă пĕлетĕн?



Ӳкерчӗке сӑна, ыйтусене хуравла, ҫыхӑнуллӑ калав ту. Калава ят пар.

?

1. Ку хӑҫан пулнӑ?
2. Ачасем мӗн тунӑ?
3. Вӗсем сырӑша[1] ӑҫта вырнаҫтарнӑ?
4. Сырӑш ҫине мӗн хурса панӑ?
5. Эсир вӗҫен кайӑксене мӗнле пулӑшатӑр?

---

[1] Сырӑш—кайӑксем лармалли, вӗсене апат ҫитермелли вырӑн.

## Шурă кăвакарчăн.

Пĕррехинче эпĕ хамăр пахчара шурă кăвакарчăн тупрăм. Вăл мана ытла мĕскĕннĕн курăнчĕ: хăрах çунатне уснă, курăк ăшĕнче хурлăхлăн лăпчăнса ларать. Мана курсанах çĕкленчĕ те тарасшăн пулчĕ. Эпĕ ăна пӳрте илсе кĕтĕм.

Кăвакарчăнĕ çамрăкчĕ. Вăл хăй тĕллĕн вĕçме те хальтерех вĕренетчĕ пуль, анчах унăн хăрах çуначĕ аманнăччĕ. Эпĕ ăна хĕрхентĕм, пăхма тытăнтăм. Аманнă çунатне эмел сĕрсе тутăрпа çыхрăм. Хăйне ир те, каç та тырă сапса параттăм, шыв ĕçтереттĕм.

Часах кăвакарчăн вăй иле пуçларĕ, алла иленчĕ, сывалчĕ. Çыхнă тутăра салтсан та, унăн çуначĕ усăнса тăми пулчĕ. Вĕçме хăй çаплах пултараймастчĕ-ха.

Çу кунĕ çитнĕ çĕрелле кăвакарчăн пысăкланчĕ, тĕкĕ тикĕсленчĕ, шурăрах курăнакан пулчĕ. Эпĕ ăна уçă кантăкран урама кăлараттăм та, кăштах вĕçсе çӳресен, хăех таврăнатчĕ.

Атте кăвакарчăн валли кĕлет пуçĕнче сырăш майлаштарса пачĕ. Сырăш умне кĕпер пекки турĕ. Эпĕ кăвакарчăна çавăнта куçартăм. Кашни кунах ăна вĕçтерсе яраттăм. Кăвакарчăн вĕçсе килсе кĕпер çине ларатчĕ, пĕсехине каçăртса, хаваслăн кăлтăртатса çӳретчĕ.

Пĕррехинче эпĕ кăвакарчăна хире илсе тухрăм та вĕçтерсе ятăм. Вăл, çунат çапса, çӳле-çӳле вĕçсе хăпарчĕ, курăнмиех пулчĕ. Темĕн чухлĕ кĕтсен те, кăвакарчăн каялла киле таврăнмарĕ.

Хам сыватнă кайăк вĕçсе кайнăшăн эпĕ чунтан пăшăрхантăм.

— Ан кулян,—лăплантарчĕ мана атте.—Куккусен кăвакарчăн нумай, пĕрне илсе килĕпĕр.

Куккасен кăвакарчăн пуррине пĕлетĕп-ха, анчах вĕсене эпĕ пăхса ӳстермен-çке. Эпĕ çаплах пăшăрханма чарăнмарăм.



Пĕр ирхине атте мана ыйхăран вăратрĕ те:

— Тухса пăх-ха кăвакарчăнусене, иккĕн ларасçĕ,— терĕ.

Эпĕ питĕ тĕлĕнтĕм. Атте куккасем патне кайманччĕ-çке, ăçтан илсе килнĕ вара вăл вĕсене? Хăвăртрах вырăн çинчен сиксе тăтăм та картишне чупса тухрăм.

Хамăн кăвакарчăнах вĕçсе килнĕ иккен. Эпĕ ăна пĕрре пăхсах палласа илтĕм. Анчах вăл пĕччен мар, хăйпе пĕрле тепĕр кăвакарчăн ертсе килнĕ.

Кăвакарчăнсем иккĕшĕ те кĕлет пуçĕнче килĕштерсе пурăнма тытăнчĕç.

*Илпек Микулайĕ.*

1. Ача кăвакарчăна ăçта тупнă?
2. Кăвакарчăн мĕншĕн вĕçеймен?
3. Ача ăна мĕнле сыватнă?

4. Кӑвакарчӑна вӑл ӑҫта усранӑ?
5. Сирӗн кил таврашӗнче мӗнле кайӑксем пурӑнаҫҫӗ?
6. Вӗҫен кайӑксемшӗн хӑвӑр мӗнле тӑрӑшни ҫинчен каласа пар.

## Чӗкеҫсем мӗншӗн сивӗннӗ!

### I

Петӗр саккӑрта кӑна-ха. Вӑл вӗҫен кайӑксене юрататъ.

Кӑҫал вӗсен сарайне чӗкеҫсем иленчӗҫ.

«Атте чӗкеҫсем валли йӑва туман-ҫке. Ӑҫта пурӑнаҫҫӗ вӗсем?» — час-часах шухӑшласа ҫӳрерӗ Петӗр.

Кун хыҫҫӑн кун иртрӗ. Пӗррехинче Петӗр вите тӑррине чӑх ҫӑмарти илме улӑхса кайрӗ. Ҫак вӑхӑтра чӗкеҫсем чӗвӗлтетсе вӗҫме пуҫларӗҫ. Петӗр ҫӳлелле пӑхрӗ те кашта ҫумӗнче хуп-хура чӑмӑрккa курах кайрӗ.

Унта тӑмпа хӗлӗхсенчен ҫурма ҫаврака евӗрлӗ япала туса лартнӑ. Хӑй ҫирӗп, уйрӑлмасть те. Шал енчен ҫемҫе тӗксем хунӑ. Тӗксем ҫинче пӗчӗк ҫӑмартасем.

— Чӗкеҫ йӑви. Авӑ ӑҫта пурӑнаҫҫӗ иккен вӗсем. Тивес мар, — тесе, Петӗр карттусне илчӗ те пусма тӑрӑх анчӗ. — Кун ҫинчен Ванюка каласа памалла!..

Вӑл тантӑшне хавхалансах чӗкеҫ йӑви ҫинчен каласа пачӗ. Ванюк та чӗкеҫсем ҫинчен пӗлмест иккен.

## II

Пĕр тăхтаса тăмасăр чупрĕç вĕсем Петĕрсен килне. Ачасем çитсен, чĕкеçсем каллех шăв-шав çĕклерĕç.

— Юратмаççĕ пулас вĕсем пире, авă епле тарăхаççĕ,— терĕ Ванюк.

— Пулăшар-и чĕкеçсене? Вĕсем вара пире тав тăвĕç,— терĕ Петĕр, хăлаçланса.

— Мĕнле?

— Чĕкеç пусма ларать пулас. Йăвана тĕксем пухар, ăна ларма çемçерех пултăр.

— Ну, ăслă та-çке эсĕ, Петĕр.

Икĕ юлташ васкасах çемçе тĕксем пухма тытăнчĕç. Ачасем асăрханса ĕçлерĕç. Чĕкеç йăваран вĕçсе кайсан кăна унта тĕксем хучĕç. Акă кĕçех чĕкеç çăмартисем тĕкпе витĕнчĕç.

Тепĕр кунне ачасем каллех йăва патне хăпарчĕç. Йăвара чĕкеç те, çăмартисем те çук.

Ку ачасене шутсăр тĕлĕнтерчĕ. Анчах сăлтавне пĕлеймерĕç.

Ашшĕ утартан таврăнсан, Петĕр ăна тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ.

— Чĕкеçсем çерçисем пек мар, вĕсен йăвине кам та пулин пырса тĕкĕнсенех сивĕнеççĕ. Эсир те çаплах сивĕтнĕ вĕсене,— терĕ ашшĕ Петĕр каланине итленĕ хыççăн.

*Г. Луч.*

1. Петĕр мĕне кура шухăша ернĕ?
2. Чĕкеçсем йăвине ăçта тунă?

3. Тантăшсем чĕкеçсене мĕнле пулăшма шухăшланă? Тупса вула.
4. Тепĕр кунне Петĕре мĕн хумхантарнă? Тупса вула.
5. Чĕкеçсем мĕншĕн йăваран сивĕннĕ?
6. Чĕкеç çинчен ху мĕн пĕлнине каласа пар.

**Пăтраштарнă плана майлаштар:**

Чĕкеçсем йăваран сивĕннĕ.
Чĕкеçсем Петĕрсен сарайне иленнĕ.
Ачасем кайăксене пулăшма шут тытнă.

## Кӳлĕ хĕрринче.

Çуллахи вăхăтра эпĕ хамăр ял вĕçĕнчи кӳлĕ патне çӳреме юрататтăм.

Кӳлĕ хĕррипе сип-симĕс хăях, çӳллĕ хăмăш, тĕрлĕрен чечек ӳсет. Тăп-тăрă шывра пулăсем ишсе çӳрени курăнать. Мĕн тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк çук пуль çак кӳлĕ таврашĕнче!

Пĕррехинче эпĕ алла кĕнеке тытрăм та кӳлĕ хĕррине кайса лартăм. Ларсан-ларсан, манран инçех те мар темскер шывра чăмпăлтаттарни илтĕнсе кайрĕ. Пăхатăп: хăмăшсем хушшинчен икĕ кайăк кăвакал чĕппи ишсе тухрĕ. Хăйсем пĕр-пĕринпе çав тери килĕшӳллĕ чĕвĕлтетсе пыраççĕ.

Эпĕ хускалмасăр пăхса ларатăп. Вĕсем, мана асăрхарĕç пулин те, вĕçсе тарма шутламарĕç, кăшт кăна аяккарах пăрăнчĕç. Сасартăк çывăхрах пăшал сасси кĕрĕслетрĕ. Кайăк кăвакал чĕпписем карр! кăна çĕкленсе вĕçсе кайрĕç.

Çаврăнса пăхатăп — хыçра пăшал тытнă Йăкăнат тăра парать. Йăкăнат тытма юраман чĕрчунсене пере-пере ӳкерет тенине илтнĕччĕ. Вăл кăвакал чĕпписене тивертеймерĕ. Эпĕ куншăн питĕ хĕпĕртерĕм.

Эпĕ кӳлĕ хĕрринче кунĕпех çӳрерĕм. Каçалапа чĕпĕсем каллех вĕçсе килчĕç, анчах ман çывăха урăх пымарĕç. Мана курчĕç те вĕçсе тарчĕç.

Пĕрре пăшалпа персе хăратнă вĕçен кайăк çынран шикленме пуçлать, унран хăракан пулать.

*Г. Харлампьев.*

?

1. Ача ăçта çӳреме юратнă?
2. Кӳлĕ çинчен калакан вырăна тупса вула.
3. Пĕррехинче ача кӳлĕ хĕрринче мĕн сăнанă?
4. Калавра сана кам килĕшрĕ? Мĕншĕн?
5. Калава эпĕ сăмаха пĕр-пĕр ятпа улăштарса вула. Тата мĕнле сăмахсене улăштарма тиврĕ?

## Тăри.

Çăмăллăн çĕкленчĕ
тӳпене тăри.
Уççăн кĕвĕленчĕ
кăмăллă юрри:

— Çитрĕ ĕнтĕ, çитрĕ
ăшă çуркунне,
хăвăрт илемлетрĕ
уй-хирсен тумне.—

Ахаль мар калаççĕ
аттесем килте:
калчасем илемлĕ —
савăнăç хирте.

*И. Малкай.*

1. Тăри мĕншĕн савăнать?
2. Çуркунне уй-хирсен тумĕ мĕнле улшăнать?
3. Сăвва пăхмасăр калама вĕрен.

## Пăчăр чĕппи.

Пĕррехинче эпĕ карçинкка илтĕм те кăмпа татма вăрмана тухса утрăм. Тăманкка та пĕрлех пычĕ.

Вăрмана та çитменччĕ-ха, сасартăк йытă пĕр чăрăш айĕнче пĕтĕрĕнме тытăнчĕ. Унччен те пулмарĕ, çывăхрах темĕнле кайăк çуначĕсемпе çатлаттарни илтĕнсе кайрĕ.

Тĕмĕ хыçне пăхрăм. Унта чăх евĕрлĕ пĕр тĕлĕнмелле кайăк хыпăнса кускаланине курах кайрăм. Утнă май текех пирĕн çине пăхать. Чăпарскер хăй, урисем тĕклĕ, пуçĕ хура тĕпеклĕ.

Сасартăк хайхи чăх çĕр тăрăх шума пуçларĕ. Унтан тăчĕ те, мăйне каçăртса, çуначĕсене çатăлтаттарса илчĕ. Пĕтĕм тĕкне вирелле тăратса, аяккалла сиккелесе кайрĕ.

Чееленет ĕнтĕ, йытта хăйĕн чĕпписенчен пăрса ярасшăн.

Йытă, ăна-кăна чухлайманскер, пăчăра курсанах, ун хыççăн тапса сикрĕ.

Пăчăр ăна аякка-аякка астарса кайрĕ. Кайсан-кайсан, хайхи йывăç çине вĕçсе ларчĕ пулас. Йытă пĕр вырăнта вĕрсе тăни илтĕнчĕ.

Çав вăхăтра эпĕ çĕр çинче выртакан чăрăш туратне сирсе пăхрăм. Çинçешке туналлă шăна

кăмпи айĕнче пăчăр чĕппи пăчăрăнса ларать. Куçне хупсах лартнă хăй, мĕскĕн.

Ав, епле иккен вăл! Чăн-чăн чăх чĕппи пек. Кăшт çеç пĕчĕкрех. Кĕлетки вара пĕтĕмпех йăрăмлă та пăнчă-пăнчă тĕрĕллĕ. Ку вара вĕсене пытанма пулăшать.

Мамăк тĕкĕсем те ылмашăнсах пĕтеймен-ха хăйĕн, анчах çуначĕсем çинче чипер тĕксемех. Апла-тăк вĕçет ĕнтĕ вăл.

Эпĕ ăна алла илтĕм те кăштах ывăтрăм. Вăл тин вĕçсе кайрĕ. Пĕр пилĕк утăм пек вĕçрĕ те çĕр çине ларчĕ. Ларнă-ларманах куçран çухалчĕ. Те пĕр-пĕр лакăма пытанчĕ вăл, те çĕр çумне кăна лăпчăнчĕ. Çапах та питĕ хăвăрт çухалчĕ вăл куçран.

Тĕлĕнмелле хăвăрт, ăста пытанаççĕ çав пăчăр чĕпписем.

Авă, Тăманкка та таврăнчĕ. Ывăнсах çитнĕ хăй, хашкать кăна. Айванскере пăчăр тем хушă улталаса çӳренĕ. Выртнă-вырманах çывăрса кайрĕ.

Нумай иртрĕ-и вăхăт, сахал-и, таçтан хайхи пăчăр каллех шăвăнса çитрĕ. Пăчăр чĕпписем вара лакăм-тĕкĕмсенчен, çулçă айĕнчен сике-сике тухрĕç те амăшĕ хыççăн чупрĕç.

Эпĕ те ыйхăран вăраннă йытта ку вырăнтан илсе кайрăм.

*Е. Чарушин.*

1. Пăчăр мĕнлерех кайăк? Ăна сăнланă вырăна туп.
2. Пăчăр мĕншĕн хăйне аманнă пек кăтартнă?

3. Пăчăр чĕпписем мĕне пула хăвăрт та ăста пытанма пултараççĕ?

4. Вулани тăрăх пăчăр чĕппи çинчен кĕске калав çыр.

## Çĕвĕç.

Çур енне кайсан куян
чупрĕ тухрĕ вăрмантан.
Çитрĕ те уй хĕррине
чалăштарчĕ тутине.
Паллă: пысăк ун хуйхи —
хуралсах пырать уй-хир.
Çакă шурă кĕрĕкпе,
çук, çӳреймĕн çăвĕпе.
Улăштармаллах халь тум,
Кирлĕ хурарах костюм.
Шăпăрт пулчĕ саманта:
«Кам-ши çĕвĕç вăрманта?
Чăрăшăн, курсаттăм хам,
йĕп нумай. Çитсе пăхам».
— Йĕп нумай та, шăллăм, ман
пĕр сĕвĕм те çип юлман,—
терĕ чăрăш куяна.—
Эсĕ çамрăк, чĕрĕ те —
шыраса туп чĕрĕпе.
Чĕрĕп пулчĕ килĕнче —
типĕ çулçă айĕнче.
— Пулăшма сана хавас.
Çук-çке çип, ăçтан тупас?
Эс çапах та, çамрăк тус,
ан кулян, пуçна ан ус.

Хăвăрт, çиçĕмле çиççе,
эрешмен патне çитсе,
пурçăн çип эс кил илсе,
туххăм парăп çĕлесе.—
Чунсăр мар-мĕн эрешмен.
Куяна паллать иккен.
— Юрĕ, тусăм, шит-хăлха,
ак сана çип пĕр çăмха!
Йывăр пулчĕ чĕрĕпе,
куç хупмарĕ çĕрĕпе.
Пирĕн тусăн тепĕр кун
Хатĕрех вĕр-çĕнĕ тум.
Хăйĕн çакă тумĕпе
вăл çӳрерĕ çăвĕпе.

*А. Савельев-Сас.*

1. Куян мĕншĕн пăшăрханнă?
2. Ăна мĕн тума çĕвĕç кирлĕ пулнă?
3. Чăрăш куяна мĕншĕн пулăшайман? Тупса вула.
4. Чĕрĕп куяна мĕнле канаш парать? Тупса вула.
5. Сăвăлла юмаха палăртуллă вулама вĕрен.

## Вăрманти çапăçу.

Эпир Пракуш юлташăмпа ялан уйрăлми çӳреттĕмĕр: шкулта та, выляма та... Паян вара вăл мана хытах кӳрентерчĕ. Мана систермесĕрех ачасемпе вăрмана çырла пуçтарма кайнă.

Эпĕ те вĕсем хыççăнах тухса чупрăм.

— Пракуш! Пракуш!—кăшкăртăм вăрмана çитсенех.

Анчах мана хирĕç сас паракан пулмарĕ. Эпĕ вăрманта пĕчченех çырла пуçтарма тытăнтăм. Кунта хурăн çырли те, çĕр çырли те нумай. Çырла пуçтарнă вăхăтра хамран инçех те мар çĕрĕк тунката патĕнче чĕрĕпе курах кайрăм. Вăл тутине мăкăл-мăкăл вылятать: çырла çиет пулас. Хăй патне çын çывхарнине сисрĕ те тĕм айне кĕрсе çухалчĕ. Эпĕ хăвăрт ун патне пытăм. Чĕрĕп çăмха пек чăмăртанса выртма та ĕлкĕрнĕ. Хам ун йĕпписене алăпа ерипен тĕртсе пăхатăп, чĕрĕп тата хытăрах чăмăртанать.

Нумайччен лартăм ун умĕнче. Анчах чĕрĕп чăп-чăмăрах выртать. Эпĕ вара аяккарах кайрăм та тĕмĕ хыçĕнчен сăнама тытăнтăм. Чылайран хайхи ерипен хускалма тытăнчĕ. Ака унăн тути-çăварĕ лайăхах курăнакан пулчĕ. Эпĕ çаплах малалла мĕн пуласса кĕтсе выртатăп. Чĕрĕп ункун пăхкаларĕ те çырла шырама тытăнчĕ.

Кĕтмен çĕртен чĕрĕп умĕнче хура çĕлен авкаланни курăнса кайрĕ. Вăл хăлаç тăршшĕ те пуль.

Çырла шыракан чĕрĕп икĕ-виçĕ утăм каялла чакрĕ. Çав вăхăтра ăна çĕлен сăхса илме те ĕлкĕрчĕ. Çакăн хыççăн вара чĕрĕппе çĕлен хушшинче çапăçу пуçланса кайрĕ.

Çĕлен чĕрĕпе çине-çинех сăхма тытăнчĕ. Лешĕ те парăнмарĕ: çĕлен мăйне кăшлама тапратрĕ. Çĕленĕ тем тĕрлĕ авкаланать. Шăртлă чĕрчуна сăха-сăха илет, ăна хӳрипе явкаласа илме хăтланать. Çĕлен темле сăхсан та, чĕрĕп ун патĕнчен каймарĕ.

Кĕҫех ман пата ачасем пырса тухрĕҫ. Вĕсем те, чĕрĕппе ҫĕлене курсан, ҫырла пухма чарăнчĕҫ.

Эпĕ пăшăрханма пуҫларăм: кĕҫех чĕрĕп парăнĕ. Вăхăтра пулăшу памасан, ҫĕлен наркăмăшĕпе ҫын та вилме пултарать тенĕччĕ пире шкулта. Чĕрĕпе питĕ шел-ҫке.

Кăлăхах пăшăрханнă-мĕн эпĕ. Манăн куҫ умĕнчех ҫĕлен икĕ-виҫĕ хут авкаланса илчĕ те хускалми пулчĕ. Эпĕ питĕ савăнтăм.

Вăрманта курнă ҫапăҫу ҫинчен киле ҫитсенех аттене каласа патăм.

— Чĕрĕп ҫĕнтерчĕ эппин,—тет атте кула-кула.— Вĕсемшĕн ҫĕлен наркăмăшĕ нимĕн те мар ҫав.

*Н. Иванов.*

?

1. Ача вăрманта мĕн курнă?
2. Чĕрĕп мĕн тунă?
3. Ҫĕленпе чĕрĕп хушшинчи ҫапăҫу ҫинчен калакан вырăна тупса вула.
4. Ку калава вуласан, эсĕ ҫĕнни мĕн пĕлтĕн?
5. План тăрăх калава пилĕк пая уйăр: 1. Вăрмана ҫырла татма кайни. 2. Ача чĕрĕпе курни. 3. Ҫĕлен чĕрĕпе тапăнни. 4. Чĕрĕпшĕн пăшăрханни. 5. Чĕрĕпе ҫĕлен наркăмăшĕ ҫĕнеймenni.

# Халăх пултарулăхě.



## Юмахсем.

### Пакшапа Чакак.

Вăрманта Пакшапа Чакак пěр-пěринпе кӳршěллě пурăннă. Пакши çу каçа ырми-канми ěçленě, хěлле пурăнмалăх апат-çимěç хатěрленě. Чакакě вăрман тăрăх чакăлтатса çӳренě. Вăл нимěн те туман.

Хăшпěр чух Чакак ěçлекен Пакша патне пырса ларнă та тăрăхласа кулнă:

— Ытла та выçă, ěмěтсěр эсě, пакша! Пурпěрех вăрманти пур кăмпана, мăйăра пуçтарса пěтерес çук. Килес çул каллех пулаççě вěсем. Эпě вара сан пек хыт кукар мар. Маншăн пулсан,

нимĕн те кирлĕ мар: хырăм выççан, мĕн те пулин тупса çиетĕпех,— тенĕ.

Вăхăт иртнĕ. Кĕркунне хыççăн шартлама сивĕ хĕл те килсе çитнĕ. Çимелли тупаймасăр чылай кайăк-кĕшĕк выçăпа аптранă. Чакак та выçлă-тутлă пурăннипе начарланса кайнă.



Халĕ вăл тутă пакша патне пынă та ним шарламасăр пăхса ларнă. Пакши вара Чакака çапла вĕрентнĕ:

— Чакак тус, ĕçчен те перекетлĕ чĕрчуна выçă та ĕмĕтсĕрринчен уйăрма пĕлес пулать. Çулла хатĕрлесе хуман пулсан, эпĕ те сан пекех выçă ларнă пулăттăм.

1. Пакшапа Чакак çу кунĕсене мĕнле ирттернĕ?
2. Чакак Пакшаран мĕнле тăрăхланă? Тупса вула.
3. Чакак хĕлле мĕнле инкеке кĕрсе ӳкнĕ?
4. Пакша ăна мĕнле ăс панă? Тупса вула.

## Кашкăрпа Путек.

Кашкăр юханшыв хĕрринче Путек шыв ĕçнине курнă. Кашкăрăн ку путеке çиесси килсе кайнă. Вăл чăркăшма пуçланă.

— Эсĕ,— тенĕ,— шыва пăтрататăн, мана ĕçме памастăн.

— Эх, Кашкăр, шыва мĕнле пăтратăп-ха эпĕ?

Санран анатарах тăратăп-çке,—хуравланă Путек.

— Ну, юрĕ, эппин, анчах мĕншĕн эсĕ иртнĕ çулла манăн аттене кӳрентернĕ?

— Ара, Кашкăр, иртнĕ çулла эпĕ çуралман та вĕт.

— Сана нимĕн каласа та çĕнес çук. Эпĕ халь выçă, çавăнпа та сана çиетĕп,—тенĕ тарăхса кайнă Кашкăр.

*И. Яковлев* çырнинчен.

1. Кашкăр мĕншĕн Путекпе чăркăшма пуçланă?
2. Вăл Путеке айăплама мĕнле сăлтавсем тупнă? Тупса вула.
3. Юмахра сире хăш чĕрчунĕ килĕшмерĕ? Мĕншĕн?
4. Юмаха рольпе вулăр.

## Çилпе Хĕвел.

Пĕррехинче Хĕвелпе хаяр çурçĕр Çилĕ: «Иксĕмĕртен кам вăйлăрах?»—тесе тавлашса кайнă.

Нумайччен тавлашнă вĕсем. Юлашкинчен, çул çинчи юланутçа курнă та вăй виçме шут тытнă.

— Пăхса тăр,—тенĕ Çил,—эпĕ çăмăллăнах унăн тумтирне сирсе пăрахма пултаратăп!

Вăл мĕнпур вăйран вĕрме пуçланă. Çил вĕрнĕçемĕн çулçӳревçĕ тумтирне лайăхрах пĕркеннĕ, усал çанталăка ятланă, хăй çаплах малалла кайнă. Çил çилленнĕ, тулашнă, мĕскĕн юланутçă çине çумăрпа юр янă. Лешĕ, Çиле ылханса, хăйĕн тумтирне тата та лайăхрах тăхăннă, пиçиххипе туртса çыхнă.

Çил ăна нимĕн те тăвайман.

Çакна курсан, Хĕвел кулса янă. Вăл, пĕлĕтсем хушшинчен тухса, çĕре типĕтнĕ, шăнса кайнă çулçӳревçе ăшăтнă. Çулçӳревçĕ Хĕвеле тав тунă, унтан вăл тумтирне хывнă та, ăна чĕркесе, йĕнерĕ çумне çыхса хунă.

— Куртăн-и,— тенĕ ырă кăмăллă Хĕвел хаяр Çиле,— çилленнипе нимĕн те тăваймăн, ырă кăмăллă пулсан, темĕн те тума пулать.

*К. Ушинский* çырнинчен.

1. Хĕвелпе Çил мĕн пирки тавлашса кайнă?
2. Çил хăйĕн вăйне мĕнле майпа кăтартасшăн пулнă?
3. Хĕвел мĕн тунă?
4. Вĕсенчен хăшĕ сана килĕшрĕ? Мĕншĕн?
5. Кĕнекен 101-мĕш страницинче юмахăн тĕп шухăшĕпе çыхăннă ваттисен сăмахне туп.

## Аюкка.

*(Нанай халăх юмахĕ.)*

Пурăннă, тет, пĕр хĕрача. Вăл Аюкка ятлă пулнă, тет. Ун пек хитри таврара пулман, çавăнпа ăна пурте юратнă. Аюкка мăнкăмăлланса кайнă. Вăл нимĕн те туман. Куçкĕски çине пăхса, хăйĕн сăнĕпе киленсе çеç ларнă.

— Шыв ăсса килсемччĕ, хĕрĕм,— тенĕ ăна пĕррехинче амăшĕ.

— Аюк, эпĕ шыва ӳкĕп,— хуравланă Аюкка.

— Эсĕ тĕмрен уртăн,— канаш панă амăшĕ.

— Алăсене чăрмаласа пĕтерĕп.
— Алса тăхăн.
— Çурăлса пĕтĕ,— тенĕ Аюкка.
— Çурăлсан, йĕппе çĕле.
— Йĕпĕ хуçăлĕ.
— Эсĕ пысăк йĕп ил.
— Пӳрнене чиктерĕп.
— Пӳрнеске тăхăн.
— Пӳрнеске çурăлса кайĕ.
— Шыв патне хам кайса килем,— тенĕ кӳршĕ хĕрачи.
Кĕçех вăл шыв ăсса та килнĕ.

Амăшĕ чуста çăрнă та икерчĕ пĕçернĕ. Аюкка икерчĕ курнă та:
— Анне, мана икерчĕ пар!— тесе кăшкăрнă.
— Вĕри вăл, аллусене пĕçертĕн,— хуравланă амăшĕ.
— Алса тăхăнăп.
— Алса йĕпе-çке.
— Эпĕ ăна типĕтĕп.
— Хытса кайĕ.
— Эпĕ ăна çемĕçтерĕп.
— Аллусем ыратма пуçлĕç,— тенĕ амăшĕ.— Сана, хĕрĕм, ĕçлени мĕне кирлĕ?.. Хăвăн илемне çеç пĕтерĕн. Икерче эпĕ аллисене шеллемен хĕрачана парăп...
Вăл икерче илнĕ те кӳршĕ хĕрачине панă.
Аюккан чунĕ тăвăлнă. Вăл юханшыв хĕррине кайнă та хăйĕн сăнне тинкерме пуçланă.
Пăхать: кӳршĕ хĕрачи юнашарах икерчĕ çисе



тăрать. Аюккан сёлеки юхсах анать. Вăл хёрача енне пăха-пăха илет. Унăн мăйĕ тăсăлнăçемĕн тăсăлса пырать.

— Ме, ил икерчĕ,— тет ăна хёрача.— Мана шел мар.

Аюкка çав тери тарăхса каять. Унăн сăн-пичĕ шап-шур пулса тăрать. Вăл чашкăрма, пўрнисене

саркаласа, аллисемпе хăлаçланма тытăнать. Часах унăн аллисем вырăнне çунатсем ӳссе лараççĕ.

— Кирлĕ мар мана нимĕн те! — кăшкăрать вăл. Унтан шыва чăмать те хур пулса тăрать.

— Аюкка-ка-ка-ка! Епле хитре эпĕ! — кăшкăрать вăл шывра ишнĕ май. Ишет-ишет те Аюкка калаçма та манса каять, хăйĕн ятне çеç астуса юлать.

— Аюкка-ка-ка-как! Аюкка-ка-ка-как! — тесе кăшкăрать, тет, вăл, çынсене курсанах.

?

1. Аюкка мĕншĕн мăнкăмăлланса кайнă?
2. Вăл вăхăта мĕнле ирттернĕ?
3. Аюкка ĕçе юратманни мĕнрен курăнать? Тупса вула.
4. Амăшĕ мĕншĕн икерче Аюккана памасть?
5. Сана хĕрачасенчен хăшĕ килĕшрĕ? Мĕншĕн?
6. Ӳкерчĕксене ят пар. Вĕсене эсĕ мĕнле йĕркепе вырнаçтарнă пулăттăн? Юмаха ӳкерчĕклĕ план тăрăх каласа пар.

## Куккук.

*(Ненец халăх юмахĕ.)*

Пурăннă, тет, çĕр çинче пĕр чухăн хĕрарăм. Унăн тăватă ывăл пулнă, тет. Ачисем амăшне итлемен. Вĕсем ир пуçласа каçчен урамра чупнă, вылянă-кулнă. Каç пулсан тин киле таврăннă. Тумтирĕпе пимĕсем[1] çумне çыпçăннă юра силлемесĕрех чупса кĕнĕ. Урайне тăкăннă юра амăшĕн

[1] Пима — вăрăм кунчаллă тир атă е кăçатă.

шăлма тивнĕ. Ачисен йĕпеннĕ тумтирне те вăлах типĕтнĕ. Йывăр пулнă амăшĕн пурнăçĕ.

Пĕррехинче амăшĕ чирлесе ӳкет. Выранпах выртакансќер, вăл ачисене чĕнет, шыв ыйтать:

— Ачасем, шыв ăсса килсемĕр, питĕ ĕçес килет. Темиçе хут тархаслать вăл ывăлĕсене — ачисем итлемеççĕ.

— Эпĕ çарран,— тенĕ асли.

— Эпĕ çĕлĕксĕр,— хуравланă иккĕмĕшĕ.

— Эпĕ тумланман,— тенĕ виççĕмĕшĕ.

Тăваттăмĕшĕ нимĕн те шарламан.

— Юханшыв инçе мар, шыв патне тумланмасăрах кайса килĕр-ха. Ăш хыпрĕ. Шыв ĕçесчĕ,— тархасланă каллех амăшĕ.

Ывăлĕсем, ахăлтатса, чумран[1] урама чупса тухнă. Нумайччен вылянă вĕсем, амăшĕ çинчен аса та илмен.

Вылясан-вылясан, аслă ывăлĕн çиесси килнĕ. Вăл чума кĕрет те курах каять: амăшĕ урай варринче тăрать, кĕрĕкне тăхăнать.

Сасартăк унăн кĕрĕкĕ çине тĕксем шăтса тухнă. Амăшĕ тир хырмалли хăмана тытнă — хăмаран кайăк хӳри пулса тăнă. Тимĕр пӳрнескерен кайăк сăмси пулнă. Аллисем выранне амăшĕн çунатсем ӳссе ларнă. Вăл куккук пулса тăнă та чумран вĕçсе тухса кайнă.

— Пăхăр, пăхăр, пирĕн анне кайăк пулса вĕçсе каять!— кăшкăрса янă аслă ывăлĕ.

---

[1] Чум — Çурçĕрте тата Çĕпĕрте пурăнакан халăхсен ӳпли.

Ачасем амăшĕ хыççăн чупма пуçланă.

— Анне, эпир сана валли шыв илсе килтĕмĕр! — кăшкăрнă вĕсем.

— Ку-кук, ку-кук! Кая юлтăр! Кая юлтăр! Эпĕ ирĕклĕн сарăлса выртакан шывсем патнелле вĕçетĕп! — хуравланă амăшĕ.

Ачисем ун хыççăн чупнă, ăна шыв сĕннĕ.

— Аннем! Киле таврăн! Шыв ĕçсем! — тесе кăшкăрнă кĕçĕнни.

— Ку-кук, ку-кук, ку-кук! Тин таврăнмастăп ĕнтĕ, ывăлăм! — илтĕннĕ амăшĕн сасси аякран.

Кунсем, çĕрсем иртнĕ. Ачисем çаплах ниме пăхмасăр амăшĕ хыççăн чупнă. Урисем юнланса пĕтнĕрен вĕсем хыççăн хĕрлĕ йĕр выртса юлнă, тет. Анчах амăшĕ каялла таврăнман.

1. Амăшĕ мĕн пирки чирлесе ÿкнĕ?
2. Вăл мĕншĕн килĕнчен куккук пулса вĕçсе кайнă?
3. Ачасем хăйсен йăнăшне ăнланнă-ши?

## Çăткăн Пак.

(Корей халăх юмахĕ.)

### I

Алмаз тăвĕсем çинче ĕлĕк-авал Пак ятлă пĕр çăткăн этем пурăннă, тет. Вăл мĕн курнă — пурне те хăй патнелле туртнă.

Пĕррехинче унăн капкăнне кĕмĕл пăрăнтăк çакланнă. Пак ăна ярса илнĕ те вĕлерме пикеннĕ. Анчах сасартăк çак пĕчĕк чĕрчун этем чĕлхипе калаçма тытăннă.

— Ан вĕлер, тархасшăн, ярсам,— йăлăннă вăл.— Мĕн чухлĕ ыйтăн, çавăн чухлĕ кĕмĕл парăп.

— Эпĕ мĕнле япалана тĕкĕнетĕп, çавсем пурте кĕмĕл пулса тăччăр, вĕсене мансăр пуçне никам та тытма ан пултартăр. Çавăн пек тусан яратăп,— тенĕ çăткăн Пак.

— Пурте эс каланă пек пулĕ,— сăмах пană пăрăнтăк.

Çăткăн Пак, ĕненмесĕр, хăйĕн капкăнне ярса тытнă та, лешĕ самантрах кĕмĕл пулса тăнă. Янă вара пăрăнтăка, хăй хăвăртрах килне чупнă.

## II

Хапхана пырса çеç тĕкĕннĕ вăл — хапха çап-çутă кĕмĕл пулса та тăнă. Пӳрте кĕнĕ, шыв куркине ярса тытнă — вăл та кĕмĕл курка пулса тăнă. Пушмакĕсене хывса пусма вĕçне лартма тăнă — вĕсем те çап-çутă кĕмĕл пулнă. Çăткăн Пак, кун пек пуянлăха курса, йăлт анраса ӳкнĕ. Чупса ывăнсан, çиес килсе кайнă. Анчах инкек—пĕтĕм апат-çимĕç кĕмĕл пула-пула тăнă. Тем пек çиесси килнĕ Пакăн—пултарайман. «Епле те пулин чăткалăп,—шухăшланă вăл,—ун вырăнне манăн, ав, мĕн чухлĕ пуянлăх! Халь мана пурте ăмсанĕç».
Чăнах та, Пак пуянлăхне ăмсанакан çынсем тупăннă, анчах ку нумая пыман.

Пак кунран-кун начарланса, типсе пынине пурте асăрха пуçланă. Кĕçех унăн шăммипе тирĕ çеç юлнă. Пак вара хăйĕн сивĕ те хытă кĕмĕл вырăнĕ çине выртнă та часах вилсе кайнă.

? 1. Пак мӗнле этем пулнӑ?
2. Унӑн капкӑнне мӗн ҫакланнӑ?
3. Пак пӑрӑнтӑкран мӗн ыйтнӑ?
4. Пак мӗн пирки пӗтнӗ?
5. Юмах пайӗсене ят пар.

## Эпӗ те атте пекех...

*(Пӑлхар халӑх юмахӗ.)*

Кашкӑр ял патне йӑпшӑнса ҫитнӗ те курӑк ҫисе ҫӳрекен лашана курах кайнӑ.

— Лаша какайӗ тутанас килет-ха манӑн,—тенӗ вӑл, лаша патне пырса.

— Мӗнех вара,—хуравланӑ лаша,—ҫиес килет пулсан, яра пар. Аҫу та санӑн лаша какайне питӗ кӑмӑллатчӗ.

— Манӑн атте? Ӑна астӑватӑр-и вара эсир?

— Астумасӑр, питӗ лайӑх астӑватӑп. Ҫав тери тирпейлӗччӗ вӑл. Таканлӑ лашасене тивместчӗ. Вӗсене ҫиес пулсан, малтан таканӗсене хӑйпӑтса пӑрахатчӗ.

— Эпӗ те атте пекех,—тенӗ кашкӑр,—пар уруна, таканусене хӑйпӑтса ывӑтатӑп. Хӑш уринчен пуҫлас?

— Санӑн аҫу яланах кайри урасенчен тытӑнаканччӗ.

— Эпӗ те кайрисенчен тытӑнам эппин... Ҫӗкле уруна!

Лаша урине ҫӗкленӗ. Кашкӑр унӑн таканне хӑйпӑтас тесе пӗшкӗннӗ. Ҫак вӑхӑтра ӑна лаша

тăрăст! çеç тутарнă çамкаран. Кашкăр виçĕ хут кутăн-пуçăн çаврăнса илнĕ те, кăшт çеç вилсе кайманскер, вăрманалла аран-аран сĕтĕрĕннĕ.

1. Кашкăр ял патне мĕн ĕмĕтпе пынă?
2. Лаша кашкăра мĕнле улталанă?
3. Юмаха рольсем тăрăх илемлĕ вулăр.
4. Юмах тăрăх эсĕ мĕнле ÿкерчĕк тунă пулăттăн?

## Халăх юррисем.

### Тăри.

Тăри ирех тăнă та
шăрантарать юррине:
тăр-тăри, тăр-тăри,
ирпе ирех тăтăр-и,
пăри пĕрчи акрăр-и,
пăри пăтти çакрăр-и,
сарă çуне сапрăр-и,
çиме мана лартрăр-и?

### Купăста.

Касрăм, касрăм шур ăвăс,
турăм лартрăм шур карта,
лартрăм, лартрăм купăста.
Акă çапла шур пуçлă,
кун пек пысăк çулçăллă.
Ай, пиччесем, инкесем,
пырăр киле хăнана,
шур купăста тутанма.



### Юрла-юрла ĕçлер-и.

Ай-люли, ай-люли!
Юрла-юрла ĕçлер-и:
сурăх пире çăм парать,
атте çăмат пустарать,
анне мана хам валли
ăшă алсиш çыхтарать.

## Ваттисен сăмахĕсем.

1. Тăван çĕршыв сывă пулсан,
   тăван йăву та пулĕ сан.
2. Пурăнсан, Тăван çĕршывшăн пурăнас, усă тăвас.
3. Ӳркенмен ăста пулнă.
4. Алла-аллăн ĕç ӳсĕнет.
5. Шанчăклă тусăн хакĕ çук.
6. Совет халăхĕсем тату та тăван,
   пирĕн çĕршыва пусмăрлаймĕ тăшман.
7. Ырă сăмах лайăх кун пекех.
8. Тĕрĕс сăмахшăн çирĕп тăр.
9. Çуркунне çывăракан хĕлле макăрать.

## Тупмалли юмахсем.

1. Кĕлеткинчен хӳри вăрăм.
2. Мана çынсем кĕтеççĕ, эп килнине курсанах, пурте тарса пĕтеççĕ.
3. Йăлт! пăхрăм та юман хыçне пытантăм.
4. Пĕри тăкать, тепри ĕçет, виççĕмĕшĕ ӳсет.
5. Çуркунне ешĕл кĕпе тăхăнать, кĕркунне саратать те хывса пăрахать.
6. Хурçă йыттăн сӳс хӳре.
7. Шĕвĕ, шыв мар; шурă, юр мар.

# Пирĕн тăван Совет Çарĕ.



## Хĕрлĕ Çар.

Октябрьти Аслă революци хыççăн ĕçхалăхĕ ирĕке тухнă. Анчах çĕр улпучĕсем, фабрикăсемпе заводсен хуçисем ĕççыннисене малтанхи пекех пусмăрласа пурăнасшăн пулнă. Вĕсем рабочисемпе хресченсене хирĕç вăрçă пуçланă. Ытти çĕршывсенчи капиталистсем вĕсене укçа, хĕçпăшал, апат-çимĕç парса тăнă.

— Пусмăрта пурăниччен Совет влаçĕшĕн çапăçса вилетпĕр,— тенĕ рабочисемпе хресченсем.

Владимир Ильич вĕсене çапла чĕнсе каланă:

— Хамăрăн, рабочисемпе хресченсен çарне йĕркелĕпĕр.

Пиншер çамрăк рабочипе хресчен хĕрлĕ ялав

айӗнче тăшмансемпе çапăçма кайнă. Халăх хăйӗн çарне Хӗрлӗ Çар теме пуçланă.

Хӗрлӗ Çар хăйӗн тăшманӗсене çӗнтернӗ.

Çавăнтанпа Хӗрлӗ Çар Тăван çӗршыв чиккисене тăшманран сыхлать.

1. Совет çӗршывӗнчи рабочисемпе хресченсене хирӗç кам вăрçă пуçланă? Мӗншӗн?
2. Хӗрлӗ Çар кама хӳтӗленӗ?
3. Халӗ Совет çӗршывне кам хӳтӗлет?

## Манăн пичче.

Ман юратнă пичче пур,
пит хăюллă та маттур.
Пограничник ман пичче
хӗвелтухăç чиккинче.

Çил улать-и каçсерен,
юр çăвать-и ирсерен,
ахăрать-и çил-тăман —
вичкӗн куçлă вăл ялан.

Е çулла, е кӗркунне,
е хӗлле, е çуркунне
ман пиччеçӗм чикӗре
хураллать Тăван çӗре.

Хураллать вăл çӗршыва,
пур тăва та пур шыва,
пур хире те вăрмана,
пур яла та хулана.

*А. Артемьев.*

?

1. Ачан пиччӗшӗ кам?
2. Вӑл мӗне хураллать? Тупса вула.
3. Сӑвва пӑхмасӑр калама вӗрен.

## Похода.

### I

Ҫӗрле Алька ашшӗне ҫара кайма хут пырса панӑ. Шуҫӑм килнӗ чух, Алька ҫывӑрнӑ вӑхӑтра, ашшӗ ӑна чуптунӑ та вӑрҫа тухса кайнӑ. Ирхине Алька хӑйне вӑратманшӑн кӳренчӗ, ҫавӑнтах вӑл хӑй те похода каясси ҫинчен пӗлтерчӗ. Вӑл кӑшкӑрашнӑ, макӑрнӑ пулӗччӗ, анчах кӗтмен ҫӗртен амӑшӗ ӑна похода кайма ирӗк пачӗ.

Ҫула тухас умӗн вӑй пухмашкӑн Алька тулли турилкке пӑтӑ ҫисе ячӗ, сӗт ӗҫрӗ. Унтан вӗсем амӑшӗпе иккӗшӗ похода кайма мӗн кирлине ха-



тĕрлеме тытăнчĕç. Амăшĕ ун валли кĕпе-йĕм çĕлерĕ, Алька хăйне валли хăмаран хĕç касса турĕ. Ĕçленĕ май вĕсем маршсем юрлама вĕренчĕç.

Анчах амăшĕн ĕçе кайма вăхăт çитрĕ те, вĕсем хăйсен ĕçне ырана хăварчĕç.

Çапла кун хыççăн кун Алькăна инçе çула кайма хатĕрлерĕç. Кĕпе-йĕм, ялавсем çĕлерĕç, алсиш çыхрĕç. Стена çинче пăшалпа тата параппанпа юнашар йывăç хĕççем çакăнса тăраççĕ.

— Ытлашши пăсмасть, хĕрӳ çапăçура хĕç ĕмĕрĕ çапăçакан салтак ĕмĕрĕнчен те кĕскерех,— терĕ амăшĕ.

## II

Алькăн похода кайма тахçанах пурте хатĕр ĕнтĕ, анчах хаяр хĕл килсе çитрĕ. Шартлама си-



вĕре шăнса пăсăлма та часах, çавăнпа ăшă çанталăк килессе Алька тӳсĕмлĕн кĕтет.

Акă хĕвел ăшшăн пăха пуçларĕ. Юр ирĕлсе пĕтрĕ. Çула тухма шăпах та вăхăт ĕнтĕ, анчах пĕр ирхине походран таврăннă ашшĕ килсе кĕчĕ. Пичĕ унăн çилпе тĕксĕмленнĕ, тути çуркаланнă, анчах куçĕсем питĕ хаваслă.

Вăл Алькăн амăшне ыталаса илчĕ, амăшĕ ăна çĕнтернĕ ятпа саламларĕ. Унтан ашшĕ ывăлне хыттăн чуптурĕ. Алькăн поход валли хатĕрленĕ япалисене пăхса тухсан, вăл йăл кулса илчĕ те вĕсене типтерлĕ тытма хушрĕ.

*А. Гайдар.*

1. Алькăн ашшĕ ăçта кайнă?
2. Алька похода кайма мĕнле хатĕрленнĕ?
3. Вăл мĕншĕн похода каяйман?
4. Алькăн ашшĕ походран хăçан таврăннă?
5. Вăл Алькăна мĕн каланă?
6. Мĕн вуланине аса илсе, çыхăнуллă каласа пар.

## Будайка ачи.

Пулнă-пурăннă Шупашкар çумĕнчи Будайка ятлă ялта пĕр ача. Вася Чапай тесе чĕннĕ ăна тантăшĕсем. Ытти хресчен ачисенчен нимĕнпех те уйрăлса тăман. Кăштах чăрсăртарах та харсăртарах кăна пулнă, ялан малта çӳреме юратнă...

Вася Чапаев икĕ çул Шупашкарти мăнастир шкулĕнче вĕреннĕ.

— Тавçăруллă та маттурскерччĕ вăл,— каласа

кăтартатчĕ унăн учителĕ Иван Михайлович Гребенщиков.

Вася Чапаев йывăр çулсенче ӳснĕ. Тем тĕрлĕ перекетлесе пырсан та, вĕсен çемйи тутă пурăнайман. Хăйсен пӳрт тăррине те витеймен. Иван Степанович шӳтленĕ вара: «Калайпа* витес килмест, шăлтăртатать вăл, Хусанта курнăççĕ-ха,— кĕленчепе витĕп ак...» Темиçе çул çапла тертленсе пурăннă хыççăн Чапаевсем Будайкăран куçса кайнă. Анчах пĕчĕк ачасем хăйсен ниçта та аптраман юлташне тахçанччен асăнса пурăннă.

Çулсем иртнĕ.

Будайка ачи ӳссе çитĕннĕ. Кайран вăл граждан вăрçин геройĕ Василий Иванович Чапаев пулса тăнă. Халĕ ăна çĕршывăмăрти кашни ачах пĕлет. Вăл пирĕн, совет ачисен, чи юратнă паттăрĕсенчен пĕри.

*Юхма Мишши.*

?

1. Вася Чапай ăçта çуралса ӳснĕ?
2. Юлташĕсем Васьăна мĕншĕн юратнă?
3. Васьăн ачалăхĕ мĕнле иртнĕ?

## Чапаев скверĕ.

Чапаев скверĕ.

Чапаев ут çинче сиккипе вĕçтерсе пырать, юлташĕсене хăй хыççăн йыхăрать... Учĕ чаплă, хĕçĕ çивĕч.

---

*К а л а й — çурт тăррине витмелли хĕç тимĕр.

Чылай çул иртсен, Чапаев хăй çуралса ӳснĕ Шупашкар хулине палăк пулса таврăнчĕ.

Палăк хыçĕнче — Чапаев музейĕ.

Çĕршер çын кулленех Чапаев çумĕпе иртет, ун музейне кĕрет: ачалăхĕпе, яшлăхĕпе, унăн мухтавлă пурнăçĕпе паллашать.

*Юхма Мишши.*

## Чаплă палăк.

Ун пĕр пайĕ — харсăр çилçунат,
çивĕч хĕçĕ — унăн тепĕр пайĕ.
Малалла вăл шиксĕр ыткăнать,
аркатать тăшмансене Чапаев.
Паттăр пулнă вăрçă хирĕнче, —
çавăн пек вăл палăкĕ çинче те.
Курĕ çавăн пек ăна тĕнче,
тĕлĕнĕ çитес ĕмĕрсенче те.

*Ю. Семёнов.*



## Паттăр салтак.

Пирĕн çĕршыв çине тăшман тапăннă. Нимĕç фашисчĕсем Ленинград хулине йĕри-тавра хупăрласа илнĕ. Совет Çарĕ Ленин хулине мĕнпур вăйпа хӳтĕленĕ.

Çакăнта, Ленинград патĕнче, чăваш ачи Иван Михайлов паттăр ĕç турă. Çак салтак Чăваш çĕршывĕнчи Сĕнтĕрвăрри районĕнче çуралса ӳснĕ.

Пĕр вăйлă çапăçу пуçланнă. Совет салтакĕсем тăшман çине тапăнса пынă. Анчах тăшман парăнасшăн пулман, вăл пирĕн салтаксем çине пулемётран тăхлан çумăр çутарнă. Вĕсен малалла каймалла пулман, лăпчăнса выртма тивнĕ. Вилнисемпе аманнисем йышлансах пынă. Çакна курсан, Иван Михайловăн чунĕ ыратнă, урăх тӳсме хал çитмен. Вăл юр çийĕпе малалла хăвăрттăн шуса кайнă. Унăн умĕнче тимĕр-бетонпа çирĕплетсе турă çĕрпӳрт ларнă. Унăн пĕр чӳречинчен çулăм тухса тăнă: ку пĕрмай пулемёт пенипе çапла курăннă. «Акă вăл пирĕн çула пӳлекен. Ăна пула мĕн чухлĕ совет салтакĕ вăхăтсăр вилчĕ!»—тарăхса шутланă вăл. Ним тума аптранипе Михайлов çулăм кăларса тăракан чӳречене хăйĕн кĕлеткипе пырса хуплать. Унăн чĕри витĕр темиçе пуля шăтарса тухнă. Пулемёт часах шăпланнă.

Пирĕн салтаксем Михайловăн паттăрлăхне курса сиксе тăнă та тăшман çине ура! кăшкăрса ыткăннă. Часах фашистсене аркатса тăкнă.

Иван Михайлова çак вырăнтах чысласа пытар-

нӑ. Халӗ унта палӑк лартнӑ, шкул ачисем палӑк тавра чечексем ӳстереҫҫӗ. Паттӑрӑн мухтавлӑ ятне совет халӑхӗ нихӑҫан та манмӗ.

*М. Румянцев.*

1. Иван Михайлов ӑҫта ҫуралса ӳснӗ?
2. Вӑл мӗнле хулана хӳтӗленӗ?
3. Иван Михайлов салтак мӗнле паттӑрла ӗҫ тунӑ? Каласа пар.

## Ваттисен сӑмахӗ.

Паттӑр вилсен те, ырӑ ячӗ вилмест.

## Ӑшӑ салам.

Лартрӑм эпӗ ик пукан.
Мӗн тӑван? Хӑвах куран.
Ку халь пулчӗ пӑравус.
Машинист, пуҫна ан ус!
Ик пукан ҫине ларса,
пӑравус пек кӑшкӑртса,
кайрӑм питӗ инҫете,
Хура тинӗс хӗррине.
Ман пичче кунта, флотра,
ман пичче — маттур моряк.
— Сывӑ-и, пиччем, сана
курас килчӗ чунтанах.
Малтанах ҫакна калам:
йышӑн чи хӗрӳ салам
аттерен, асаннерен,

аннерен, асаттерен,
хамăр савнă аппаран
тата пĕчĕк шăллăмран.
Çĕршыва куç пек сыхла,
сыхă пул, пиччем, ялан.

*В. Алентей.*

1. Ача мĕнле вăйă вылянă?
2. Хăйĕн пиччĕшне вăл мĕнле саламланă? Тупса вула.
3. Ача пиччĕшне мĕн хушнă?

## Василий Крюков.

Василий Крюков хĕрлĕ армеецăн лашине амантнă, ăна шуррисем хăваласа çитме пуçланă.

Василий Крюков патронсăр винтовкине ывăтса янă, наганне хĕвне чикнĕ, унтан вăйсăрланнă лашине каялла çавăрнă та казаксене хирĕç уттарнă.

Казаксем, çакна курсан, тĕлĕнсех кайнă, мĕншĕн тесен хĕрлисем хĕçпăшала çĕре пăрахнине вĕсем халиччен курман. Казаксем Крюкова çавăрса илнĕ, вăл мĕн шутлине пĕлесшĕн пулнă. Крюков хĕрлĕ çăлтăрлă папахине хывса аллине тытнă та çапла каланă:

— Кунта кам асли, çавă хăвăртрах çак папахăна илтĕр.

Казаксем папаха ăшĕнче вăрттăн пакет пур пулĕ тесе шухăшланă та çавăнтах хăйсен пуçлăхне чĕнсе килнĕ. Шуррисен офицерĕ хăй патне çитсенех, Крюков наганне кăларнă та ăна çамкинчен

тĕллесе пенĕ. Казаксем Крюкова çавăнтах хĕçсемпе касса вĕлернĕ, хăйсем малалла кайнă.

Казаксенчен пĕрисем Крюкова ятланă, теприсем — хăйсен офицерне.

Хăшĕсем вара нимĕн чĕнмесĕр пынă. «Мĕн тери çирĕп вăй хĕрлисен»,— шухăшланă вĕсем.

*А. Гайдар.*

?

1. Крюков мĕншĕн, лашине çавăрса, шуррисене хирĕç кайнă?
2. Хĕрлĕ армеец винтовкине пăрахсан, шуррисем мĕншĕн тĕлĕннĕ?
3. Василий Крюков тăшмана тавăрма мĕнле май тупнă?
4. Калаври юлашки предложение тепĕр хут вула. Шуррисем мĕншĕн хĕрлисем пирки çапла шухăшланă?

## Мир пурнăçа! Вилĕм вăрçа!

Пĕтĕм тĕнче халь
хăватлăн калать:
— Мир пурнăçа!
Мир пурнăçа!
Пĕтĕм тĕнче ылханать:
— Вилĕм вăрçа! Вилĕм вăрçа!

*С. Шавли.*

## Пĕтĕм тĕнчери хĕрарӑмсен кунĕ.




### Кам пире юратать!

Кам сире юратать,
кам сире ачашлать,
куç хупмасӑр ларать каçхине?
Хĕлĕн-çӑвĕн ĕçлет,
ĕçтерет-çитерет?
— Ку вӑл пирĕн юратнӑ анне!—
Кам, сӑпка сиктерсе,
юрӑпа йӑпатать
е юмах юптарать
хӑш чухне?



Кам сире юратса
теттесем те парать?
— Ку вăл пирĕн
юратнă анне!–
Ӳркенсен, алхассан,
хушнине тумасан,
кам чĕри ыратать
ун чухне?
Кам сире ӳкĕтлет,
кам сире вĕрентет?
— Пирĕн ырă,
юратнă анне!

*А. Çулĕç.*

1. Сăвăра кам çинчен каланă?
2. Амăшĕ ачисене мĕнле пăхса ӳстерет?
3. Эсĕ аннӳне пулăшатăн-и?

## «Аннене хăратса ӳкерер мар».

### I

Мария Александровна пĕр çулхине Крыма кайнă. Вăл унта йĕркеллĕ вырнаçнăшăн ачисем питĕ савăннă.

Анчах кĕтмен çĕртен инкек сиксе тухнă: Мария Ильинична вар ыратнипе аптраса ӳкнĕ. Тухтăрсем ăна операци тумалла тенĕ.

Ун чухне Владимир Ильич хăй те çитĕнсе çитнĕ çын пулнă ĕнтĕ, çапах та вăл тăванĕсемпе канашлама шутланă. Владимир Ильич Дмитрий

Ильич патне ҫыру янӑ. Унта вӑл ҫапла ҫырнӑ: «Эпӗ Маняшӑна операци тумаллах пуль тетӗп, анчах санӑн канашусӑр татӑклӑн калама шикленетӗп».

Владимир Ильич операци лайӑх иртессе шаннӑ. Апла пулин те, вӗсем Дмитрий Ильичпа иккӗшӗ амӑшӗ патне ҫырар мар, ӑна хӑратса ӳкерер мар тесе шут тунӑ.

## II

Вӑхӑт иртнӗ. Мария Ильинична виҫҫӗмӗш кун ӗнтӗ Владимир Ильич патӗнче пурӑннӑ. Хӑрушлӑх иртсе кайсан, Владимир Ильич Мария Александровна патне тӗпӗ-йӗрӗпе ҫырса янӑ: «Операцие ӑнӑҫлӑ турӗҫ... Ҫавӑнпа та ан кулян, лӑпкӑ пул. Маняша сывалса ҫитнӗ теме те юрать.

Сана хытӑ ыталатӑп, манӑн чунӑмҫӑм, ҫирӗп сывлӑх сунатӑп. Маняша пирки тӳрех ҫырса пӗлтерменшӗн ан кӳрен...»

Пӗр-пӗриншӗн епле тӑрӑшнӑ вӗсем! Амӑшӗн канӑҫне, чун лӑпкӑлӑхне упранӑ. Амӑшӗ вӗсене пурнӑҫ панӑ-ҫке, тӗрӗс ҫул ҫине тухма вӗрентнӗ. Вӑл ачисен тӗрекӗ, ҫуначӗ пулнӑ.

*Г. Ефимов.*

?

1. Эсӗ камсен ҫемйи ҫинчен вуларӑн?
2. Ульяновсен ҫемйинче мӗнле инкек сиксе тухнӑ?
3. Ачасем ун пирки мӗншӗн амӑшне пӗлтермен? Тупса вула.
4. «Вӑл ачисен тӗрекӗ, ҫуначӗ пулнӑ» тенине эсӗ мӗнле ӑнланатӑн?
5. Ульяновсен ҫемйинчи ачасен туслӑхӗ мӗнрен курӑнать?

## Хурçă ут хуçи.

Çуллахи вăхăтра ял ир вăранать. Кăшт çутă палăрма пуçласанах, автансем тĕрлĕ сасăпа пĕр-пĕринпе ăмăртмалла авăтма тытăнаççĕ. Акă калинкке уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Такам, шыв витрисемпе сасă туса, çăл патне пычĕ.

Василиса Павловна та тахçанах тăнă. Вăл килçуртра тирпейлерĕ, апат пĕçерчĕ. Ирхи апат çинĕ хыççăн Василиса Павловна хăйĕн тракторĕ патне васкарĕ...

Часах мотор ĕçлеме тытăнчĕ. Трактор тапранса кайрĕ. Ун хыççăн тип-тикĕс суха кассисем выртса юлаççĕ...

Анат Туçа пысăк ял мар. Пур хыпар та ял тăрăх хăвăрт сарăлать.

Пĕррехинче ачасем: «Трактор! Трактор!» — тесе пĕтĕм яла янратнă. Василиса ун чухне Пăла шывĕ хĕрринче хур пăхнă. Вăл та чăтса тăрайман, пысăк машинăна курма чупнă. Çавăн чухне Василисăн çак хурçă ут хуçи пулас кăмăл çуралнă. Çитĕнсен, вăл тракторист пулма вĕреннĕ. Майĕпен хурçă ут ăна итлекен пулнă.

Тăрăшса ĕçленĕрен Василиса Павловна Кузнецова паллă хĕрарăм трактористка пулса тăнă.

*В. Иванова* çырни тăрăх.

?

1. Ялта çуллахи ир мĕнле пуçланать? Тупса вула.
2. Василиса Павловнăн ĕç кунĕ мĕнле пуçланать?
3. Василисăн трактористка пулас ĕмĕт хăçан çуралнă?
4. Вăл мĕнпе чапа тухнă? Сан аннӳ кам пулса ĕçлет?

## Сăпка юрри.

Пĕчĕк ывăлăмçăм, çывăр,
тутлă тĕлĕк кур.
Ӳсĕн эс патвар та сывă,
çитĕнĕн маттур.

Ĕмĕтсем таçтах вĕçеççĕ,
питĕ инçене.
Пулăн эс, ачам, вĕçевçĕ,
пулăн инженер.

Кайăн эс сив тинĕс урлă
çурçĕр тӳпине.
Сан çинчен пин юрă юрлĕç,
ырлĕç сан ĕçне.

*И. Ивник.*

1. Амăшĕ ывăлне мĕн сунать?
2. Ывăлĕ çинчен вăл мĕнле ĕмĕтленет?

## Амăшĕн парни.

Ун чух Владимир Ильичпа Надежда Константиновна ют çĕршывра пурăннă. Инçетре пулин те, Раççейре мĕн пулса иртнине тĕплĕн пĕлсе тăнă. Владимир Ильич ырă пуласлăх çинчен шухăшланă, ăна хăвăртрах çывхартассишĕн кĕрешнĕ.

Вĕсем пĕчĕк хваттерте пурăннă. Кунтан апатçимĕç туянма тухса çӳреме инçерех пулнă. Кун çинчен Надежда Константиновна, сăмах май, Ленин амăшĕ патне çырса пĕлтернĕ.

Нумаях та вăхăт иртмен, Раççейрен посылка килнĕ. Уçса пăхнă та, унта — велосипед! Амăшĕн парни.

Владимир Ильич ача пекех хавасланса ӳкнĕ.

— Текех çуран çӳресе вăхăт сая ямастăп ĕнтĕ, — тенĕ.

Сасартăк унăн сăнĕ тĕксĕмленнĕ.

— Эх, Надюша, çуран çӳрени çинчен анне патне çырмалла пулман санăн. Вăл велосипеда пенси укçипе илсе яма пултарнă, хăй укçасăр ларать-и, тен, — пăлханса ӳкнĕ Владимир Ильич.

— Эпир те парăмра юлмăпăр. Амăшĕсем, ачипăчин çӳçĕ шуралсан та, вĕсемшĕн тăрăшаççĕ! — тенĕ Надежда Константиновна хуллен кăна.

Владимир Ильич куçне хĕссе илнĕ те йăл кулса янă.

*Г. Ефимов.*

?

1. Владимир Ильичпа Надежда Константиновна ăçта пурăннă?
2. Амăшĕ вĕсене мĕнле парне ярса панă?
3. Владимир Ильич мĕншĕн пăшăрханса ӳкнĕ?
4. Надежда Константиновна ăна мĕнле лăплантарнă?

## Хăш вăхăтра çывăрать-ши анне?

Уйăх тĕттĕм пӳлĕме çутатса пăхать.

Пĕчĕк Маюк тахçанах ыйха путнă, тутлăн мăшлатса çывăрать. Аркаш вара ниепле те çывăрса каяймасть.

Юнашар пӳлĕмре çутă çунать. Кăшт уçăлса

кайнă алăкран Аркаш çĕвĕ машинипе çĕлесе ларакан амăшне курать, шухăша каять: «Анне ĕçрен таврăнчĕ те апат пĕçерсе çитерчĕ, пирĕн тетрадьсене тĕрĕслерĕ. Эпир çывăрма выртсан, чашăк-тирĕк çурĕ. Халь, ав, çĕлеме ларчĕ. Хăш вăхăтра çывăрать-ши анне? Кĕçĕр юриех çывăрас мар-ха, анне выртнине курас...»

Анчах та ача амăшĕ хăш вăхăтра çывăрса кайнине туймарĕ те.

Ирхине, Аркашпа Маюк вăраннă тĕле, амăшĕ ирхи апат пĕçерсе те хунă.

— Анне, хăш вăхăтра çывăратăн эсĕ? — ыйтрĕ Аркаш. — Е эсĕ пачах выртмарăн-и?

— Çук, эпĕ пуринчен кайран выртатăп та ирхине ирех тăратăп, — терĕ амăшĕ.

— Мĕншĕн?

— Манăн, ывăлăм, ĕç нумай. Сире таса кĕпейĕм тăхăнтартмалла, шкула ăсатмалла, унччен урай шăлмалла, апат пĕçермелле.

— Анне, — терĕ Маюк, — эпир сана пулăшăпăр! Эпĕ чашăк-тирĕк çăвăп, Аркаш урай шăлĕ.

— Эпĕ арçын, — хирĕçлерĕ Аркаш, — шыв кӳрсе килĕп, вутă çурăп.

Амăшĕ, ывăлĕпе хĕрне çупăрласа, пуçĕсенчен ачашларĕ:

— Апла пулсан, ман ĕç сахалланать. Çывăрма иртерех выртăп вара... — терĕ вăл савăнăçлăн.

*Б. Данилов.*

1. Аркаша мĕн канăç паман?
2. Вĕсен амăшĕ мĕн пирки сахал çывăрнă?
3. Ачасем амăшĕн ĕçне мĕнле çăмăллатма шутланă?

## Ытарайми анне.

Чăх чĕппи вĕлтĕрен хушшинче çĕтсе кайрĕ. Çӳресен-çӳресен, ял урамне пĕчченех пырса тухрĕ. Ăна кӳршĕ чăххисем сырса илчĕç.

— Эсĕ ăçта каятăн?— ыйтрĕç унран.

— Çĕтсе юлтăм. Аннене шыратăп.

— Санăн аннӳ мĕнлерех? Мĕн пысăкăш, мĕн тĕслĕ?— пĕлесшĕн пулчĕç лешсем.

— Манăн анне чи лайăххи, çĕр çинчи чăхсенчен чи хитри,— хавасланса каласа пачĕ Чĕпĕ.

— Апла пулсан, ун пек чăх пирĕн ялта çук.

— Пур,— терĕ Чĕпĕ,— вăл манăн анне. Эпир çак ялтах пурăнатпăр. Эпĕ аннене пурпĕр шыраса тупатăп. Унăн çунаттисем ăшă, тĕкĕ çемçе.

Çак вăхăтра урама хыткан, ватă Чăх кăлăклатса тухрĕ.

— Ăçта çӳретĕн эсĕ?— терĕ вăл, хăй Чĕппине палласа илсе.— Ут хам хыçран.

— Акă вăл манăн ытарайми хитре анне!— хĕпĕртесе малалла чупрĕ Чĕпĕ.

*Г. Мальцев.*

?

1. Чĕпĕ ăçта çĕтсе юлнă?
2. Чĕпĕ хăйĕн амăшне юратни ăçтан курăнать?
3. Хăвăн аннӳ çинчен каласа пар.

## Ваттисен сăмахĕсем.

Аннӳ пур чухне тăлăх пулмăн.
Аннерен хаклă тус çук.
Ăçу-аннӳне хисепле, хăвнах ырă пулĕ.

# Килчĕ ырă çуркунне.



## Çуркунне çитсен.

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш ялĕнче
юр ирĕлчĕ васкаса.

Тусем, сăртсем хуп-хура
юрĕ кайса пĕтнĕрен,
тухать курăк çăп-çăра
хĕвел хытă хĕртнĕрен.

Сивĕ, хаяр хĕл иртет,
каять йĕрсе, хурланса.
Сивĕ куççульпе йĕрет,
иртнĕ кун̆шăн хурланса.

Путăксемпе, варсемпе
çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет.
Анчах, мĕнле йĕрсен те,
хĕвел хĕртнĕçем хĕртет.

Хĕл куççулĕ шавласа
юхса кайрĕ çырмара.
Ачи-пăчи выляса
чупса çӳрет урамра.

*К. Иванов.*

?

1. «Нарспи» поэмăн çак сыпăкне мĕншĕн «Çуркунне çитсен» ят панă?
2. Ку сыпăкра хĕвел, çурхи шыв, курăк çинчен мĕн каланă? Тупса вула.
3. Хĕл çинчен мĕн каланă? Тупса вула.
4. Хĕл «сивĕ куççульпе йĕрет» тенине мĕнле ăнланатăн?
5. Сыпăка пăхмасăр калама вĕрен.

### Тупмалли юмах.

Вĕçет — чĕнмест, выртать — чĕнмест, вилсен — шавлать, чарăнма пĕлмест.

## Çурхи çутçанталăк.

Хаваслă тăри çуначĕ çинче килет шыв-шурлă çуркунне.

Тӳпе кунсерен янкăр таса, кăн-кăвак тăрать. Хĕвел хĕртсе пăхать.

Йăшнă юр лăстăр! туса пусăрăнать. Юр ирĕлнĕçемĕн ун айĕнчен тахçанхи йĕрсем тухаççĕ.

Çуна çулĕ тĕксĕмленсех, хуралсах пырать. Уй улаланать, сăрт-ту çамкисем, тӳпем вырăнсем хуп-хура.

Çĕмĕрт, чие, сирень папакĕсем хăмăрланаççĕ. Çӳçе кăчки мамăк пек çемçе те шурă.

Ял çинче хура курак краклатни, путек-сурăх макăрни, çăмарта пуçланă чăхсем кăтиклени, ача-пăча кăшкăрашни кунĕпех шăпланмасть.

Çырмара шыв-шур кĕрлет. Уйра тăри, çураки çитни çинчен систерсе, хăйĕн тăр-тăр-тăр-тр-тр кĕввине шăратма пуçларĕ.

*А. Артемьев.*

1. Çуркунне çутçанталăк мĕнле улшăнать? Тупса вула.
2. Уй мĕншĕн улаланать?
3. Чĕрчунсем çинчен мĕн каланă? Тупса вула.
4. Çынсем мĕнле ĕçсем тума хатĕрленеççĕ?

### Ваттисен сăмахĕсем.

Çурхи кун çулталăк тăрантарать.
Çуркуннехи ĕç кĕркунне курăнать.

## Вĕçен кайăксем килни.

Çур енне кун вăрăмланса пырать. Хĕвел хĕртнĕçемĕн хĕртме тытăнать. Шурă юр, шыв пулса, çырмасенче кĕрлесе юхма пуçлать. Кăнтăр енне кайнă вĕçен кайăксем вĕçсе килме тытăнаççĕ.

Чи малтан хура курак — çуркунне йыхравçи çитет. Вăл пирĕн пата мартăн çирĕммĕшĕ тĕлнелле килет.

Апрель пуçламăшĕнче шăнкăрчсем, тăрисем вĕçсе килеççĕ. Уйăх вĕçнелле чĕкеçсем, май пуçламăшĕнче шăпчăксем, куккуксем, кайăк хурсем, саркайăксем килсе çитеççĕ. Вĕсем тӳрех хăйсене валли йăва çавăрма тытăнаççĕ, унтан чĕпĕ кăларма лараççĕ.

Вĕçен кайăксем питĕ усăллă. Вĕсем пахчаçимĕçе, тырпула сиен тăвакан хурт-кăпшанкăсене пĕтереççĕ.

Вĕçен кайăксем — пирĕн туссем.

*В. Ефимов* çырни тăрăх.

1. Çуркунне паллисем çинчен калакан вырăна тупса вула, хăвăн сăмахсемпе каласа пар.
2. Çуркунне пирĕн пата чи малтан мĕнле кайăк вĕçсе килет?
3. Ун хыççăн мĕнле кайăксем килсе çитеççĕ?
4. Вĕçен кайăксем пире мĕнле усă параççĕ?



## Шăнкăрч.

Хам юратнă çĕршыва
килтĕм вĕçсе,васкаса,
ыврăннине пĕлмесĕр,
юрла-юрла савăнса.

Çурт тăррине лартăм та
янăратрăм юррăма,
савăнтартăм, култартăм
ачасене сăввăмпа.

Йăпăрт çеç хам йăвана
кĕре-кĕре тухатăп,
ăшă вырăн тумашкăн
тĕк-çăм нумай пухатăп.

*Н. Шелепи.*

1. Шăнкăрч мĕнпе савăнтарать?
2. Вăл мĕн тума тĕк-çăм пухать?
3. Шăнкăрчсем этеме мĕнле усă параççĕ?
4. Çуркунне пирĕн пата мĕнле кайăксем вĕçсе килеççĕ?

**Тупмалли юмах.**

Хура йăмăкăн юрри хитре.

## Шăнкăрчсем.

Çуркунне çитрĕ. Шăнкăрчсем вĕçсе килчĕç. Аркашпа Васук çунатлă тусĕсем валли йăвасем малтанах хатĕрленĕ. Аркаш вĕллине хăвăл çăкаран тунă. Вaçук вара, хитререх пултăр тесе, вĕллине сухăрлă хăма татăкĕсенчен ăсталанă, ăна сăрланă.

Вĕллисене вĕсем пӳрт умĕнчи йăмра çине тухса çакрĕç.

— Манăн вĕлле хитререх. Шăнкăрчсем уншăн савăнĕç. Санăнне пăхасшăн та пулмĕç, акă,— мухтанать Вaçук.

— Тен, шăнкăрчсем манăн вĕллене те тиркемĕç,— хирĕçлет Аркаш шăллăм.

Часах икĕ шăнкăрч вĕçсе килчĕç. Пĕри Аркаш тунă вĕлле тăррине ларчĕ, тепри Вaçук вĕллине кĕрсе çухалчĕ.

— Куртăн-и, Аркаш!— сиккелерĕ Ваçук.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, унăн вĕллинчен шăнкăрч йăкăлт сиксе тухрĕ те аяккалла вĕçсе кайрĕ. Тепĕр шăнкăрчĕ Аркаш вĕлли çине ларчĕ те çунат çапса юрлама пуçларĕ. Хăйĕн юррипе шăллăма килĕшӳллĕ йăвашăн тав тăвать тейĕн. Ваçук йăвине ытти шăнкăрчсем те йышăнасшăн пулмарĕç. Унта пĕр мăшăр çерçи пырса вырнаçрĕ.

— Манăн вĕллене мĕншĕн йышăнмарĕç?—пăшăрханчĕ Ваçук.

Çунат çапса юрă шăратакан шăнкăрч, калаçма пĕлнĕ пулсан, Ваçука çапла хуравланă пулĕччĕ:

— Эпир, шăнкăрчсем, сухăрпа сăрă шăршине юратмастпăр. Çавăнпа та манăн юлташ урăх йăва шырама каскарĕ.

*М. Козлов.*

?

1. Аркашпа Ваçук шăнкăрчсене мĕнле кĕтсе илнĕ?
2. Шăнкăрчсем камăн вĕллине йышăннă?
3. Ваçук вĕллине вĕсем мĕншĕн тиркенĕ? Тупса вула.
4. Эсĕ шăнкăрчсене мĕнле кĕтсе илтĕн?

## Çурхи кун.

Сарă хĕвел ăшшăн кулса пăхать. Унăн шевлисем шыв кӳлленчĕкĕсенче шыва кĕреççĕ. Юханшыв ыйхăран вăраннă, ыран-паян кĕрлесе пăр каймалла.

Йывăççем çара-ха, анчах чĕрĕлме тытăннă, папакĕсем тăртаннă.

Урамсенче çурхи шыв шăнкăртатса юхать. Шыв юххи çине кимĕсем яма, шыв арманĕсем лартма аван.

1. Калавра хĕвел çинчен мĕн каланă?
2. «Хĕвел шевлисем шыв кӳлленчĕкĕсенче шыва кĕреççĕ» тенине мĕнле ăнланатăн?
3. Çуркунне юханшыв мĕнле улшăнать? Тупса вула.
4. Йывăçсем мĕнле улшăнаççĕ?
5. Эсĕ çуркунне мĕнле вăйăсем вылятăн?

**Тупмалли юмах.**

Сăмсасăр кăвакал пăр шăтарать.

## Пăр кайни.

Пирĕн ял çумĕпе Çавал шывĕ юхса выртать. Хĕлле вăл пăрпа витĕнет. Çуркунне пăр çийĕн пăтранчăк шыв кĕрлесе юхать. Эпир, ачасем, пăр каяссине кашни кун кĕтетпĕр.

Акă анлă хирсемпе вăрмансенчен шыв кĕрлесе анчĕ. Çавал шывĕ кунсерен тулса пычĕ, пăр та хăпарчĕ. Пĕр ăшă кун хĕл кĕперĕ шатăртатса илчĕ те майĕпен аналла шăва пуçларĕ.

— Пăр каять! Пăр каять! Айтăр пăр кайнине курма! — шавласа чупрĕç ачасем.

Кăвак катăксем каплана-каплана юхса килеççĕ, пĕрне-пĕри малалла хĕссе тĕртеççĕ, çурăлса вакланаççĕ.

Пĕр пысăкрах пăр катăкĕ çинче йытă юхса анать, вăл, сиксе тухаймасăр, енчен енне чупка-



лать. Йытӑ, ачасене курсан, савӑннипе вӗрме тытӑнчӗ. Вӑл хӑй чӗлхипе хӑтарма ыйтать.

Ҫав самантра колхозниксем кӗпер патне пакурсем, лумсем, кӗреҫесем йӑтса чупса анчӗҫ. Вӗсем кӗпер юписем ҫумне пырса капланнӑ пӑр катӑкӗсене ката-ката яраҫҫӗ, анаталла ӑсатаҫҫӗ.

Акӑ йытӑ та вӗсем патнех юхса ҫитрӗ. Колхозниксенчен пӗри пакурпа пӑра туртса илчӗ те, йытӑ ҫыран хӗррине сиксе тухрӗ.

Эпир йытта ҫӑлнӑшӑн ҫав тери савӑнтӑмӑр.

*С. Юшков.*

?

1. Пӑр хӑҫан тапраннӑ?
2. Пӑр кайни ҫинчен калакан вырӑна тупса вула.
3. Йытӑ мӗнле инкеке лекнӗ? Ӑна епле хӑтарнӑ?

**Тупмалли юмах.**

Шывра путмасть, вутра ҫунмасть. (П.р)

## Пăр каять.

Пур енчен те тапса анчĕ
çурхи шывĕ çырмана,
ейĕве тухса саланчĕ,
пăр капланчĕ çырана.

Тухăр, пăхăр, курса юлăр:
шăтăр-шатăр пăр каять.
Выльăр, чупăр, хавасланăр,
ак часах çулла пулать!

*И. Малкай.*

1. Çурхи шыв ăçта тапса аннă?
2. Вăл çырантан тухни çинчен сăвăра мĕнле каланă?

## Тупмалли юмах.

Хĕлле хулăн тумтирпе выртать, çуркунне тумтирĕ çĕтĕлсе пĕтет.

## Вăрмана шыв илни.

I

Мулкач анлă юханшыв варринчи утрав çинче пурăннă. Çуркунне шыв çинчи пăр çуркаланма пуçланă.

Пĕррехинче мулкач йывăç тĕмĕ айĕнче лăпкăн çывăрнă. Хĕвел ăна ăшăтнă. Мулкач шыв хăпарма пуçланине те туйман. Вăл хăй айне шыв кĕре пуçласан çеç вăраннă.

Сиксе тăнă — ун тавра пур çĕрте те шыв. Мулкач утрав варрине тапса сикнĕ: унта пĕр лаптăк типĕ вырăн юлнă.

Анчах шыв хăпарнăçемĕн хăпарнă. Утрав пĕчĕкленсех пынă. Мулкач хăранипе утравăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне чупкаланă.

## II

Çапла пĕр кун иртнĕ, çĕр те иртсе кайнă. Тепĕр ирччен утравăн шыв илмен лаптăкĕ пĕчĕкçеç тăрса юлнă. Унта пĕр кукăр-макăр йывăç ларнă. Мулкач йывăç тавра чупкаланă.

Виççĕмĕш кунне шыв йывăç патнех çитнĕ. Мулкач йывăç çине улăхасшăн сике-сике пăхнă, анчах кашнинчех шыва ӳкнĕ.

Аранах вăл чи аялти пысăк турат çине сиксе ларнă. Ун çине вырнаçса, шыв чакасса тӳсĕмлĕн кĕтме пуçланă. Шыв урăх хăпарман. Выçă вилесрен ватă йывăç хуппи, йӳçĕ пулин те, çиме юрăхлă пулнă.

Çил йывăçа силленĕ, мулкач ун çинче аран-аран тытăнкаласа ларнă. Вăл ларакан йывăç çумĕпе юханшыв тăрăх пĕренесем, туратсем, улăм çӳпписем юхса иртнĕ.

Йывăç çинче мулкач виçĕ кун ларнă. Юлашкинчен шыв чакнă та мулкач çĕре сиксе аннă.

*В. Бианки.*

1. Мулкач мĕншĕн шыв илнине сисмен?
2. Пĕрремĕш куна вăл ăçта ирттернĕ? Тупса вула.

3. Шыв тулса пыни ҫинчен калакан вырӑнсене тупса вула.
4. Мулкач хӑраса ӳкнине, ҫухалса кайнине калавра мӗнле сӑнласа панӑ?
5. Утрава шыв илнӗ вӑхӑтра мулкач мӗн ҫисе пурӑннӑ?
6. Мулкач йывӑҫ ҫинчен хӑҫан аннӑ?

**Тупмалли юмах.**

Ҫулла кӑвак, хӗлле шурӑ.
(М.л..ч.)

## Ҫуркунне.

Хӗвеллӗ кун. Таса тӳпе
утмӑлтурат чечекӗ пек.
Тӑрин илемлӗ юррипе
янрать хир-улӑх иртенпех.

Сӗрлеҫҫӗ улмуҫҫи ҫинче
канма пӗлмен пыл хурчӗсем.
Ача-пӑча сӑрт ҫамкинче
тӑмран тӑвать тетте ҫуртсем.

Хӗвел сапать хӑй хӗлхемне
ялсем ҫине те улӑха.
Вӑрман симӗслетет тумне,
кӗрнек кӳрет тавралӑха.

*Н. Мартынов.*

?
1. Эсир ҫуркуннен хӑш тапхӑрӗ ҫинчен вуларӑр?
2. Уй-хирте, вӑрманта, садра мӗнле улшӑнусем пулса иртнӗ?
3. «Кӗрнек кӳрет тавралӑха» тенине мӗнле ӑнланатӑр?



1. Ӳкерчӗке сӑна. Çулталӑкӑн хӑш вӑхӑтне сӑнланӑ?
2. Çуркунне çитни мӗнрен паллӑ? Пӗлӗт мӗнле? Тавралӑх мӗнле улшӑннӑ?
3. Кунта камсене куратӑн? Ачасем мӗн тӑваççӗ?
4. Ӳкерчӗке ят пар.
5. Аяларах панӑ сӑмахсемпе усӑ курса, ӳкерчӗк тӑрӑх калав ту: *хаваслӑ кун, çуркунне, хӗвеллӗ кун, ӑшӑ çил, янкӑр та таса тӳпе, шыв кӳлленчӗкӗсем, савӑнӑçлӑ ачасем.*

## Хирсенче.

Уй-хир юртан тасалчӗ. Хӗвел кулса пӑхать. Ӑшӑ. Çураки пуçланчӗ.

Колхозӑн анлӑ уйӗсенче хӑватлӑ тракторсем кӗрлеççӗ. Плугсем хыççӑн сухаланӑ хура касӑсем выртса юлаççӗ. Мамӑк пек çемçе çӗр çине ылтӑн пӗрчӗ акӑнать. Акнӑ тырра сӳрелесе тӑпра айне тӑваççӗ.

Эрне иртет. Ăшă çумăр çăвать. Акнă тырă тикĕс шăтса тухать. Анлă уй симĕс кавирпе витĕнет. Парка ӳсекен тырă ăшне путене те йăва çавăрать.

Çурхи хĕвеллĕ кунсем ăшă та ырă. Çакă тырпула хăвăрт ӳсме пулăшать. Тăри кăвак тӳпере çепĕç юррине шăрантарать.

*И. Соколов-Микитов.*

1. Хирте мĕнле ĕçсем пуçланчĕç?
2. Тырă акни çинчен каласа пар.
3. Тырă мĕнле çанталăкра парка ӳсет?
4. Çакăн пек вăхăтра хăвна епле туятăн?

## Йывăçсем çулçă сарни.

Çурхи хĕвел кунсеренех çĕр çине хĕлхем сапать. Унăн ăшшипе йывăç турачĕсем çинче папаксем кӳпчесе пыраççĕ. Часах тăртаннă папаксенчен симĕс çулçăсем курăнма пуçлĕç. Темиçе кун иртсен, çулçăсем пĕтĕмпех сарăлса çитĕç.

Пахчара чи малтан хурлăхан çулçă кăларать. Ун хыççăн çĕмĕрт, çӳçе, йăмра, чие, тирек, вĕрене çулçисем сарăлма тытăнаççĕ. Кăшт тăхтасан, садри улмуççисемпе слива симĕсленет.

Юлашкинчен çăка хăйĕн шупка симĕс çаврака çулçисене сарма тытăнать. Вăл ялпа хула урамĕсене илем кӳрет. Чи юлашкинчен юманăн шупка кĕрен çулçисем курăнса каяççĕ.

*С. Юшков* çырни тăрăх.

? 1. Чи малтан мӗнле йывӑҫ ҫулҫӑ ҫӑларать?
2. Ун хыҫҫӑн мӗнле йывӑҫсен ҫулҫисем сарӑлаҫҫӗ?

## Амантнӑ хурӑнсем.

Пирӗн пӳрт ҫумӗнче виҫӗ хурӑн ӳсет. Вӗсене атте хӑй ҫамрӑк чухне лартнӑ. Ҫуркунне ҫитсен, хурӑнсем ҫулҫӑ сараҫҫӗ, тавралӑха илем кӳреҫҫӗ.

Пӗррехинче эпӗ ҫак кӑтра хурӑнсене сӑнаса пӑхрӑм та тӗлӗнсех кайрӑм: вӗсен яштака шурӑ вуллисем хӗреле-хӗреле кайнӑ. Эпӗ хӑвӑртрах пӳрте чупса кӗтӗм, курни ҫинчен аттене каласа патӑм.

— Тӗрӗслесе пӑхас, мӗн пулнӑ вара вӗсене?— терӗ атте.

Эпир урама тухрӑмӑр. Атте хурӑнсене пӑхса ҫаврӑнчӗ те:

— Ну, ачасем, тӗрӗсне калӑр: хурӑнсене кам каса-каса тухнӑ?— тесе ыйтрӗ.

Эпӗ Петӗр шӑллӑм ҫине пӑхса илтӗм. Вӑл пӗрикӗ утӑм каялла чакрӗ те:

— Эпӗ вӗсене касман, шӑтарса шывне ҫеҫ ӗҫрӗм,— терӗ.

Атте Петӗре хӑй патне чӗнсе илчӗ.

— Петӗр, халӗ аҫу мӗн каланине итле ӗнтӗ,— терӗ вӑл.— Эсӗ хурӑнсене йывӑр амантнӑ. Куратӑн-и, вӗсем пурте хурланса макӑраҫҫӗ. Авӑ, эсӗ шӑтарнӑ вырӑнсенчен куҫҫулӗ сӑрхӑнса тухать.

Петӗр атте умӗнче нимӗн чӗнмесӗр тӑрать.

*В. Давыдов-Анатри.*

1. Пӗррехинче ача мӗн пирки пăшăрханса ӳкнӗ?
2. Хурăн вуллисем мӗншӗн хӗрелнӗ?
3. Петӗр хăйӗн йăнăшне ăнланнă-ши?
4. Санăн шутупа, йăнăша тӳрлетес тесен, унăн мӗн тумалла?

**Ваттисен сăмахӗ.**

Касма çăмăл, ӳстерме йывăр.

## Атьăр тухар, тантăшсем.

Атьăр тухар, тантăшсем,
пурте аслă урама!
Лартар симӗс йывăçсем:
йăмра, хурăн, хурама.

Эпир лартнă хунавсем
хăвăрт ӳсчӗр кашласа.
Вӗсем çинче кайăксем
савăнтарччăр юрласа.

Пирӗн аслă урамсем
капăрланччăр çулсерен.
Çавăнпа та, тусăмсем,
тăрăшар-ха кунсерен.

*В. Давыдов-Анатри.*

1. Тăван ялăмăр илемленсех пытăр тесен, пирӗн мӗн тумалла?
2. Сăвăра ун пирки мӗн каланă?

**Пӗтӗмӗшле ыйтусемпе ӗçсем.**

1. Çурхи уйăхсен ячӗсене каласа тух.
2. Эсӗ чӗрчунсем çинчен калакан мӗнле сăвăсемпе калавсем вуларăн? Вӗсемпе усă курса, çутçанталăкра çуркунне пулакан улшăнусем çинчен каласа пар.

# Апрелĕн 12-мĕшĕ — Космонавтика кунĕ.




## Мухтанатпăр.

Аслă Ленин партийĕ сана
çитĕнтернĕ çилçунат парса.
Партипе çĕршывăм хушсанах,
вĕçрĕн эс хăюллăн космоса.

Паттăр та мухтавлă Андриян,
савăнтартăн эс чунтан пире.
Эс чăваш ачийĕ пулнăран
уйрăмах хавас тапать чĕре.

Мухтанатпăр пурте санпала,
кам пĕлмест сана халь тĕнчере!
Утăпăр эпир малтан мала,
сан пек паттăр пулăнăр ĕçре.

*А. Кăлкан.*

**Андриян Григорьевич Николаев лётчик-космонавт— пирĕнентеш. Вăл космосра икĕ хут пулнă.**

## Андриян Николаев — кĕнеке тусĕ.

Андриян кĕнеке вулама юратнă. Вăл шкула кайиччченех вулама вĕреннĕ. Иккĕмĕш класра вара М. Федоров çырнă «Арçури» балладăна пăхмасăр калама пĕлнĕ. Андриян Константин Иванов çырнă «Нарспи» кĕнекене те вуласшăн пулнă. Вăл хăйсен шкул библиотекине пынă.

— Мария Андреевна, эсир «Нарспи» кĕнекене тупса параймăр-ши?— ыйтнă ача.

— Çук çав,— тенĕ кĕнеке паракан.— Темиçе кĕнеке пурччĕ, ачасем илсе пĕтерчĕç.

Андриян урăх кĕнеке илнĕ те кайма тăнă.

— Чим-ха,— чарнă ăна Мария Андреевна.— Ак кунта пĕр кĕнеке тупăнчĕ... Анчах çав тери çĕтĕлсе пĕтнĕ, хуплашки те çук.

— Тавах сире. Мана вăл та юрĕччĕ,—килĕшнĕ ача.

Андриян тимлесех ыйтнине кура, Мария Андреевна ăна çав кĕнекене тыттарнă.

«Ку кĕнеке пĕтрĕ ĕнтĕ,—шухăшланă хăй ăшĕнче вăл.— Ача ăна тирпейсĕр тыткаласан, кĕнекерен нимĕн те юлмасть».

Тепĕр тăватă кунтан Андриян кĕнекене тавăрса пама библиотекăна кĕнĕ.

— Мария Андреевна, акă «Нарспие» тавăрса паратăп,— тенĕ вăл.

Мария Андреевна тӗлӗнсех кайнӑ: кӗнеке вӗрҫӗнӗ пек пулнӑ.

— Эпӗ ун ҫӗтӗлнӗ страницисене тирпейлӗ ҫыпӑҫтартӑм, хуплашкине ҫӗнӗрен турӑм,— вӑтанарах каланӑ Андриян.— Библиотека кӗнеки-ҫке вӑл. Ыттисене вулама кирлӗ.

— Маттур,— тенӗ Мария Андреевна.—Ыттисен те ҫакӑн пек пуласчӗ, вара пӗр кӗнеке те ҫӗтӗлмен пулӗччӗ.

*Юхма Мишши.*

1. Андриян кӗнеке вулама юратни мӗнрен курӑнать?
2. Библиотекарь ӑна мӗнле кӗнеке панӑ?
3. Андрияна мӗншӗн кӗнеке тусӗ теме пулать?

**Ваттисен сӑмахӗ.**

Кӗнеке пурне те пӗлет.

**Тупмалли юмах.**

Ани шурӑ, вӑрлӑхӗ хура.

## Аслă Ленин пирĕнпе ялан.



### Апрель.

Шăнкăрчсем хавас юрлаççĕ,
шарласа шывсем юхаççĕ,
йăмрасем кăчка лараççĕ,
        чаплă-çке апрель.
Çепĕç çеçпĕлсем тухаççĕ,
хурăнсем ăшша туяççĕ,
çамрăк çулçă кăлараççĕ,
        чаплă-çке апрель.
Тракторсем хирте ĕçлеççĕ,
тарăн касăсем чĕреççĕ,
тăрисем çӳлте вĕçеççĕ,
        чаплă-çке апрель.

Апрельте çуралнă Ленин,
çут хĕвел — телей хĕвелĕ,
çавăнпа татах илемлĕ,
чаплă-çке апрель.

*В. Алентей.*

?

1. Апрель уйăхĕнчи çутçанталăк мĕншĕн чаплă?
2. Сăввăн юлашки пайĕнче В. И. Ленин çинчен каланине тепĕр хут вулăр. Эсĕ вăл йĕркесене мĕнле ăнланатăн?
3. Сăвва пăхмасăр калама вĕрен.

## Ильичăн ача чухнехи тата шкулта вĕреннĕ чухнехи çулĕсем.

*(А. Ульянова, Ленин аппăшĕ, каласа пани.)*

I

Володя пилĕк çултах вулама вĕренчĕ. Вулама ăна анне вĕрентрĕ. Оля та вулама питĕ юрататчĕ. Пирĕн атте ачасем валли журнал, кĕнеке нумай çырăнса илетчĕ. Вĕсене Володьăпа Оля пит юратса вулатчĕç.

Истори çинчен çырнă калавсене те вулама вĕренчĕç, сăвăсем те калама пĕлетчĕç. Вуласа йăлăхсан, Ольăпа Володя выляма чупатчĕç. Пуринчен ытла шавлă вăйăсене юрататчĕç. Çулла вĕсем «хура патакла» вылятчĕç. Володя ку вăййа питĕ юрататчĕ. Хĕлле картишĕнче юр купаласа тунă тăвайккинчен çунашкапа ярăнма килĕштеретчĕ, ӳсерехпе конькипе ярăнатчĕ.

## II

Гимназие, пĕрремĕш класа, Володя тăхăр çул çурăра кĕчĕ. Володьăна вĕренме çăмăлччĕ, вăл хаваспа вĕренетчĕ. Унăн ăстăнĕ те, пултарулăхĕ те пысăкчĕ. Атте ăна тăрăшса вĕренме, хушнине тĕплĕ тума хăнăхтарса пыратчĕ. Тата çакна астăватăп. Учительсем те ун çинчен: «Володя класра урок ăнлантарнине тимлĕн итлесе ларать, çавă ăна питĕ пулăшать»,— тетчĕç.

Володя гимназирен таврăнатчĕ те аттене урокра мĕн вĕренни çинчен каласа паратчĕ. Хăйĕнчен мĕн ыйтни, хăй мĕн хуравлани çинчен калатчĕ. Володя пур предметпа та яланах «5» паллă илетчĕ.

Вăл пиччĕшне питĕ юрататчĕ, çавăнпа пур вактĕвек ĕçе те Саша пек тума тăрăшатчĕ. Володьăран: «Эсĕ мĕнле выляс тетĕн?» — тесе ыйтсан, тӳрех каламастчĕ, малтан Саша çине пăхса илетчĕ. Саша вара юриех, ним чĕнмесĕр, шăллĕ çине пăхса ларатчĕ. Эпĕ те унран кулкаласа илеттĕм. Анчах Володя, кулнине-мĕнне пăхмасăрах: «Саша пек» — тесе хуратчĕ.

?

1. Володя мĕнле вăйăсем выляма юратнă?
2. Шкулта вăл мĕнле вĕреннĕ?
3. Учительсем Володя çинчен мĕн каланă? Тупса вула.
4. Ульяновсен çемйинчи ачасем туслă пулни мĕнрен курăнать?
5. Володя мĕншĕн пур ĕçе те Саша пек тума тăрăшнă?

## Задачник.

I

Володя Ульяновпа пĕр класра чухăн çын ачи— Кузнецов Миша вĕреннĕ. Мишăн ашшĕ пуянсем патĕнче ĕçленĕ. Ĕçĕшĕн ăна питĕ сахал тӳленĕ. Хăйĕн ачи гимназире вĕреннĕшĕн тӳлеме унăн çĕрĕн-кунĕн ĕçлеме тивнĕ.

Шкула çӳремелли тумтирĕ те унăн кивĕскер кăна пулнă. Вĕренмелли кĕнекесене пурне те илсе пама та ашшĕн укçи çитеймен.

Пĕррехинче Миша урока задачăсене шутламасăр пынă.

— Кузнецов,— тенĕ ăна учитель хыттăн,— эсĕ мĕншĕн киле панă ĕçе пурнăçламан?

Мишăна вăл доска умне чĕнсе кăларнă. Шуранка та хытканскер, Миша доска умĕнче пуçне пĕксе тăнă. Вăл пĕр сăмах та чĕнме хăяйман.

— Эсĕ мĕншĕн нимĕн те каламастăн?— ыйтнă унран учитель.

— Манăн задачник çук,— тенĕ вăл шăппăн.

— Задачник çук?! Мĕншĕн çук-ха вăл санăн? Гимназире вĕренекенĕн пур кĕнеке те пулмалла!

— Атте илсе парĕ,— хуравланă Миша, куççульне çăтса.— Укçа илсенех илсе парĕ.

— Пур-и сирĕн укçа, çук-и — мана пурпĕрех!— кăшкăрнă учитель.— Кĕнекене паянах илмелле.

Миша хуйхăллăн хăйĕн вырăнне кайса ларнă. Вăл кĕнеке илме укçа мĕнле тупасси çинчен шухăшланă.

## II

Перемена вăхăтĕнче ун патне Володя пынă.

— Ме, ил,— сĕннĕ вăл Мишăна хăйĕн кĕнекине.— Халлĕхе вăл санăн пултăр.

Савăнса кайнă Миша кĕнекене ярса тытнă, анчах çав вăхăтрах именчĕклĕн:

— Ху вара кĕнекесĕр мĕнле?— тесе ыйтнă.

— Маншăн ан пăшăрхан,— хуравланă ăна Володя.— Эпĕ задачăсене çырса илтĕм, вĕсене килте шутлăп. Ил, ил, ан хăра.

Кăшт чĕнмесĕр тăнă хыççăн çапла хушса хунă:

— Эсĕ мĕншĕн мана кун пирки малтан каламан?

Вĕсен çумĕнчен Петьăпа Виктор иртсе пынă.

— Мĕн тума кирлĕ-ши Ульянова çак ыйткалакансем?!— юриех Володьăпа Миша илтмелле каланă Петя.

— Кĕнеке илме те укçи çук, çапах гимназие сĕкĕнеççĕ,— килĕшнĕ кунпа Виктор.

— Ун пек ыйткалакансене гимнази çывăхне те ямалла мар тет манăн атте,— малалла тăснă Петя.

Володя вĕсен еннелле хăвăрт çаврăннă та çапла каласа хунă:

— Манăн атте вара гимназире пур ачан та вĕренмелле тет! Эсĕ вĕсене ан итле, кайрăмăр,— тенĕ вăл ним тума аптранă Мишăна.

? 1. Миша мĕншĕн задача шутламан?
2. Унăн хуйхине кам ăнланнă?

3. Петьӑпа Виктор Мишӑна мӗн каланӑ? Тупса вула.
4. Калав тӑрӑх эсӗ мӗнле ӳкерчӗксем тунӑ пулӑттӑн?

## Ҫын йӗрӗ.

Пӗррехинче Володя Ульяновпа унӑн пиччӗшӗ Саша вӑрманпа пынӑ. Вӗсем кӑшт ҫеҫ палӑракан йӗрпе утнӑ. Ҫын таптанӑ курӑк тӳрленме тытӑннӑ, ура йӗрӗсем ҫулҫӑпа витӗннӗ ӗнтӗ. Ку йӗре ҫулҫӳрен хӑварнӑ паллӑсем тӑрӑх ҫеҫ чухлама май пулнӑ. Хӑй тасатнӑ ҫӑлкуҫ умне ҫав ҫын хурӑн хуппинчен тунӑ курка ҫакса хӑварнӑ. Иртен-ҫӳрен валли шыв ӗҫме. Пӗчӗк юханшыв урлӑ кашта хунӑ.

Саша пӑшӑрхана пуҫланӑ. Вӑл вӑрман хуралҫин ҫурчӗ патне тӳрӗ ҫулпа тухасшӑн пулнӑ, анчах ҫухалса кайнӑ.

— Епле пулсан та тухатпӑрах,— шухӑшланӑ Саша.— Анчах Володя ывӑнӗ, пӗчӗккӗ-ха вӑл.

Володя вара хаваслӑн кулса кӑна пынӑ.

— Мӗншӗн хӗпӗртетӗн эсӗ?–ыйтнӑ унран Саша.

— Эсӗ нимӗн те асӑрхамастӑн-им?—куҫне чеен хӗссе ыйтнӑ Володя.— Пирӗн умра ҫав тери ырӑ ҫын иртнӗ, мӗн чухлӗ пархатарлӑ ӗҫ туса хӑварнӑ вӑл хӑй ҫулӗ ҫинче.

Тӗлӗннипе Саша тӑпах чарӑнса тӑнӑ: епле-ха шкул ачи хӑй ҫулне кура мар ӑслӑ шухӑшлать? Унтан вӑл Володьӑна ҫапла каланӑ:

— Тӗрӗс, Володя, пурнӑҫа та хӑвӑн хыҫҫӑн ырӑ йӗр хӑварса, пархатарлӑн пурӑнса иртермелле.

*Н. Богданов.*

?

1. Володьăпа Саша мĕнле йĕр тăрăх пынă?
2. Володя мĕн пирки савăннă? Пиччĕшне вăл мĕнле хуравланă? Тупса вула.
3. Калавăн тĕп шухăшне палăртакан сăмахсене туп.

## Чернил кĕленчи.

Тĕрмере Ленин вунтăватă уйăх ларнă. Ăна пĕчĕк те çурма тĕттĕм камерăна хупнă. Унта сĕтелпе пĕчĕк пукан тата кравать анчах пулнă. Владимир Ильич çавăн пек камерăра та кунĕ-кунĕпе ĕçленĕ. Ирхине вăл гимнастика тунă, унтан çырма ларнă. Кунта Ленин революци çинчен питĕ кирлĕ кĕнеке çырма пуçланă. Унсăр пуçне, юлташĕсем патне, революци ĕçне мĕнле туса пымаллине вĕрентсе, çырусем çырнă. Çак ĕçсене тума çăмăл пулман.

Тăванĕсем Ленина кĕнекесем яра-яра панă. Ильич çав кĕнекесем çине çырма пуçланă. Анчах та вĕсене каялла тавăрса панă чухне питĕ тĕплĕн тĕрĕсленĕ. Кĕнекере мĕн те пулин çырнине асăрхасан, ăна çунтарнă. Сĕтпе çырнине вара никам та вулайман. Хута çулăм çинче тытсан çеç саспаллисем хăмăрланнă, çырнине вулама май пулнă.

Ленин та кĕнекесем çине сĕтпе çырнă. Чернил кĕленчине вăл çăкăртан тунă. Унăн юлташĕсем кун çинчен пĕлнĕ. Вĕсем Ленин мĕн çырнине пĕтĕмпех вулама пултарнă.

Пĕррехинче надзиратель алăк çинчи шăтăкран пăхнă та Ленин çырнине асăрханă. Вăл хăвăрт камерăна кĕнĕ.

— Эсир лекрӗр. Ман шутпа, халь ҫеҫ кӗнеке ҫине темӗн ҫыраттӑр,— тенӗ надзиратель.

Унтан вӑл кӗнеке ҫине пӑхнӑ. Кӗнеке тап-таса пулнӑ. Надзиратель чернил кӗленчине илме тӑнӑ. Ҫав самантра ӑна Ленин хӑй илнӗ те ҫӑварне чиксе чӑмлама тытӑннӑ.

— Эсир чернил кӗленчине ҫиетӗр-и?— ыйтнӑ тӗлӗнсе кайнӑ надзиратель.

— Ку вӑл чернил кӗленчи мар, ҫӑкӑр. Ҫавӑнпа эпӗ ӑна ҫиетӗп,—хуравланӑ лӑпкӑн Ленин.

Надзиратель тимлӗрех пӑхнӑ: чӑнах та ҫӑкӑр. Вӑл ним тума аптранипе камерӑран тухнӑ.

Ленин, надзиратель тухса кайсанах, ҫӑкӑртан тепӗр чернил кӗленчи тунӑ, унта сӗт янӑ та каллех ҫырма пуҫланӑ.

Тӗрмерен тухсан, Владимир Ильич юлташӗсене кула-кула ҫапла каласа панӑ:

— Пӗррехинче манӑн икӗ сехет хушшинче ултӑ чернил кӗленчи ҫисе яма тиврӗ.

Пурте кулса янӑ. Калаҫу мӗн ҫинчен пынине ӑнланманнисем тӗлӗннӗ: «Чернил кӗленчине мӗнле ҫиме пулать-ха?»

Хӑшпӗр чухне чернил кӗленчине те ҫиме пулать иккен.

*М. Зощенко.*

1. Тӗрмере В. И. Ленин мӗн ӗҫленӗ?
2. В. И. Ленинӑн тавҫӑрулӑхӗ мӗнрен курӑнать?
3. Владимир Ильич надзирателе мӗнле улталани ҫинчен каласа пар.
4. Ку калава вуласа, эсӗ В. И. Ленин ҫинчен тата мӗн пӗлтӗн?



## Ленин мавзолейĕнче.

Хуркайăк пек карталанса,
черет кĕтсе тăтăмăр.
Черет çитрĕ. Салют парса,
шăп малалла утрăмăр.

Хуллен-хуллен шăватпăр,
çамрăк чĕре карт! тăвать.
Акă çитрĕмĕр, пăхатпăр:
Ленин атте çывăрать...

Хуллен утса иртрĕмĕр
кантăк тупăк умĕнчен.
Пуçа тайса тухрăмăр
Ленин мавзолейĕнчен.

*Уйăп Мишши.*

?

1. Владимир Ильич Ленин мавзолейĕ ăçта вырнаçнă?
2. Ленин мавзолейне кĕнĕ чухне мĕншĕн кашниех хумханать?

## Ырӑ кӑмӑл.

Мускава çитсе курма мĕн чухлĕ ĕмĕтленмен-ши эпĕ? Мĕн чухлĕ кĕнеке вуламан-ши çĕршывӑмӑрӑн тĕп хули çинчен?! Акӑ халĕ эпĕ Мускавра, анчах тĕрлĕ сӑлтавсене пула манӑн паянах çула тухмалла. Мускав тӑрӑх çӳреме мĕнпурĕ те икĕ сехет кӑна вӑхӑт пур манӑн. Çавӑнпа эпĕ васкасах Хĕрлĕ площаделле, мавзолей патне, çул тытрӑм.

Акӑ мавзолей. Манӑн телее, паян вӑл уçӑ. Анчах курма килнисен черечĕ çав тери пысӑк. Эпĕ, черет вĕçне тупас тесе, васкасах ун айккипе çынсене хирĕç утрӑм. Пур-ши унӑн вĕçĕ? Те вӑхӑт ытла сахалран, те мавзолее питĕ кĕрсе курас килнĕрен, черет вĕçне тупасса сунмарӑм. Юлашкинчен тупрӑм-тупрӑмах.

Эпĕ пĕр ватა̆рах çынпа юнашар тӑтӑм. Вӑл эпĕ хумханнине сисрĕ пулас.

— Эсир питĕ хумханатӑр, тем пулман пулĕ вĕт? — тесе ыйтрĕ.

Ана хам Мускавра пĕрремĕш хут пулни тата икĕ сехетрен поездпа тухса каймалли çинчен каласа патӑм.

— Мавзолее кĕрсе курасах тетĕр пулсан, эсир мала кайӑр. Çынсене каласа парӑр та, вĕсем сире кĕртсе ярĕç... Çак черетре çынсем питĕ ырӑ кӑмӑллӑ, — ӑс пачĕ мана палламан çын.

— Вĕсем мана ĕненмесен те пултараççĕ. Суять ку тесе шутлĕç, — иккĕлентĕм эпĕ.

— Ку черетре çынсем нихӑçан та суймаççĕ, — терĕ вӑл, пат татса.

...Тавах сана, палламан ырă çын! Ун канашне итлесе, эпĕ çав кун мавзолейре пĕрремĕш хут пулса куртăм, çынсен ырă кăмăлне, пысăк шанăçне ĕмĕрлĕхех туйса илтĕм.

Ун хыççăн эпĕ мавзолейре темиçе хут та пулнă. Анчах пĕрремĕш хут Ленина кĕрсе курнине нихăçан та манмăп.

*Г. Ефимов.*

1. Мускава пынă кашни çын чи малтан ăçта пулса курма тăрăшать?
2. Автор В. И. Ленин мавзолейне мĕнле кĕрсе курнă? Каласа пар.
3. Вăл ырă кăмăллă çынсене тав туса çырнă вырăна тупса вула.

## Ленин.

Кам ал пачĕ
пире ӳкесрен,
кам хăтарчĕ
пире çĕрпӳртрен,
кам-ха уçрĕ
куçа пирĕнне,
пурнăç пачĕ
чăваш çыннине?
— Ленин, Ленин!

Кам-ха лартрĕ
пире тĕпеле
тус-йышпа
ыр курмашкăн пĕрле,
кам çĕклерĕ
пире тӳпене,
кам çитерчĕ
тĕнче уçлăхне?
— Ленин, Ленин!

*В. Давыдов-Анатри.*



## Эпир — Ильич мăнукĕсем.

Сахал-и пирĕн йышăмăр
ялта та хулара.
Мăнаçлă юрă хыврăмăр,
янрать вăл таврара.

Эпир Тăван çĕршывăн
мухтавлă ачисем,
ўсетпĕр паттăр, сывă
Ильич мăнукĕсем.

Вăй-хал пиллет ĕçхалăхĕ
пире хастар пулма.
Чĕнет кунçул пуласлăхĕ
çĕнтерўсем тума.

*Ю. Петров.*

?

1. Ильич мăнукĕсем тесе камсене калаççĕ?
2. Эсĕ октябрĕноксен правилисене пĕлетĕн-и? Аса илсе каласа пар.
3. Сăвва пăхмасăр калама вĕрен.

## Ленина асӑнса лартнӑ пӗрремӗш палӑк.

Ку палӑка 1924 ҫулхи январӗн 22-мӗшӗнче уҫнӑ. Вӑл халӗ те Ногинск хулинчен инҫех мар вырнаҫнӑ Глухов посёлокӗнчи пир-авӑр комбиначӗ умӗнче тӑрать. Юнашар мрамор хӑма татки ҫине ҫапла ҫырнӑ: «Ленина асӑнса лартнӑ тӗнчери пӗрремӗш палӑк».

1924 ҫулта Глуховри рабочисен пӗр ушкӑнӗ Горкӑра Ленин патӗнче хӑнара пулнӑ. Ун чухне Владимир Ильич йывӑр чирленӗ. Ҫак асран кайми тӗлпулу ячӗпе Глуховри рабочисем Ленин скульптурине лартма шутлаҫҫӗ. Ӗҫне ырӑнти художника Кузнецова шанса параҫҫӗ.

Кузнецовӑн шӑпи тӗлӗнмелле пулнӑ. Революциччен вӑл маляр пулса ӗҫленӗ. Малярӑн художник таланчӗ пурри, вӑл ӑстаҫӑ пулни фабрика хуҫисене пӗрре те кӑсӑклантарман. Унӑн ӗмӗчӗ революци хыҫҫӑн кӑна пурнӑҫланнӑ. Ҫак ҫынран рабочисем Ильич скульптурине тума ыйтнӑ.

Кузнецов кунӗн-ҫӗрӗн канӑҫа пӗлмесӗр ӗҫленӗ. Тӑм ҫӑрнӑ, йӑвалanӑ. Туса пӗтернӗ ӗҫне ватса, ҫӗнӗрен пуҫланӑ. Сарӑхнӑ хаҫатсенчи Ильич сӑнне вӗҫӗмсӗр тишкернӗ. Горкӑра хӑнара пулнӑ рабочисемпе те темиҫе хутчен тӗл пулса калаҫнӑ.

Юлашкинчен, январь варринелле, скульптура хатӗр пулнӑ. Ӑна уҫмалли кун ҫанталӑк сивӗ тӑнӑ. Ҫапах та фабрика умӗнчи площадь тулли халӑх пуҫтарӑннӑ.

Чаплӑ самант ҫывхарса пынӑ.

Кĕтмен çĕртен...

— Юлташсем! — тенĕ тахăшĕ. — Юлташсем, — вăл малалла калайман, йĕрсе янă. — Юлташсем, эпир халь çеç тӳсме çук йывăр хыпар пĕлтĕмĕр. Ĕнер, 6 сехет тę 50 минутра Горкăра Владимир Ильич Ленин вилсе кайнă...

Скульптурăна хуплана шурă пир çĕре ӳкнĕ. Рабочисен умĕнче малалла ăнтăлнă Ленин тăнă.

Глуховри рабочисем, чĕрĕ Ленина халалласа, скульптура лартма ĕмĕтленнĕ, анчах вăл палăк пулса тухнă. Кайран пĕлнĕ, çак палăк Ленина асăнса лартнă тĕнчери пĕрремĕш палăк пулнă.

*И. Владимиров.*

?

1. Глуховри рабочисем мĕн ячĕпе Ленин скульптурине лартма шутланă?
2. Ку ĕçе кама шанса панă?
3. Мĕншĕн скульптура палăк пулса тăнă?

# Мирпе ĕç уявĕ.




## Май уявĕ.

Килсе çитрĕ Май уявĕ,
кунĕ çутă та таса.
Çĕршыв тăрăх савнăç шавĕ
сарăлать-çке янраса.
Урамра халь хумлăн-хумлăн
вĕлкĕшеççĕ ялавсем.
Хĕрлĕ площадь капăр тумлă,
Хĕрлĕ площадьре — илем.
Ак оркестр. Пин-пин сасă
кĕрлет аслă урамра.
Кам чăтайтăр юрламасăр —
Май уявĕ çĕршывра.

*В. Давыдов-Анатри.*

1. Мĕнле уяв çитрĕ?
2. Май уявĕнче урамсемпе площадьсен сăн-сăпачĕ мĕнле улшăнать? Тупса вула.
3. Эсĕ Май уявне мĕнле кĕтсе илетĕн?

## Май уявĕ Мускавра.

Майăн пĕрремĕшĕ — пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн чаплă уявĕ. Çак кун кашни хулапа ялтах ĕççыннисем, ялавсем çĕклесе, урама тухаççĕ. Мускавра, Хĕрлĕ площадьре, демонстраци пулать.

Совет влаçĕн пĕрремĕш çулĕнчен пуçласах пирĕн çĕршыв Май уявне хавассăн та ирĕккĕн уявлама тытăннă. Çав кун Мускав çийĕн пĕртенпĕр самолёт вĕçсе иртнĕ. Лётчик уяв ячĕпе самолётпа вунсакăр хут пуçхĕрлĕ çавrăнса кăтартнă.

Халĕ уяв кунĕ пур çĕрте те хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ. Урамсенче савăнăçлă ĕççыннисен колоннисем иртеççĕ. Кашнин аллинче чечексемпе ялавсем. Пирĕн çĕршыва ертсе пыракансем тата урăх çĕршывсенчен килнĕ хăнасем вĕсене ăшшăн саламлаççĕ.

## Маёвка.

### I

Терушпа Уртюк палăртнă вырăна — кивĕ хурал пӳрчĕ патне — çитрĕç. Эпир вăтăр тăваттăн пултăмăр ĕнтĕ: сакăр комсомолец, çирĕм ултă пионер.

Эпир хумханатпăр. Халь-халь кулаксен ӳсĕр сассисем илтĕнсе каяссăн, пуçсем çийĕн патаксем,

чулсем шăхăрассăн туйăнать. Кăтра Микулай, аскăнчăк куштан, пирĕн пĕлтерĕве çурса тăкма та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ.

— Çавах тунă,— тарăхса калаçать Яков,— лектĕр-ха пĕрре ман алла.

Акă Роман Федотов картишĕнчен ачасем кивĕ тăрантас кустарса тухрĕç. Трибуна хатĕр. Ун çине хура çӳçлĕ Гаврил Орлов хăпарса тăчĕ.

— Сывă пултăр Майăн 1-мĕшĕ!—тесе кăшкăрчĕ вăл пĕтĕм ял илтмелле.

Митинг пуçланчĕ. Халăх пухăнма пуçларĕ. Унтан вулăсри парти ĕçне йĕркелекен сăмах илчĕ. Вăл каланине эпир питĕ тимлĕ итлерĕмĕр. Çирĕп большевик хĕрӳллĕ сăмах каларĕ.

## II

...Митинг вĕçленнине пĕлтерсе, хуткупăс сасси илтĕнчĕ. Комсомолецсемпе пионерсем колоннăна йĕркеленсе тăчĕç. Малтан юрă йăвашшăнрах, унтан çирĕппĕнрех те хыттăнрах янраса кайрĕ:

Харăссăн утар, юлташсем,
çапăçура вăйланар.
Ирĕклĕх, танлăх çĕршывне
кăкăрсемпе çул хывар...

Эх, кайрăмăр хайхи! Юрăра калана пек, харăссăн, ирĕклĕн утаççĕ аслă урампа çамрăк коммунарсем.

Юрă вăйланнăçемĕн вăйланать, сенкер тӳпене ярăнса хăпарать, пĕлĕте перĕнсе, çĕр çине каялла анать, унтан, çĕнĕ хумпа çунатланса, каллех çӳлелле талпăнать...

## III

Пысăк уçланкăра чарăнтăмăр. Гаврил Орлов пĕветнĕ тутăртан тунă ялава çӳллĕ шалча çине çирĕплетрĕ. Пурте пĕр ушкăна пухăнса лартăмăр. Вулăсри парторганизатор Аврам рабочисен пирвайхи маёвкисем çинчен, Ленин çинчен каласа панине пĕр сăмах сиктермесĕр итлесе лартăмăр.

Килсене çĕкленӳллĕ кăмăлпа таврăнтăмăр.

Ялта пĕрремĕш маёвка ячĕпе кашниех çăка йывăççи лартрĕ.

*А. Сымокин.*

1. Пионерсемпе комсомолецсем мĕнле уяв irттерме пухăннă?
2. Вĕсем мĕн пирки хумханнă?
3. Митинг мĕнле иртнĕ?
4. Вулăсри парторганизатор ачасене мĕн çинчен каласа панă?
5. Текстăн пайĕсене тепĕр хут вуласа тух, ят пар.

## Майăн 9-мěшě — Çěнтерÿ уявě.



### Çěнтерÿ кунě.

Пěр илемлě çуллахи ир Германи çарě пирěн çěршыв çине вăрă-хурахла тапăнса кěчě. Фашистсем пире чура тăвасшăн пулчěç.

Малтанхи тапхăрта, сасартăк тапăннипе, тăшман хула хыççăн хула илчě. Вăл пирěн хуласемпе ялсене çунтарчě, çынсене пере-пере вěлерчě.

Анчах Совет Çарě Мускав патěнче фашистсене хытă аркатрě, каялла хăвалама тытăнчě.

Пин те тăхăрçěр хěрěх пиллěкмěш çулхи майăн 9-мěшěнче Германие тěппипех парăнтарчě. Нумай халăх ирсěр фашистсен пусмăрěнчен хăтăлчě. Тěнче ирěккěн сывласа ячě.

Совет халăхĕ çак куна Çĕнтерÿ кунĕ тесе ят пачĕ. Ăна халь кашни çул савăнăçлăн уявлаççĕ.

*С. Юшков.*

1. Фашистсем пирĕн çĕр çине мĕнле тĕллевпе тапăннă?
2. Тăшман çĕршыва мĕнле хур кÿнĕ?
3. Совет Çарĕ фашистсене чи малтан ăçта аркатнă?
4. Тăшмана çĕнтернĕ куна мĕнле паллă тăваççĕ?

## Гастелло паттăрлăхĕ.

Кăвак тÿпере хурçă кайăк вĕçет,
çуначĕ çинче хĕрлĕ çăлтăр çиçет.
Пăхать вичкĕн куçлă пилот çĕр çине,
унта хура тĕтĕм хуплать çĕрсене.
Анчах... такăлтатрĕ таçта пулемёт —
сиссе юлаймарĕ хăюллă пилот...
Мĕн пулчĕ, мĕн пулчĕ ăна ăнсăртран?
Аманчĕ-çке кайăк хăрах çунатран.
Çапах ир ан савăн, фашист-юнĕçен!
Пилот çапăçасшăн вăй-хал юлмиччен.
Ак чăмрĕ вут кайăк тÿрех çĕрелле —
тăшман машини кĕпĕрленнĕ тĕле.
Ялав пек хĕп-хĕрлĕ çĕкленчĕ хĕм-вут...
Кĕл пулчĕ, тĕп пулчĕ унта çичĕ ют...
Çапла пусне хучĕ Гастелло, анчах
пурнать ун сăнарĕ, ыр ячĕ асрах.
Хастар ăмăрткайăк! Сан паттăр ĕçне
манмасть пирĕн халăх, манмасть ĕмĕрне.

*М. Бажан.*

? 1. Сăвăра мĕнле «хурçă кайăк» çинчен каланă?
2. Гастеллăн паттăрла ĕçĕ çинчен каласа пар.

## Ваттисен сăмахĕ.

Кам çĕршыва юратать, вăл тăшмана кураймасть.

## Антун çемйи.

Икĕ эрне ĕнтĕ Ульянăпа амăшĕ пĕр татăк çăкăр та çисе курман. Фашист салтакĕсенчен пытарма ĕлкĕрнĕ çăнăхран салма пĕçеркелесе çисе пурăннă. Ана та вăрттăн, салтаксем килте çук чухне çеç пĕçернĕ. Курсан, лешсем калаçса тăман, вăйпа туртса илсе çинĕ. Фашистсемшĕн кил хуçи хĕрĕпе амăшĕ выçă пурăнни ним те мар. Вĕсене хирĕç сăмах чĕнме çук. Тӳрех е çапса амантаççĕ, е персе пăрахаççĕ. Вĕсем тискер кайăкран тискертерех.

Тăшман çарĕ хĕвеланăçнелле чакнă. Вĕсене партизан отрячĕсем кĕтмен çĕртен тапăна-тапăна çĕмĕрнĕ.

Пĕрре Ульяна амăшĕ яшка пĕçерме тытăннă. Çав вăхăтра тултан кантăка хуллен шакканă. Карчăк кантăкран пăхнă та шартах сикнĕ. Хăранипе унăн аллинчи шыв курки те тухса ӳкнĕ. Шаккаканни Ульяна пиччĕшĕ Антун пулнă.

Антуна тата пилĕк колхозника фашистсем тытса кайнă пулнă. Вĕсене, коммунистсемпе комсомолецсем тесе, персе вĕлермелле тунă. Малтан хăйсенех шăтăк алттарнă, унтан персе пăрахнă. Вĕсене пытарнă вырăна Ульянăпа амăшĕ темиçе

хутчен те кая-кая йёнё. Халё акă çав персе вёлернё çын кантăк умёнче тăрать.

Пеме команда парсан, Антун пуçне айккинелле пăрма ёлкёрнё иккен: фашистсен пули майран çеç шăйăрттарса кайнă. Антун вилнё пек пулса выртнă. Ăна вилнё тесе шăтăка персе хăварнă. Шăтăкран тухсан, вăл нумай çёрте çӳренё. Çӳресен-çӳресен, партизансен отрядне тёл пулнă. Халё вăл— партизан. Вăл отрядпа пёрле хăйсен ялёнчи фашистсене пётерме килнё. Юлташёсем ял тулашёнче юлнă. Антуна штаб ăçта вырнаçнине пёлме янă.

— Эпё вилмен-ха, чёрё. Пирён пурсăмăрăн та фашистсене хирёç кёрешмелле,—терё Антун амăшёпе йăмăкне.

— Пичче, эпё те санпа пыратăп,—терё Ульяна. Вăл вунпиллёкре-çке-ха.

— Вилсен те, чёрё пулсан та, ачасем, пёрле. Фашистсен мăшкăлне тӳссе пулмасть. Эпё те сирёнтен юлмастăп,—терё амăшё те.

Ульянăпа амăшё вăрман еннелле утрёç.

Вăхăт нумай та иртмерё, ялта пăшал пенё сасăсем, гранатăсем ухлатса çурăлни илтёнчё.

Фашистсем ялтан пёри те тухса каяймарёç.

*М. Данилов-Чалтун* çырни тăрăх.

1. Фашистсем ялта тăнă чухне Ульянăпа амăшё мёнле пурăннă?
2. Фашистсем хăйсене мёнле тыткаланă?
3. Антун вилёмрен мёнле майпа хăтăлнă?
4. Партизансем яла мён тума килнё?
5. Калавăн хăш пайне вуланă чухне питё савăнтăн? Ăна вуласа пар.

# Çулла.



## Çу çитрĕ.

Çу çитрĕ. Хĕвел хĕртсе пăхать. Кăнтăрла шăрăх, каçхине, хĕвел ансан, сулхăнлатать. Кун пек кунсенче çумăр çăвасса чăтăмсăррăн кĕтетĕн.

Вăрманта тата пахчара çырла пиçме пуçларĕ. Чи малтан çĕр çырли пиçрĕ, ун хыççăн хăмла çырли пиçме тытăнчĕ. Хирте кĕçех ыраш пулса çитĕ.

Колхозра хĕрӳ ĕç вăхăчĕ пуçланчĕ. Колхозниксем çулса пăрахнă утта тавăраççĕ, пуçтараççĕ.

Шкул ачисем каникулта пысăккисене пулăшаççĕ. Вĕсем садра, çимĕç пахчинче ĕçлеççĕ. Йăрансене çумкурăкран тасатаççĕ, кăпкалатаççĕ, шăвараççĕ. Ĕçрен пушаннă вăхăтра шыва кĕреççĕ, хĕвел

çинче хěртěнеççě, сывлăха çирěплетеççě. Вăрмана çырла, кăмпа татма çÿреççě.

Ачасенчен чылайăшě пионер лагерěсенче канать. Вěсем кунта вăхăта савăнăçлă та усăллă ирттереççě: тěрлě вăйăсем выляççě, походсене çÿреççě, кěнеке вулама та манмаççě.

1. Çулла çанталăк мěнле?
2. Колхозниксен çуллахи ěçěсем çинчен каласа пар.
3. Ачасем çулла мěн тăваççě?
4. Эсě çу кунěсене мěнле ирттерме шутлатăн?

## Малтанхи аслати.

Кăнтăрлахи тÿпе уярччě,
çуса тасатнă пек таса.
Анчах та пěлěт кăвакарчě,
таçтан вăл тухрě капланса.

Нÿрелчě сывлăш. Çутçанталăк
шав тěттěмленчě ерипен.
Ял çумěнчи лаштра çăкалăх
шăп пулчě пек. Тем сисрě, тен.

Сасартăк аслати сассийě
шартлатрě, шăплăха татса,
вара вăл кайрě улăх çийěн
кěмсěртетсе, кăлтăртатса.

Пÿртсем çине çывхарнăçемěн
шěвелчěç тěксěм пěлěтсем.
Пуçланчě шăпăр-шăпăр çемě,
ташларěç кěмěл пěрчěсем.

*А. Алка.*

1. Çумăр умĕн çанталăк мĕнле улшăнать?
2. Сăвăра çуллахи çумăр çинчен мĕн каланă?
3. «Ташларĕç кĕмĕл пĕрчĕсем» тенине мĕнле ăнланатăр?
4. Çуллахи çумăра мĕншĕн питĕ кĕтетпĕр?

**Тупсăмне туп.**

**Аслăк çинче тимĕр кăвак лаша кĕçенет.**

## Светлана купăсти.

Шкул пахчинче Светлана ир пулакан купăста калчи лартнă. Калчи калчах ĕнтĕ: тымарĕ, туни тата тăвата çулçă. Ытти ачасем пекех, вăл та хăйĕн купăстине шăварать, купалать, кăпкалататать.

Анчах çу варринче, юнашар йăрансем çинчи купăста çулçисене саркаласа кăна ларнă вăхăтра, хĕрачан купăсти чăмăртанма та ĕлкĕрнĕ.

Купăстана пуçтарса кĕртме Светланăна ачасем те пулăшрĕç. Светлана вĕсене купăста кучанĕсене çӳлерехрен касма хушрĕ.

— Кучанĕсем мĕне кирлĕ? — тĕлĕнчĕ Валерик.

— Света вĕсене илемĕшĕн йăран çинчех хăварасшăн пулмалла, — кулса ячĕ Ванюк.

— Кайран курăр-ха мĕншĕн хăварнине, — шахвăртса каларĕ вĕсене Светлана.

Купăста пуçĕсене пухса купаласан, Ванюк çапла каларĕ:

— Чее вăл, пирĕн Света...

— Чее çав, — малалла тăсрĕ Ванюк. — Ир пулакан купăста лартрĕ те никамран малтан пуçтарса кĕртрĕ, халь ĕнтĕ ирĕклĕн савăнса çӳрĕ.

Хĕрача чĕнмерĕ. Анчах тепĕр кунне вăл та ыттисемпе пĕрлех пахчана пычĕ.

— Ачасем, пăхăр-ха, пирĕн Света хăйĕн кучанĕсене касма килнĕ,— кулса ячĕ Ванюк.

— Света, сана пулăшас-и?—тăрăхласшăн пулчĕ Валерик та.

Купăста хуçи нимĕн те шарламарĕ. Вăл кучансене йĕри-тавра купалама тытăнчĕ.

Ахалех кулнă иккен Ванюкпа Валерик. Кĕркунне пурте курчĕç: Светланăн йăранĕнчи кучансем çинче шак хытă купăста пуçĕсем ӳссе ларнă.

— Ĕненес те килмест: пĕр тунаранах — икĕ пуç!— тĕлĕнчĕç ачасем.— Çитес çул эпир те çак купăстана лартăпăр.

*Б. Данилов.*

?

1. Светлана мĕнле купăста лартнă?
2. Унăн йăранĕ çинчи купăстана пĕрремĕш хут хăçан каснă?
3. Юлташĕсем Светланăран мĕнле тăрăхланă?
4. Светлана купăста кучанĕсене мĕншĕн йăран çине хăварнă?
5. Кĕркунне ачасем мĕнле шут тытнă?
6. Панă планпа усă курса, калава 4 пая уйăр: 1) Светлана купăсти хăвăрт ӳсет. 2) Купăста каснă чухнехи чеелĕх. 3) Светлана кучансене тăрăшса пăхать. 4) Пĕр тунаран — икĕ купăста.

## Вată хурама вăрттăнлăхĕ.

Пĕр кун ирхине эпир виççĕн вăрмана кайрăмăр. Пĕчĕк сукмакпа Хырла шывĕ еннелле утатпăр.

Микулай мучи хавхалансах пире чĕрĕ барометрсем ҫинчен каласа парать:

— Кайăк-кĕшĕк, хурт-кăпшанкă ҫумăр ҫăвассине кăна мар, ҫуркунне хăҫан пулассине те, ҫу епле пулассине те пĕлтерме пултараҫҫĕ. Хĕвеллĕ кун ир-ирех тăри тӳпере юрланине илтсессĕн, ыран та уяр ҫанталăк пулассине шансах тăр. Каҫкӳлĕм шапасем чылайччен кваклатни те, текерлĕк час лăпланманни те уярах пĕлтерет. Ҫĕрле те ыран уяр пулассине пĕлме пулать.

— Мĕнле майпа? — тӳрех ыйтрăм эпĕ.

— Ҫутатакан хуртсем ҫап-ҫутах пулсассăн, тепĕр кун уяр пулмалла.

— Ҫумăр ҫăвасса мĕн систерет? — пĕлесшĕн пултăм эпĕ.

— Тăри ирхине юрламасть, чакаксем вара, пĕр ҫĕре пуҫтарăнса, вĕҫĕмсĕр чаклатма тытăнаҫҫĕ. Ун пек чухне тепĕр кун ҫумăр пуласси паллах. Ҫумăр пуласса эрешмен те систерет.

— Мĕнле?

— Карти айне пытанать... Кăлăк чăххи те ҫумăр пуласса систерет. Ҫумăр пуҫланиччен пĕр сехет маларах чĕпписене пуҫтарса, хӳтте ларать.

— Ҫу епле пулассине мĕнле пĕлмелле?

— Ҫуркунне хурт нумай пулни ҫу шăрăх килессе систерет. Йывăҫсем те ҫакна сисеҫҫĕ. Юман кавăрҫран, хурăн ҫирĕкрен маларах папка кăларни — ҫу шăрăх пуласса.

— Кавăрҫ юманран, ҫирĕк хурăнран маларах папка кăларни ҫу йĕпе пуласса-и?

— Тĕрĕс, йĕпе пуласса. Çуркунне хурăн шывĕ нумай пулни те — çу йĕпе пуласса. Чĕкеçсем йăвисене хĕвел енне тума тытăнни — çу сивĕ пуласса.

— Ăçтан пĕлетĕн-ха эсĕ, Микулай мучи, çакна пĕтĕмпех? — чăтаймасăр ыйтрăм эпĕ.

— Кун çинчен мана ватă хурама каласа кăтартать, — чеен куларах хуравларĕ мучи, умри сарлака та кутамас йывăç çине кăтартса.

— Мĕнле каласа парать?

— Çулçисем, шăпăл-шăпăл шăпăлтатса, юрла-юрла каласа параççĕ.

— Шӳтлет вăл, — сăмах хушрĕ Тимук. — Çутçанталăка сăнать те вăл, çавăнпа темĕн те пĕлет...

Эсир, ачасем, пĕр-пĕр ватă хурама е ватă çăка вăрттăнлăхне пĕлес тесе шухăшланă-и?

*Юхма Мишши.*

?

1. Çанталăк уяр пулассине мĕн тăрăх пĕлме пулать? Тупса вула.
2. Çумăр хăçан пулассине Микулай мучи мĕнле пĕлет? Тупса вула.
3. Çу епле пулассине мĕнле паллăсем кăтартаççĕ?
4. Микулай мучи çутçанталăк вăрттăнлăхĕсене мĕншĕн нумай пĕлет?

## Лăпкă ир.

Ăшă çумăр шăпăртатрĕ,
лăпкăн çурĕ ирхине.
Ешĕл сад, уй-хир юратрĕ
унăн тăрă шерпетне.

Хӗвел тухрӗ те ҫутатрӗ,
куҫне уҫрӗҫ чечексем.
Шӑрҫа евӗр йӑлтӑртатрӗҫ
ҫутӑ сывлӑм пӗрчисем.

Юрласа тӑри хӑпарчӗ
янкӑр тӑрӑ тӳпене.
Тулӑ пуссинче сас пачӗ
пӗчӗкҫеҫҫӗ путене.

*В. Веселов.*

1. Ҫуллахи ҫумӑр ҫинчен мӗн каланӑ? Тупса вула.
2. Ҫуллахи ӑшӑ ҫумӑр хыҫҫӑн тавралӑх мӗнле улшӑнать?
3. «Куҫне уҫрӗҫ ҫеҫкесем» тенине мӗнле ӑнланатӑн?

## Тӑватӑ ӗмӗт.

Хӗл ҫитнӗ. Мӗтри тӑвайкки ҫинчен ҫунашкапа ярӑннӑ. Ярӑнса ывӑнсан, вӑл киле хӗп-хӗрлӗ хӗрелсе таврӑннӑ та ашшӗ ҫумне пырса ларнӑ.

— Эх, атте, хӗлле епле аван, савӑнӑҫлӑ! Яланах хӗл пулсан, эпӗ питӗ савӑнӑттӑм,— тенӗ вӑл ашшӗне.

Ашшӗ Мӗтри сӑмахӗсене ҫырса хунӑ.

Ҫур ҫитнӗ. Мӗтри ула-чӑла лӗпӗшсем хыҫҫӑн чупса киленнӗ, чечексем татнӑ. Унтан ашшӗ патне пынӑ та:

— Епле аван ҫуркунне!— тенӗ.— Ялан ҫуркунне пулсан, мӗнле аван пулӗччӗ.

Ашшӗ Мӗтрин ку сӑмахӗсене те ҫырса хунӑ.

Ҫу ҫитнӗ. Мӗтри ашшӗпе пӗрле утӑ ҫулма кай-

нă. Вăл кунĕпех савăнса çӳренĕ: пулă тытнă, çырла татнă, тутлă шăршлă утă çинче йăваланнă.

— Çулла нихăçан та ан ирттĕр,— тенĕ Мĕтри каçхине.

Ашшĕ Мĕтрин ку сăмахĕсене те çырса хунă. Кĕр çитнĕ. Çынсем пахчара çимĕçсем, хĕп-хĕрлĕ панулмисем, сарă грушăсем пуçтарнă. Мĕтри тем пек хаваслаңнă.

— Кĕр — çулталăкăн чи лайăх вăхăчĕ,— тенĕ вăл ашшĕне.

Ашшĕ хăйĕн пĕчĕк кĕнекине кăларнă та ывăлĕ хĕл çинчен те, çур çинчен те, çу çинчен те çакăн пекех ырласа каланине вуласа панă.

*К. Ушинский.*

1. Мĕтри çутçанталăкăн кашни вăхăчĕ çинчен мĕн каланă? Тупса вула.
2. Калава 4 пая уйăр. Кашни пай тăрăх сăмахлă ӳкерчĕк ту.
3. Сана çулталăкăн хăш вăхăчĕ ытларах килĕшет? Мĕншĕн?

## Юханшыв хĕрринче.

Çаврăнса юхать Çавал  
ешĕл улăх варринче.  
Хум ташши çиçет йăл-ял  
выляса ачаш çилпе.

Сулахай çыран сĕвек,  
сарă хăйăр тăршшĕпех.



Хĕвĕшетпĕр кăткă пек
çавăнта мĕн иртенпех.

Сăпкари пек яrăнса
чӳхенетпĕр юхăмра.
Хăйăр хатĕр — ывăнсан,
вырт та кан çеç айлăмра.

Тепĕр чух эпир пулла
килĕпĕр ирпе кунта.
Мĕн тери аван çулла,
çуллахи каникулта!

*Ю. Петров.*

1. Çавал шывĕ çинчен мĕн каланă? Тупса вула.
2. Ачасем юханшыв хĕрринче мĕн тăваççĕ? Тупса вула.



Ыйтусемпе усӑ курса, ӳкерчӗк тӑрӑх пӗчӗк калав ту.

?

1. Ӳкерчӗке тимлӗн сӑна. Унта ҫулталӑкӑн хӑш вӑхӑтне сӑнласа панӑ?
2. Мӗнле ҫанталӑк тӑрать?
3. Ачасем ӑҫта килнӗ?
4. Вӗсем мӗн тӑваҫҫӗ? Йӗркипе каласа пар.
5. Учитель ачасене мӗн каласа парать-ши?

**Пӗтӗмӗшле ыйтусемпе ӗҫсем.**

1. Ҫу вӑхӑчӗ ҫинчен эсӗ мӗнле сӑвӑсем, калавсем вуларӑн?
2. Ҫулла уй-хир, пахча, вӑрман мӗнле улшӑннине кала.
3. Ҫынсем хирте, пахчара мӗн-мӗн ӗҫлеҫҫӗ? Эсӗ мӗн ӗҫлетӗн?
4. Ҫуллахи вӑхӑт сана мӗншӗн килӗшет?

## ТУПМАЛЛИ

### Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв!

Тăван çĕршыв çинчен. *Ю. Яковлев* . . . . . 3
Çĕршывăмăр. *П. Хусанкай* . . . . . . . . 4
Чи савăнăçлă кун. *А. Алка* . . . . . . . . 6
Эпир пурăнакан çĕршыв. . . . . . . . . . 7
Тĕп хула. . . . . . . . . . . . . . . . 8
Тепĕр аслă хула. . . . . . . . . . . . . 9
Пирĕн çĕршыв пысăк та пуян. *С. Баруздин* . . —
Чăваш çĕршывĕ. *А. Артемьев* . . . . . . . 10
Ку вăл — ман Тăван çĕршыв. *П. Ялкир* . . . 11
Сунай паттăрăн хурçă учĕ. *Юхма Мишши* . . 12
Шуршăл. *Юхма Мишши* . . . . . . . . . 13

### Кĕркунне.

Ылтăн кĕркунне. *М. Трубина* çырни тăрăх. . . 15
Пилеш çупкăмĕ. *Ю. Петров* . . . . . . . . 17
Тăрнасем. *Илпек Микулайĕ* . . . . . . . . 18
Кăмпара. *Ю. Петров* . . . . . . . . . . 20
Пакша. *Илпек Микулайĕ* . . . . . . . . . 21
Хура кĕркунне. *С. Юшков* çырни тăрăх. . . 22
Кĕркунне. *К. Иванов* куçарнинчен. . . . . . 23

### Ноябрĕн 7-мĕшĕ—аслă уяв.

Аслă Октябрь. *А. Митяев* . . . . . . . . 25
Октябрь ялавĕ. *И. Малкай* . . . . . . . . 26
Хресченсем мĕнле пурăннă. *Л. Кон* . . . . . —
Владимир Ильич Ленин. *Н. Крупская* çырни тăрăх 30
Ĕлĕкхи шкул. *А. Алексеев* . . . . . . . . 33
Кĕпер çинче. *А. Кононов* . . . . . . . . 35

## Эпир—Октябрь ачисем.


Октябрёноксем. *П. Эйзин* . . . . . . . . . . 37
Октябрёнока епле пёлме пулать. *О. Бедарев* . . 38
Шкул ачи. *П. Хусанкай* . . . . . . . . . . 39
Карчăк. *В. Осеева* . . . . . . . . . . . . 40
Пĕчĕк пулăшакан. *О. Бедарев* . . . . . . . . 41
Кăвак çулçăсем. *В. Осеева* . . . . . . . . . 42
Амăшĕ мĕн каланă пулĕччĕ. *Л. Воронкова* . . 44
Чăрсăр автансем. *А. Кăлкан* . . . . . . . . 47


## Ĕç телей те савăнăç кӳрет.


Кая юлсан, каю шăтать. *В. Прохоров* . . . . . 48
Эпĕ сехет çĕмĕрни. *И. Яковлев* . . . . . . . . 49
Комбайнер пулатăп. *А. Ĕçхĕл* . . . . . . . . 50
Маша мĕнле пысăкланнă. *Е. Пермяк* . . . . . 52
Вĕçевçĕсем. *А. Кăлкан* . . . . . . . . . . . 54
Мухтанчăк çерçи. *Н. Иванов* . . . . . . . . . 55
Тĕлĕнтермĕш курăк. *Г. Волков* . . . . . . . . 56
Кулачă. *И. Яковлев* букварĕнчен. . . . . . . 57
Нарспи. *К. Иванов* . . . . . . . . . . . . . 58
Амăшĕн ĕçĕ. *С. Баруздин* . . . . . . . . . . 60
Ӳссен эсĕ кам пулан? *В. Давыдов-Анатри* . . 62
Маттур ачасем. *С. Пыркина* . . . . . . . . —
Мĕн шăрши? *Ю. Семенов* . . . . . . . . . . 64


## Хĕлле.


Çĕнĕ юр. *Р. Сарпи* . . . . . . . . . . . . . 66
Хĕл Мучи патĕнче хăнара. *В. Одоевский* . . . 67
Хурăн. *С. Есенин* . . . . . . . . . . . . . . 68
Пăрпа юр. *В. Ефимов* çырни тăрăх . . . . . . 69
Çĕнĕ çул. *А. Алка* . . . . . . . . . . . . . . 71
Сокольникири ёлка. *А. Кононов* . . . . . . . 72
Хĕл çитсен. *И. Малкай* . . . . . . . . . . . 74

## Чĕрчунсем—пирĕн туссем.

Шурă кăвакарчăн. *Илпек Микулайĕ* . . . . . 77
Чĕкеçсем мĕншĕн сивĕннĕ? *Г. Луч* . . . . . . 79
Кӳлĕ хĕрринче. *Г. Харлампьев* . . . . . . . . 81
Тăри. *И. Малкай* . . . . . . . . . . . . . 82
Пăчăр чĕппи. *Е. Чарушин* . . . . . . . . . 83
Çĕвĕç. *А. Савельев-Сас* . . . . . . . . . . 85
Вăрманти çапăçу. *Н. Иванов* . . . . . . . . . 86

## Халăх пултарулăхĕ.

**Юмахсем.**

Пакшапа Чакак . . . . . . . . . . . . . 89
Кашкăрпа Путек. *И. Яковлев* çырнинчен. . . 90
Çилпе Хĕвел. *К. Ушинский* çырнинчен. . . . 91
Аюкка (*Нанай халăх юмахĕ*) . . . . . . . . 92
Куккук (*Ненец халăх юмахĕ*) . . . . . . . . 95
Çăткăн Пак (*Корей халăх юмахĕ*) . . . . . 97
Эпĕ те атте пекех (*Пăлхар халăх юмахĕ*). . . 99

**Халăх юррисем.**

Тăри . . . . . . . . . . . . . . . . . . 100
Купăста . . . . . . . . . . . . . . . —
Юрла-юрла ĕçлер-и? . . . . . . . . . . . . —
**Ваттисен сăмахĕсем** . . . . . . . . . . . 101
**Тупмалли юмахсем** . . . . . . . . . . . —

## Пирĕн тăван Совет Çарĕ.

Хĕрлĕ Çар . . . . . . . . . . . . . . . 102
Манăн пичче. *А. Артемьев* . . . . . . . . 103
Похода. *А. Гайдар* . . . . . . . . . . . 104
Будайка ачи. *Юхма Мишши* . . . . . . . 106
Чапаев скверĕ. *Юхма Мишши* . . . . . . . 107
Чаплă палăк. *Ю. Семенов* . . . . . . . . 108

Паттăр салтак. *М. Румянцев* . . . . . . . . 109
Ăшă салам. *В. Алентей* . . . . . . . . . . 110
Василий Крюков. *А. Гайдар* . . . . . . . . . 111
Мир пурнăçа! Вилĕм вăрçа! *С. Шавли* . . . 112

## Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ.

Кам пире юратать? *А. Çулĕç* . . . . . . . . 113
«Аннене хăратса ӳкерер мар». *Г. Ефимов* . . . 114
Хурçă ут хуçи. *В. Иванова* çырни тăрăх . . . 116
Сăпка юрри. *И. Ивник* . . . . . . . . . . . 117
Амăшĕн парни. *Г. Ефимов* . . . . . . . . . —
Хăш вăхăтра çывăрать-ши анне? *Б. Данилов* . 118
Ытарайми анне. *Г. Мальцев* . . . . . . . . 120

## Килчĕ ырă çуркунне.

Çуркунне çитсен. *К. Иванов* . . . . . . . . 121
Çурхи çутçанталăк. *А. Артемьев* . . . . . . 122
Вĕçен кайăксем килни. *В. Ефимов* çырни тăрăх . 123
Шăнкăрч. *Н. Шелепи* . . . . . . . . . . . 124
Шăнкăрчсем. *М. Козлов* . . . . . . . . . . 125
Çурхи кун. . . . . . . . . . . . . . . . . 126
Пăр кайни. *С. Юшков* . . . . . . . . . . . 127
Пăр каять. *И. Малкай* . . . . . . . . . . . 129
Вăрмана шыв илни. *В. Бианки* . . . . . . . —
Çуркунне. *Н. Мартынов* . . . . . . . . . . 131
Хирсенче. *И. Соколов-Микитов* . . . . . . . 132
Йывăçсем çулçă сарни. *С. Юшков* çырни тăрăх . 133
Амантнă хурăнсем. *В. Давыдов-Анатри* . . . 134
Атьăр тухар, тантăшсем. *В. Давыдов-Анатри* . 135

## Апрелĕн 12-мĕшĕ—Космонавтика кунĕ.

Мухтанатпăр. *А. Кăлкан* . . . . . . . . . . 136
Андриян Николаев—кĕнеке тусĕ. *Юхма Мишши* 137

## Аслă Ленин пирĕнпе ялан.

Апрель. *В. Алентей* . . . . . . . . . . . . 139
Ильичăн ача чухнехи тата шкулта вĕреннĕ чухнехи çулĕсем. *А. Ульянова* каласа пани . . . 140
Задачник. . . . . . . . . . . . . . . . . 142
Çын йĕрĕ. *Н. Богданов* . . . . . . . . . . 144
Чернил кĕленчи. *М. Зощенко* . . . . . . . 145
Ленин мавзолейĕнче. *Уйăп Мишши* . . . . . 147
Ырă кăмăл. *Г. Ефимов* . . . . . . . . . . 148
Ленин. *В. Давыдов-Анатри* . . . . . . . . 149
Эпир—Ильич мăнукĕсем. *Ю. Петров* . . . . 150
Ленина асăнса лартнă пĕрремĕш палăк. *И. Владимиров* . . . . . . . . . . . . . . . . 151

## Мирпе ĕç уявĕ.

Май уявĕ. *В. Давыдов-Анатри* . . . . . . . 153
Май уявĕ Мускавра . . . . . . . . . . . . 154
Маевка. *А. Сымокин* . . . . . . . . . . . —

## Майăн 9-мĕшĕ—Çĕнтерӳ уявĕ.

Çĕнтерӳ кунĕ. *С. Юшков* . . . . . . . . . 157
Гастелло паттăрлăхĕ. *М. Бажан* . . . . . . 158
Антун çемйи. *М. Данилов-Чалтун* çырни тăрăх 159

## Çулла.

Çу çитрĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 161
Малтанхи аслати. *А. Алка* . . . . . . . . 162
Светлана купăсти. *Б. Данилов* . . . . . . 163
Вăтă хурама вăрттăнлăхĕ. *Юхма Мишши* . . . 164
Лăпкă ир. *В. Веселов* . . . . . . . . . . 166
Тăвата ĕмĕт. *К. Ушинский* . . . . . . . . 167
Юханшыв хĕрринче. *Ю. Петров* . . . . . . . 168

*Учебное издание*

**Сергей Павлович Юшков**
**Тамара Васильевна Артемьева**
**Роза Илларионовна Трокина**

**РОДНАЯ РЕЧЬ**

**ДЛЯ II класса**

На чувашском языке

М. К. Волков пĕтĕмĕшле редакциленĕ

Редактор Г. Г. Иванов
Художник Г. М. Онуфриева
Художественный редактор М. Д. Давлятшин
Технический редактор Н. В. Васильева
Корректор Н. П. Печникова

ИБ 2378

Сдано в набор 27.10.89. Подписано к печати 07.05.90. Формат 70×90 1/16. Бумага офсетная № 1. Гарнитура школьная, журнальная рубленая. Печать офсетная. Усл. печ. л. 12,87+0,29 форз. Усл. кр.-отт. 54,23. Уч.-изд. л. 6,73+ +0,46 форз. Тираж 21000 экз. Заказ № 3243. Изд. № 85.
Цена 55 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

## ÇАК КĔНЕКЕПЕ КАМ-КАМ УСĂ КУРНĂ

| № | Ача хушамачĕ, ячĕ | Вĕренӳ çулĕ | Кĕнеке пахалăхĕ | |
|---|---|---|---|---|
| | | | вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче | вĕренӳ çулĕн вĕçĕнче |
| 1 | | | | |
| 2 | | | | |
| 3 | | | | |
| 4 | | | | |
| 5 | | | | |





55 пус.

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ